К 83.39(=Чув)
Ч-12
Ч-42685

# ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИ

**(XX ĕмĕрччен)**

***ЛЕКЦИ КУРСĔ***

Шупашкар
2010

Национальная библиотека ЧР
4-042685

К К83.3(2Чув
Обязат. экз.
Ч-12

Раççей Федерацийĕн Вĕрентӳ тата ăслăлăх министерстви

Федераллă вĕрентӳ агентстви

Аслă професси пĕлĕвĕ паракан патшалăх вĕрентӳ учрежденийĕ
«И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ»

# ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИ

## (XX ĕмĕрччен)

*ЛЕКЦИ КУРСĔ*

Шупашкар
2010

УДК 821.512.111(091)(075.8)
ББК 83.3(2Рос.Чув) я73-2
Ч-125

ЧУВАШСКАЯ ЛИТЕРАТУРА (до XX века) : курс лекций / сост. Н. Н. Осипов, В.Г. Родионов. – Чебоксары : Чуваш. гос. пед. ун-т, 2010. – 80 с.

Печатается по решению ученого совета ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И. Я. Яковлева»

Научный редактор: д-р филол. наук Метин П.Н.

Рецензенты: В. П. Никитин, кандидат филологических наук, доцент кафедры чувашской литературы ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И. Я. Яковлева»; П. Н. Метин, доктор филологических наук, профессор, зав. кафедрой чувашской литературы ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И. Я. Яковлева»; Л. Ю. Трофимов, кандидат филологических наук, старший преподаватель кафедры чувашского и сравнительного литературоведения ФГОУ ВПО «Чувашский государственный университет им. И. Н. Ульянова».

ПРОВЕРЕНО
2010
Ч-42685
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

© Осипов Н. Н., Родионов В. Г., составление, 2010
© ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И. Я. Яковлева», 2010

## УМСĂМАХ

Чăваш литературин историйĕ чăваш филологи факультетĕнче вĕренекен тĕп предметсечен пĕри. Ăна студентсене тапхăрсем çине пайласа вĕрентеççĕ. XVIII – XIX ĕмĕрсенчи литературăна 1-мĕш курсра пĕр семестр, 2-мĕш курсра тепĕр семестр вĕренеççĕ. Çак кĕнекере çӳлерех асăннă тапхăрта пăхса тухмалли лекци курсĕ, урăхла каласан икĕ семестрта вуламалли лекцисен тĕсĕсем. Обзорлă лекцисене проблемăсем лартса вулама, çыруллă сăмахлăха наци културипе тата пурнăçпа тачă çыхăнтарса пăхма йĕркеленĕ.

Лекци курсĕн тепĕр хăйеврлĕхĕ – кĕнекере илсе кăтартнă лекцисене чăваш литературин XVIII – XIX ĕмĕрсенчи историйĕн пĕлтерĕшлĕрех темисене çеç кĕртни, илсе панă лекцисен хушшинчи сăмахлăх вăрттăнлăхне студентсем хăнăху занятийĕнче пăхса тухса ăша хывма май пуррине кура йĕркелени. Çав вăхăтрах лекцисенче хускатнă темăсене туллин, тĕпчевçĕсен юлашки вăхăтри ĕçĕсене тĕпе хурса йĕркелеме тăрăшнă. Лекци курсне йĕркеленĕ чухне В.Г. Родионов профессорăн «Чăваш литератруи» XVIII – XIX ĕмĕрсем вĕренӳ хатĕрĕ (Шупашкар 2006) тĕп çăлкуç пулса тăчĕ. Çавăн пекех кĕнекере студентсен асăннă курса алла илес тесен мĕн-мĕн пĕлмеллине, чăваш литературин XX ĕмĕрченхи историйĕн ĕç мелĕсемпе меслечĕсене асăнса хăварнă. Материала темăсем çине пайласа тухнă. Вăл е ку темăпа туллинрех паллашас, пĕлĕве малалла аталантарас текенсемшĕн кашни тема хыççăнах усă курмалли литературăн списокне кăтартнă. Студентсен пĕлĕвĕн шайне тĕрĕслемелли меслет – экзамен пулнине шута илсе кĕнекене экзамен ыйтăвĕсене те кĕртнĕ.

## АВАЛХИ СĂМАХЛĂХ. ТĂВАН ЛИТЕРАТУРА АТАЛАНĂВĔН ПУÇЛАМĂШ ТАПХĂРĔ

### *Авалхи тĕрĕк литератури. Руна çырăвĕн палăкĕсем. Орханпа Енисей шывĕсем хĕрринче тупнă чул юпа палăкĕсем. Кӳл Текĕнĕн Пĕчĕк тата Пысăк çырăвĕсен сюжетпа композици уйрăмлăхĕсем. Кашгар Махмучĕн «Тĕрĕк сăмахĕсен пуххийĕ» кĕнекене çырнин историйĕ. Баласагуни Юсуфĕн «Хăтлă пĕлӳ» дидактикăлла поэми.*

Тĕрĕк чĕлхиллĕ халăхсем XIII – XIV ĕмĕрсенче чăмăртанса хальхи сăн-сăпатне илеççĕ, хальхи халăх ячĕсемпе паллă пулаççĕ. Унченхи тапхăр вара мĕнпур тĕрĕк халăхĕсен ум историйĕ пулса тăрать. Çапла вара эпир чăвашсем ытти тĕрĕк чĕлхиллĕ халăхсем пекех, уйрăм халăхсем чăмăртаниччен хайланă литература палăкĕсене, авалхи тĕрĕк тапхăрне хамăрăн истори, çыруллă истори пуçламăшĕн ум историйĕ тесе хисеплеме тивĕç.

Тĕрĕк культурин йĕрĕсем чăвашсен йăли-йĕркинче, мифĕсемпе легендисенче, сăнарлă шухăшлавра тата ытти тĕлĕшре те палăраççĕ. Авалхи тĕрĕксен хăш-пĕр палăкĕсем ку таранччен упранса юлнă. Вĕсене руна, манихей тата уйгур çырăвĕсене тĕпе хурса çырнă. Уйгур – сас палиллĕ, сасăллă çыру. Çӳлтен аялалла вуланать, сулахайран сылтăмалла. Уйгурсем ăна пĕрремĕш ĕмĕр вĕçĕнче пуçласа янă. Манихейлĕх – тĕн вĕрентĕвĕпе çыхăннă. Унăн мифĕсенче ырăпа усал, çутăпа тĕттĕм хушшинчи кĕрешӳ çинчен вĕрентни. Ăна Мани текен çын III мĕш ĕмĕрте Перире, Вăтам Азире, Индире пропогандăланă. Руна çырăвне икĕ енлĕ ăнлантараççĕ. Пĕрремĕшĕнчен вăл йывăçпа чул çине касса çырнă сас паллисем. Ку майпа Скандинавипе Германи халăхĕсем усă курса II-XIII ĕмĕрсенче культ япалисемпе палăксем çине çырса усă курнă. Иккĕмĕшĕнчен руна çырăвне Ази тĕрĕкĕсен консонантлă çырăвĕсем тесе шутлаççĕ. Консонантсем – V-XI ĕмĕрсенче паллă пулнă. Тĕпчевçĕсем руна çырулăх паллисенче

чăвашсемпе пăлхарсен тĕррисенче нумай тупнă. Руна çырулăхне тĕпчевçĕсем икĕ пысăк ушкăна уйăраççĕ. Тĕп Азири руна çырăвĕ тата Тухăç Европăри руна çырăвĕ. Тĕп Азири руна çырăвне вара Орхан (Çурçĕр монголири Орхан, Селенга тата Тола шывĕсем çывăхĕнче тупнисем) тата Енисей (Енисей шывĕн айлăмĕнче тупнисем) тексчĕсем çине уйăраççĕ. Чĕлхе тĕлĕшĕнчен вĕсем пĕр евĕрлĕрех. Çакă вăл авалхи тĕрĕксен литература чĕлхи çирĕпленсе çитнине пĕлтерет. VI ĕмĕрте Тĕрĕк каганлăхĕ (патшалăхĕ) вăй илсе пынине каламалла. Каган – патша, патшалăх. Каганлăхри патшасем, ертӳçĕсем, çар пуçĕсем вилсен вĕсен вил тăприйĕсем çине чул юпасем лартнă. Çав юпасем çине çырнă текстсем Орханпа Енисей тексчĕсем шутланаççĕ.

Орхан тексчĕсен шутне Кӳл текĕн çар пуçĕ çинчен калани, унăн ячĕпе лартнă Пĕчĕк тата Пысăк чул юпа çырăвĕсем, Пĕлке каган, Тоньюкук ячĕсемпе лартнă чул юпа тексчĕсем, Онгин çырăвĕ кĕреççĕ. Енисей тексчĕсем кĕскерех çырнă уйрăм чул юпасем çинче тĕл пулаççĕ.

Тĕрĕк каганлăхĕн хăйĕн сăвăç-юрăçисем пулнă. Çавсенчен пĕри Йоллăх текĕн поэт-юрăç. Кӳл текĕн тата Пĕлке каган ячĕпе лартнă чул юпасем çинчи текстсене шăпах çав çырнă тесе шутлаççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем пĕр евĕрлĕ композиципе йĕркеленнĕ. Вĕсенче автор, Тĕрĕк каганлăхĕ йĕркеленнĕ вăхăта аса илет, вăл тĕрекленсе пыни, тĕрĕксем Китай пусмăрĕнчен хăтăлни, тĕрлĕ походсене çӳрени та. ыт. çинчен каласа кăтартать. Хайлавсенче лирика монологĕсем йышлă. Тĕслĕхрен, Кӳл текĕн вилнишĕн Йоллăх текĕн поэт хурланса çапларах хӳхлев çырать:

> Çуратнă аннем, пысăк аннесем,
> аппасем, кинĕмсем, йăмăксем!
> Чĕррисем, пурте чура пулаттăрччĕ,
> вилнисем, çуртра-çулта выртса юлаттăрччĕ.
> Кӳл текĕн çук пулнă пулсан
> пурте вилнĕ пулăттăрччĕ.
> Кӳл текĕн шăллăм çук пулчĕ,
> чунăм хурланчĕ.

Куран куçăм курми пулчĕ,
пĕлен пĕлĕвĕм пĕлми пулчĕ,
чунăм хурланчĕ.

Çак хайлавсене жанр тĕлĕшĕнчен эпосла поэма теме пулать. Вĕсен çемĕ йĕркеленĕвĕ (ритмическая организация) чăвашсен калуллă поэзийĕн тексчĕсене (тĕрлĕ чĕлхе, кĕлĕ тата пил сăмахĕсем) çывăх. Аллитераци ытларах пĕр йĕркере тĕл пулать.

Тоньюкук ячĕпе лартнă чул юпа çинчи сăмахсене тĕрĕксен çар пуçĕ Тоньюкук хăех çырнă тесе шутлаççĕ. Çак хайлаври ĕçсем малтан асăннă текстсенче çырса кăтартнă вăхăтрах пулса иртеççĕ, тĕп объект çеç улшăнать: унта Тоньюкук хăйĕн паттăрлăхĕ çинчен калать. Хайлаври герой сăнарĕ историре пулнă ĕçсене çырса кăтартнă май уçăлса пырать. «Çĕрле çывăрмарăм, кăнтăрла лармарăм, хĕрлĕ юнăма тăкрăм, хура тарăма юхтартăм», – тесе пĕтĕмлетет харкамçă (герой) поэма вĕçĕнче.

Палăк тексчĕсенче çар çыннисен хушшинче йĕркеленнĕ эпос йĕрĕсем палăраççĕ. Тĕслĕхрен, Кӳл текĕн çапăçăва хутшăннине унăн утне çырса кăтартнинчен пуçланă: малтанхи хут унăн айĕнче пăвăр ут ӳксе вилет, иккĕмĕшĕнчен вăл тăшман çине тепĕр пăвăр утпа ыткăнать – вăл ут та вилет; юлашкинчен Кӳл текĕн турă утпа вирхĕнет. Çырса кăтартнă çак вырăна витĕмлĕрех тума кашни икĕ йĕрке хыççăн тĕл пулакан рефрен-повтор пулăшать: «Вăл ут унта вилчĕ».

Эпикăллă геройсене идеал туса кăтартасси Орхан палăкĕсен пур тексчĕнче те тĕл пулать. VI ĕмĕр çурринче Тĕрĕк каганлăхĕ вăй илсе тĕрекленет, хăйĕн кӳршисене пăхăнтарать, Византипе, Иранпа тата Китай империйĕпе çыхăну тытать. Çак тапхăрти халăх историне идеал вырăнне лартни тĕрĕксен паттăрлăх поэмине аталанма пулăшать.

Палăк тексчĕсенче тĕрĕк каганĕсене ăслă та харсăр çынсем пек ӳкерсе кăтратнă. Çынна мулне кура мар, çапăçури харсăрлăхне кура хисеплемелле текен шухăш çак паттăрлăх поэмисенче тĕп вырăнта тăрать. Кӳл текĕн авă халăха çапăçăва йыхăрмасть, патшалăх ĕçĕсем

çинчен те шухăшламасть, унăн тĕп ĕçĕ – хăйĕн çапăçасси.

Тĕрĕкле çырнă хайлавсен шутне «Шăпа кĕнекине» (VIII-IX) те кĕртмелле. «Шăпа кĕнекин» текстне тăватă ушкăна уйăрса пăхма пулать: 1) çын тата чĕр чун пурнăçне реализмла ӳкерсе кăтартни: 2) миф тата юмах сюжечĕсем; 3) çут çанталăк ӳкерчĕкĕсем; 4) вĕрентсе кланисем. Миф тата юмах сюжечĕсене тĕпе хунă текстсенче тотемла чĕрчунсем йышлă. Акă пĕр текстра çар çыннин лаши ĕшенни, ăна (çар çыннине) кайăк хур хăйĕн çине лартса тăван килне илсе çитерни çинчен каланă. Юлашкинчен çапла хушса хунă: «Унăн ашшĕ-амăшĕ савăнса тăнă. Çакна пĕлĕр лайăх вăл».

Кайăк хур (акăш, хур кайăк) тĕрĕк халăхĕсен чи авалхи тотемĕсенчен пĕри шутланнă, çавна май чылай юмахра вăл паттăра йывăрлăхран çăлакан, пулăшакан пулса тăнă.

Вĕрентсе, ăс арса калакан çаврасем хăйсен калăпăшĕпе пысăк мар, апла пулин те çакă тĕп шухăша сăнарлăн калама чăрмантармасть.

Тĕрĕк литератури Тухăçри ытти халăхсен литературисемпе тачă çыхăнса аталаннă. Х ĕмĕрте тĕрĕк чĕлхиллĕ халăхсен феодалĕсем ислам тĕнне йышăнма пуçлаççĕ. Çавна май тĕрĕк литератури малтанхи руна çырулăхĕ вырăнне араб çырулăхне тĕпе хурса аталанма пуçлать. 1069–1070 çулсенче Кашкар çынни Юсуф Баласагуни «Хăтлă пĕлӳ» (Кутадту билиг) ятлă дидактикăллă поэма çырать. Ăна уйгурла, арабсен аруз текен сăвă формине шайлаштарса хайланă. Поэмăн тĕп пайне поэт сюжетсăр, тăватă çын калаçнă пек йĕркеленĕ: кусем Кюн Тогды (кун тухрĕ) патша, Ай Толды (уйăх тулчĕ) везир тата везирăн ывăлĕпе пиччĕшĕ.

Баласагуни Юсуфĕ хăйĕн поэминче феодалсен пусмăрне питлет, патшалăха чăмăртас,наукăсене, суту-илĕве аталантарас шухăшсене ырлать. Автор хăйĕн поэминче утопилле патшалăха ӳкерсе кăтартать: унта чухăнсем çук, искусство чечекленет. Çав хушăрах вăл ултавпа суяна, йăпăлтилĕхе, икĕ питлĕхе сивлет. Ун

шучĕпе чăн-чăн патшан тӳрĕ чунлă, ăслă пулмалла, телейлĕ те тулăх пурнăçпа пурăнмалла.

«Хăтлă пĕлӳ» поэма илемлĕх мелĕсемпе палăрса тăрать: унта танлаштарусемпе эпитетсем, аллегорисемпе метафорăсем йышлă тĕл пулаççĕ. Автор текста юркăн халăх (кочевник) пурнăçĕн уйрăм ӳкерчĕкĕсене кĕртнĕ, тĕрĕксен сăмах вĕççĕн çӳрекен пултарулăхĕпе ăнăçлă усă курнă.

1072–1078 çулсенче Багдад хулинче пурăнакан Кашгар Махмучĕ «Тĕрĕк сăмахĕсен пуххи» (Диван лугат ат-тӳрк) ятлă пысăк ĕç çырать. Кашгар Махмучĕн ашшĕ Иссык кӳлли çывăхĕнчи Барсхан хулинче пурăннă тĕрĕк çынни пулнă. Каярах пурăнма Кашгар хулине куçсан, унăн кил-йышĕнче Махмут ятлă ывăл çуралать (1029–1038 çулсен хушшинче). Çитĕнсессĕн поэт хăйĕн хушамачĕ вырăнне хула ятне илет те Кашгар Махмучĕ пулса тăрать.

Кашгар Махмучĕ тăван çĕре, тăван чĕлхене чунтан юратнă. Тăван чĕлхи араб чĕлхинчен нимĕн чухлĕ те кая маррине ĕнентерес тĕллевпе вăл тĕрĕк чĕлхиллĕ тĕрлĕ йăхсен çĕрĕсене çитсе курнă, вĕсен этнографи уйрăмлăхĕсене тĕпченĕ, алăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене пуçтарнă. Юлашкинчен, материал пуçтарса çитерсен, поэт тĕпчевçĕ пысăк ĕç çырма тытăнать.

«Дивана...» çырнин тепĕр сăлтавне çав çулсенче мăсăлман тĕнчинче тĕрĕксем вăйланса-тĕрекленсе пынинче те курма пулать. Çакна тĕпчевçĕ тĕрĕк мар çынсене çапла каланинчен пĕлетпĕр: «Тĕрĕксен ухă йĕпписенчен сыхланас тетĕр пулсан, вĕсенчен упранмалли ырă ĕç вăл – вĕсен çулĕпе утасси. Тĕрĕксем хуйхăрсене тăнлаччĕр, хăйсен чĕрисене çемçетчĕр тетĕр пулсан, вĕсен чĕлхипе клаçăр».

Кашгар Махмучĕ Атăл çинче те Пăлхар патшалăхĕнче те пулман. Çапах та унăн ĕçĕнче пăлхарсемпе сăварсен чĕлхи çинчен каланă вырăн сахал мар. Пĕр вырăнта автор пăлхар чĕлхинчи хăш-пĕр сăмах вĕçĕнчи хупă сасăсем тухса ӳкнине палăртса хăварнă. Çак уйрăмлăх чăваш чĕлхинче те палăрать. Тĕпчевçĕсем каланă тăрăх, Кашгар Махмучĕ пăлхар-чăваш чĕлхи

çинчен тĕрлĕ сутуçăсенчен ыйтса пĕлнĕ.Çакна вăл пăлхар-сăварсен хăш сăмахĕсене пуçтарнинчен те пĕлме пулать («пыл», «ăвăс», «тĕве» – суту-илӳ чĕлхинчи сăмахсем).

Авалхи тĕрĕк литературин малтанхи палăкĕсене калаçăва пĕрремĕш сăпата тĕпе хурса йĕркеленĕ. Палăк тексчĕсем яланах мухтав е хӳхлев сăмахĕсемпе вĕçленеççĕ. «Тĕрĕк сăмахĕсен пуххи» пĕчĕк-пĕчĕк уйрăм пайсенчен тăрать. Унта тĕрĕксен паттăрлăх эпосĕн сыпăкĕсемсĕр пуçне пейзаж лирикипе çыхăннă сăвăсем те йышлă. Кашгар Махмучĕн «Диванĕнче...» Атăл çинче пурăнакан тĕрĕк чĕлхиллĕ халăхсен сăмахлăхĕнчен илнĕ тĕслĕхсем те пур. Акă тĕслĕхрен:

Атăл шывĕ юха тăрать,
Сакăл тĕпĕ хуха тăтăр,
Пулă тавраш пăха тăтăр,
Кӳллĕн тахĕ кăшăртăр. (Тахĕ Кăшăртăр – ан(ĕ), талккăш(ĕ) тултăр.

Авалхи тĕрĕк литератури XI ĕмĕр тĕлне поэтика тĕлĕшĕнчен чылай пуянланать. Чи малтанах кунта тăватă йĕркеллĕ çавра çирĕпленсе çитнине палăртмалла. Çавăн пекех ку тапхăрта йĕркери пайсене çыхăнтарса тăракан аллетераци вăй илет.

### *Усă курнă литература*


Революцичченхи чăваш литератури (XX ĕмĕрччен). 1-мĕш том. Текстсем. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1984. – 464 с.

Революцичченхи чăваш литератури (XX ĕмĕрччен). – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1989. – 302 с.

Родионов, В.Г. Чăваш литератури. XVIII-XX ĕмĕрсем : вĕренӳ пособийĕ /В.Г. Родионов. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 2006. – 463 с.

Федорова, Е.В. Истоки и формирования жанров чувашской литературы XVIII-XIX вв. / Е.В. Федорова. – Чебоксары : Чувашский государственный институт гуманитарных наук, 2006. – 144 с.

Ковалевский, А.П. Книга Ахмеда ибн Фадлана о его путешествии на Волгу в 921-922 гг. /А.П. Ковалевский – Харьков, 1956. – 345 с.

Комиссаров, А.П. Чăваш халăх историйĕ /А.П. Комиссаров// Ялав библиотеки. – 1990. – 7 №.

Одюков, И.И. Авалхи тата Атăлçи пăлхарсем çинчен калакан истори халапĕсем (I-XV ĕмĕрсем) /И.И. Одюков. – Шупашкар, 1984. – 80 с.

Трофимов, А.А. Несĕлсен тĕрĕри çырулăхĕ çинчен / А.А. Трофимов // 100 лет новой чувашской письменности : труды ЧНИИЯЛИЭ.

– Чебоксары, 1972.

«Пин çул ытла ПĂЛХАРЧЧĔ эп, Унтан мана ЧĂВАШ ят панă» (Атăлçи Пăлхар-Чăваш Патшалăхĕ 1100 çул тултарнă май) // «Хыпар» кĕнеки. 1995. – Çĕртме, 24. – 14 №. – 16 с.

# АТĂЛÇИ ПĂЛХАРСЕН КУЛЬТУРИ. ÇЫРУЛЛĂ САМАХЛĂХ ПУЯНЛĂХĔ

***Атăлçи пăлхарсен çыруллă культурин пуянлăхĕ. Якуб ибн Нуманăн «Пăлхар историйĕ» ĕçĕн пахалăхĕ, унăн тăван литература историйĕнчи вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ. Сулейман ывăлĕ Дауд Саксини–Сувари пултарулăхĕ. Таджетин ывăлĕ Юныс ал-Болгарин «Эт-тирйакыл-кэбир» («Наркăмăшран вăйлă эмел») формакологи кĕнеки.***

Чăвашсен несĕлĕсем пăлхарсемпе сăварсем пулни паллă. Вăтам ĕмĕрсен пуçламăшĕнче чăвашсен мăн аслашшĕсем – пăлхарсемпе сăварсем – Азовпа Каспи тинĕсĕсен хутлăхĕнчи хирсенче пурăнаççĕ. Çакăнти хирсенче VII ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче Аслă Пăлхар патшалăхĕ йĕркеленет. Каярах çак патшалăха Хазар каганачĕ аркатсан, пăлхарсен пĕр пайĕ Дунай шывĕ çине куçса каять те Дунай çи Пăлхар патшалăхĕ йĕркелет. Пăлхарсен ытларах пайĕ хазарсен пусмăрĕнчех юлать, вĕсем çурçĕререх, Дон çине, куçаççĕ. Сăварсем, барсилсемпе беленджерсем (вĕсем каярах Атăл çинчи пăлхарсен йышне кĕнĕ) çав тапхăрта Çурçĕр Кавказра пурăннă.

Пирĕн мăн асаттесен пурнăçĕнчи тепĕр тапхăр пăлхар, эскел, сăвар, барсил тата беленджер йăхĕсем Атăл çине килнипе (VIII–IX) çыхăннă. X ĕмĕрте çав тĕрлĕ йăхсем Атăл çи Пăлхар ĕмпӳлĕхне чăмăртанаççĕ. Тухăç çĕршывсемпе, Киев Руçĕпе тата Çурçĕрти тĕрлĕ йăхсемпе суту-илӳ тума пуçлаççĕ, юркăн халăх пурнăçне пăрахса çĕр ĕçĕпе пурнăма тытăнаççĕ. Çав тапхăртан

пуçласа пăлхарсен культури хăвăрт аталанма тытăнать. Хура халăх чи малтан традициллĕ культурăна тĕпе хурать. Пуçлăхсем вара халăх традицийĕсемсĕр пуçне арабпа перс культурине те ăша хывса пыраççĕ.

Пурăна киле пăлхар халăхĕн икĕ хире-хирĕçле сийĕ XIV-XV ĕмĕрсенче пĕр-пĕринчен чĕлхепе культура тĕлĕшĕнчен уйрăлса-ютшăнса пырать, икĕ халăх пулса каять. Кыпчакланнă пăлхарсем Вăтам Атăл çине килнĕ Ылтăн Урта кыпчакĕсемпе хутшăнса хальхи Хусан тутарĕсен йышне кĕреççĕ, çĕр ĕçĕпе пурăннă пăлхарсем чăваш халăхне чăмăртанаççĕ.

Пăлхарсен культурипе пурнăçĕ çинчен, йăли-йĕрки çинчен эпир ытларах араб çыравçи Ахмед ибн Фадлан çырса хăварнă тăрăх пĕлетпĕр. Вăл хăй вăхăтĕнче (922 ç.) Атăл çи Пăлхара килсе кайнă пулнă. Вăл çырса хăварнинчен çакă паллă: çĕнĕ патшалăхра пăлхар йăхĕ пуç пулса тăнă. Патшалăхри ытти хурăнташлă йăхсемпе танлаштарсан, вăл йăх çыннисем юркăн пурнăçа е куçса çӳрес йĕркене ытларах упраса хăварни курăнать. Çапла вара унта икĕ культура йĕркеленнĕ: хула культури тата ял культури.

Ку вăхăтри чăвашсен несĕлĕсем сăвă хывас ăсталăха та аван пĕлнĕ. Вĕсен ӳнерĕ сюжетлă, кĕвĕллĕ, чĕр-чун стилĕллĕ хайлавсемпе уйрăлса тăрать. Вĕсенче арăслан, барс, йытă сăнарĕсем час-часах тĕл пулаççĕ. Ут, пăлан, пăши сăнарĕсем те сахал мар. Вăтам ĕмĕрсен пуçламăшĕнче пăлхар сăварсен тĕрĕ ăсталăхĕ чечекленет. Çак пултарулăха вĕсем, тĕпрен илсессĕн, хăйсен иран чĕлхиллĕ несĕлĕсенчен упраса хăварнă.

Пăлхарсемпе сăварсен çырулăхне В.Ф. Каховскийпе А.А. Трофимов тĕпченĕ. Вĕсем çырнинчен эпир пирĕн мăн асаттесем вăтам ĕмĕрсен пуçламăшĕнчех çырулăх культури пулнине куратпăр. В.Ф. Каховский Пăлхар хулинче археологсем тупнă чӳлмек катăкĕсем çинчи çырăва кигай çырăвĕн паллисемпе пĕрешкел тет. Чăваш хĕрарăмĕсен кĕпи çаннисене е аркисене тĕрлесе çырас ăсталăха А.А. Трофимов тĕпчевçĕ тишкернĕ. Вăл асăрханă тăрăх, çавăн йышши тĕрĕсене «çыру тĕрри» тенĕ. Çапла вара, пăлхарсемпе сăварсем çырулăхпа чи

малтан Китай урлă паллашнă, çав культурăна вĕсем Европăна илсе çитернĕ. Китай çырăвĕсĕр пуçне вĕсем руна çырулăхне аван пĕлнĕ. В.Ф. Каховский çирĕплетнĕ тăрăх, вĕсем çав çырăва хĕвел анăç Тĕрĕк каганачĕ Урлă илнĕ. Юлашки çулсенче тĕпчевçĕсем Кубаньпе Терек шывĕсен хутлăхĕнче руна палăкĕсене чылай тупрĕç, вĕсене вулама пултарчĕç. Çав палăксем, тĕпрен илсессĕн, – пăлхарсемпе сăварсем хăварнă çырулăх палăкĕсем.

Атăл çи Пăлхар патшалăхĕн официаллă çырулăхĕ феодалсем ислам тĕнне йышăннă хыççăн араб графикине тĕпе хурса йĕркеленет. XI-XII ĕмĕрсенче пăлхарсен хăйсен истори шкулĕ йĕркеленме пуçлать. Вĕсен паллă историкĕсенчен пĕри «Пăлхар историйĕ» ятлă паллă ĕç çырнă пăлхар çынни Йакуб ибн (ывăлĕ) Нуман пулнă (пăлхар ăсчахĕ, ал-Гарнати çырса хăварнă тăрăх, 1058-1059 çулсем тĕлнелле çуралнă). Малтан Пăлхарта пĕлӳ илнĕ хыççăн вăл Нишапурта, тĕнчипе паллă Абу ал-Малик ибн Абдаллах Джувейни (1028-1086) патĕнче вĕреннĕ. Хăйĕн вĕрентекенĕ пекех, вăл араб, перс чĕлхисене аван пĕлнĕ, тĕрлĕ наука ĕçĕсемпе тĕплĕн паллашнă.

Йакуб ибн Нуман хăйĕн «Пăлхар историйĕнче» халăх сăмахлăхĕпе те усă курнă. Çакна Хамид ал-Гарнати çырса хăварнисем çапла калама май параççĕ. Вăл пăлхар историкĕпе хăйĕнпе курса калаçнă, унăн кĕнекине тĕплĕн вуласа тухнă. Хăй ĕçĕнче ал-Гарнати «Пăлхар историйĕнчен» тĕслĕхсем илсе панă. Унта пăлхарсем хазарсемпе çапăçни тата ислам тĕнне йышăнни çинчен каланă. «Пăлхар» сăмах «вĕреннĕ çын» тенине пĕлтерет тесе çырнă Йакуб ывăлĕ Нуман. Малалла вăл мĕншĕн çапла пулнине ăнлантаракан мифла халапа илсе кăтартнă. «Мăсăлман сутуçисенчен пĕри Бухараран пирĕн пата килнĕ, вăл им-çам ĕçне пĕлекен факих (асамçă) пулнă. Патша арăмĕ чирлесе ӳкет те, патши те йывăр чирлесе каять. Вĕсем хăйсен яланхи эмелĕсемпе сипленеççĕ. Анчах чир амаланса кайнă, вара иккĕш те вилĕмрен хăра пуçланă...»

Малалла ĕç-пуç çапларах пулса иртет: Бухара асамçи вĕсене хăйсем сывалнă хыççăн ислам тĕнне кĕме

килӗшсен сыватма пулать. Лешсем чӑннипех те сывалаççӗ, çавӑншӑнах ислам тӗнне йышӑнаççӗ. Çакӑн хыççӑн вӗсем патне хазар каганӗ çар ертсе пырать, çапӑçу пуçлать. Пӑлхар çыннисене сӑрӑ утсем çинчи пысӑк арсем (арçынсем) пулӑшнӑ имӗш, çавна пулах вӗсем хазарсене çӗнтереççӗ.

Кунта хазарсем пӑлхарсем çине вӑрçӑпа пынӑ чӑнчӑн истори фактне мифла халап туса яни, тӗнпе çыхӑнтарма хӑтланни курӑнать. Паллах, çак ӗçре халӑх мифологийӗпе сӑмахлӑхӗнчи сӑнарсемпе те усӑ курнӑ. Пӗлӗт çинчи юлан утсен çапӑçӑвӗ, чиртен сыватни – çаксем пурте фольклорта анлӑ сарӑлнӑ сюжетсем.

Йакуб ибн нуман хӑйӗн историйӗнче «пӑлхар» сӑмах еплерех пулса кайнине те ӑнлантарнӑ. Вӑл каланӑ тӑрӑх, пӑлхарсем хӑйсене çав вӑхӑтра *пӗлер* (танл.: Пӳлер – хула ячӗ) тесе чӗннӗ. Çав сӑмах вара, ун шучӗпе, *пӗл* (пӗлекен) тата *ар* (арçын) тымарсенчен йӗркеленнӗ. Çакӑ вӑл вӗреннӗ çын тенине пӗлтернӗ имӗш. Паллах, Йакуб ибн Нуман çак этимологие халӑхран илнӗ.

Пӑлхарсен XII ӗмӗрти тепӗр ӑсчахӗ Сулейман ывӑлӗ Дауд Саксини–Сувари. Вӑл тӗпчевçӗ, куçаруçӑ, тӑлмачӑ та пулнӑ. Сулейман ывӑлӗ Дауд Саксини–Сувари персла çырнӑ «Шевлесенӗн çутлӑхӗ – вӑртӑнлӑхсенӗн хаклӑхӗ» ятлӑ кӗнекене, арабла çырнӑ «Чирлӗ чунсене савӑнтаракан пахча чечекӗ» ӗçсене куçарать. XIII ӗмӗрте пурӑннӑ пӑлхар имçи Таджетин ывӑлӗ Юныс ал-Балгари «Наркӑмӑша хирӗç вӑйлӑ эмелсем» ятлӑ фармакологи кӗнеки çырни паллӑ. Унӑн шӑллӗ Хасан çав ӗçе саманан паллӑ имçи Бадретдин Махмуд ывӑлӗ Госман ат-Тифлиси валли 1220-1221 çулсенче куçарса çырни паллӑ.

Шел пулин те пӑлхар ӑсчахӗсен чылай ӗçӗ ку таранччен упранса юлайман, вӗсем çинчен эпир ытти çынсен, ытларах арабсем, çырса хӑварнисенчен çеç пӗлетпӗр. Атӑл çи Пӑлхар патшалӑхӗн пуян культури Ылтӑн Урта арканнӑ тапхӑрта (XIV ӗмӗрӗн 60-мӗш çулсенче) вут айне пулать, урӑхла каласан, ӑна «хӗрлӗ ӗне» çисе ярать: 1361 çулта Ылтӑн Урта ханӗ Тимӗр Пӑлат Пӑлхар тӑрӑхне тӗпренех çунтарса кӗл тӑвать.

Пăлхарсен пĕр пайĕ Хусан еннелле, тепĕр пайĕ Сĕве тăрăх анаталла вăрмансене тарса хăтăлаççĕ. Çав тапхăртан пуçласа «пăлхар» сăмах ерипен манăça тухать. Ислам тĕнне йышăннă пăлхарсем «пĕсĕрмен», йышăнманнисем «чăваш» («çăваç») ятпа çӳреме пуçлаççĕ.

*Усă курнă литература*


Революцичченхи чăваш литератури (XX ĕмĕрччен). 1-мĕш том. Текстсем. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1984. – 464 с.

Революцичченхи чăваш литератури (XX ĕмĕрччен). – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1989. – 302 с.

Родионов, В.Г. Чăваш литератури. XVIII-XX ĕмĕрсем : вĕренӳ пособийĕ / В.Г. Родионов. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 2006. – 463 с.

Федорова, Е.В. Истоки и формирования жанров чувашской литературы XVIII-XIX вв. / Е.В. Федорова. – Чебоксары : Чувашский государственный институт гуманитарных наук, 2006. – 144 с.

Валеев, Ф. Древнее и средневековое искусство Среднего Поволжья / Ф. Валеев. – Йошкар-Ола, 1973.

Валеева, Д.К. Искусство волжских булгар / Д.К. Валеева. – Казань, 1983.

Егоров, Н.И. Болгаро-чувашско-кыпчакские этноязычные заимствования в XIII-XVI веках / Н.И. Егоров // Болгары и чуваши : труды ЧНИИЯЛИЭ. – Чебоксары, 1984. – С. 90-102.

Ковалевский, А.П. Книга Ахмеда ибн Фадлана о его путешествии на Волгу в 921-922 гг. / А.П. Ковалевский – Харьков, 1956. – 345 с.

Комиссаров, А.П. Чăваш халăх историйĕ / А.П. Комиссаров // Ялав библиотеки. – 1990. – 7 №.

Одюков, И.И. Авалхи тата Атăлçи пăлхарсем çинчен калакан истори халапĕсем (I-XV ĕмĕрсем) / И.И. Одюков. – Шупашкар, 1984. – 80 с.

Трофимов, А.А. Несĕлсен тĕрĕри çырулăхĕ çинчен / А.А. Трофимов // 100 лет новой чувашской письменности : труды ЧНИИЯЛИЭ. – Чебоксары, 1972.

«Пин çул ытла ПĂЛХАРЧЧĔ эп, Унтан мана ЧĂВАШ ят панă» (Атăлçи Пăлхар-Чăваш Патшалăхĕ 1100 çул тултарнă май) // «Хыпар» кĕнеки. 1995. – Çĕртме, 24. – 14 №. – 16 с.

## ÇЫРУЛЛĂ КУЛЬТУРА ЙĔРКЕЛЕННИ (XVIII ĕмĕр)

*Малтанхи ўкĕтлевçĕсем.*
*Малтанхи сăмах пуххисемпе хуравĕсем. Шкул ĕçĕ вăй илни. В. Пуцек-Григоровичпа унăн вĕренекенĕсем. Пĕрремĕш грамматика.*

XVIII ĕмĕр тĕлне чăвашсем хăйсем хальхи вăхăтра пурăнакан вырăнсене тĕпленсе пурăна пуçланă ĕнтĕ. Вĕсен хăйсен йăли-йĕрки, култури тата ытти енĕсем хăйсене кирлĕ пек аталанса пынă. Апла пулин те чăваш халăхĕн шăпи яланах куршĕллĕ пурăнакан халăхсен ирĕкĕнчен нумай килнĕ. Халăхăмăр ялан тенĕ пекех икĕ вăйлăрах халăх вăрçи-харçине пула шар курать. Хисепĕпе пысăках мар халăх пулнипех унăн яланах хăйĕн халăхне, культурине, чĕлхине сыхласа хăварас тесе кĕрешме тивет. Хусан ханлăхĕ чечекленнĕ вăхăтра чăвашсене ялĕ-ялĕпе ислам тĕнне кĕртеççĕ, тутарлатаççĕ. Çакăнтан хăранă чăваш хăйĕн çăлăнăçне харсăр вырăс ĕмпĕвĕнче курать, унăн çарне Хусана илме пулăшать. Çавăпа пĕрлех чăваш яланлăхах чĕлхемĕре упраса хăварма май паракан çул-йĕре суйласа илет. Вырăс халăхĕпе пĕрлешет, православи тĕнне йышăнать. Чиркў ĕçĕ урлă чăваш кĕнекеллĕ-шкуллă пулса тăрать, халăхăмăршăн çунакан интеллигенци çуратса ўстерет. Е. Рожанский, В. Вишневскипе Н. Золотницкин тĕнрен пуçланă ĕçĕсем И. Яковлев шкулне никĕсленĕ, М. Федоров, К. Иванов, Н. Никольский, Г. Комисаров йышши сăвăçсемпе ăсчахсене çĕклеме пулăшать.

Çĕнни çухатусăр пулмастех. Чиркў пирĕн сăваплă киреметсене пĕтерет, вилтăпри çине юпа лартас ăсталăха манăçтарать. Çаксем чунри мар, тĕнĕн тулашри паллисем кăна. Çавăнпа та чунсенчи чăваш тĕнне чиркў пĕтерме пултарайман.

Чăвашсем христос тĕнне йышăннă пулсан та ăна вĕсем ячĕшĕн кăна тытса пынă. Христос тĕнĕпе пурăнакансене Патша правительстви тĕрлĕ çăмăллăхсем панă пулнă. Халăх чиркĕве çуреме юратманнин тĕп

сăлтавĕсенче пĕри вăл – халăх чиркӳри кĕлĕ сăмахĕсемпе пуп калаçăвне ăнланманни.

Халăха нихăçан та вăйпа хистемелле мар, ăна малалла туртăнма ӳкĕтлемелле. Хальхинче те чăваша хистекенсене хирĕçлекенсем, халăхăмăра чунран-чĕререн ӳкĕтлекенсем тупăнаççĕ. Вĕсенчен пĕри **Охотер Томеев** [1700 çул тĕлнелле Питукасси ялĕнче (халĕ Чăваш Республикин Шупашкар районне кĕрет) çуралнăскер] пулнă. Вăл халăхăмăра тĕне вăйпа кĕртнине, наци пусмăрне хирĕç хăюллăн çĕкленнĕ мухтавлă чăваш пулнă. О. Томеев чăваш патне вырăс православийĕ Тăван чĕлхемĕр урлă кăна çитессе пуринчен малтан туйса илнĕ, чăваш хутлăхĕнче ӳкĕтлевçĕ пулма ĕмĕтленнĕ. Унăн ĕмĕтне тепĕр 20 çултан Ермей Рожанский пурнăçлама тытăнать. Çак мал ĕмĕтлĕ чăвашсене пĕрлештерекен тепĕр ен вăл – вĕсене тăван халăхăмăр хăй çав ĕçе шанса пама кăмăл туни, ӳкĕтлевçĕ пулма ыйтни. Çакă вара вĕсем халăхăмăрăн чăн-чăн ертӳçисем пулнă тесе калама май парать.

О. Томеев ячĕ документсенче чи малтан 1728 çулта тĕл пулать: ун чухне вăл Шупашкарти вăйпут кантурне хăйсен ялĕнчи пĕр хресчен ыттисен çĕрĕсене вăйпа туртса илни çинчен çырса парать. 1731 çулта О. Томеев ытти ентешĕсемпе пĕрле вăйпут кантурне иккĕмĕш хут çитет, кӳршĕ Шуртан вулăсĕнчи тĕрлĕ ял хресченĕсене виç çĕр теçеттине яхăн çарана юрăхсăра кăларнăшăн явап тыттырма ыйтать. Халăхшăн тăрăшнăшăн О. Томеева тӳре-шара курайми пулать. Ăна тытса хупма тăрăшаççĕ, анчах та вăл тӳрĕ-шараран тарса хăтăлать. Томеев халăха вăйпа тĕне кĕртнине хирĕç хăюллăн кĕрешет. 1747 çултанпа унăн ячĕ документсенче тĕл пулми пулать.

О. Томеев чăвашсен çыруллă культуринче чиркӳ ĕçне тăван чĕлхепе пурнăçлама Патшаран ыйтса çырнă çырупа кĕрсе юлать темелле. Çак çырура О. Томеевăн ĕмĕчĕпе-тĕллевĕ аван палăрать: вăл чиркӳ ĕçне пĕтĕмпех чăвашла йĕркелесшĕн пулнă. Çавăнпа та Томеева вăл наци пусмăрне хирĕç тăнă хастар чăваш тесе калама хăюллăнах пултаратпăр. Вăл хăй çырнă хутсенче

халăхăмăрăн ăне, унăн çав вăхăтри шухăш-кăмăлне палăртнă, халăх ĕçĕшĕн чун-чĕререн çуннă. Унăн тексчĕсемпе паллашса эпир чăваш çыруллă культуринче автор ăнĕ Еплерех йĕркеленнине те тарăнрах ăнланса илме пултаратпăр. Çав текстсенче автор ăнĕн харкамлăхĕ (индивидуальность), çыраканăн хăйĕн уйрăм шухăш-кăмăлĕ пурри те аван сисĕнет.

Çыруллă сăмахлăх йĕркеленсе пынă тапхăрта сăмах пуххисене (словарьсене) хатĕрлени питех те пĕлтерĕшлĕ. Чăваш сăмахĕсен пуххине XVIII ĕмĕрĕн пĕрремĕш чĕрĕкĕнчех йĕркелеме пуçланă. Кунта чи малтан швед капитанĕн Страленбергăн 32 чĕлхеллĕ сăмах пуххине аса илмелле. Унта 28 чăваш сăмахне кĕртнĕ. 1733 çулта Г.Ф. Миллер латыньле-тутарла-çармăсла-чăвашла сăмахсен пуххине йĕркелесе çитерет. Ку сăмах пуххи ытти словарьсемшĕн питех те пĕлтерĕшлĕ пулни паллă. Каярах çав ĕçе никĕсе хурса 1733-65 çулсенче 7 словарь йĕркелеççĕ.

Чăваш сăмахне кĕнекесене кĕртес ĕçре палăрнă тепĕр çын вăл – В.Н. Татищев. Çак вырăс тĕпчевçи чăваш халăхĕ пăлхарсенчен пулса кайнă тесе шутланă. Тĕпчевçĕ этнографипе тата чĕлхе ăслăлăхĕсемпе те кăсăкланать, 1736 çул тĕлне Раççейри тĕрлĕ халăхсен пурнăçĕпе чĕлхисене тĕпчемелли 197 ыйтуран тăракан анкета çырса хатĕрлет. Тепĕр çултан вĕсене тĕрлĕ провинцисемпе уессене ярса параççĕ.

XVIII ĕмĕр пуçламăшĕнче чăваш халăхĕ реликт шайĕнче тăрса юлас хăрушлăх чăннипех те пысăк пулнă. Çакă чи малтан Атăл тăрăхĕнчи халăхсен привилигиллĕ сословине пĕтернипе, вĕсене хресченсемпе танлаштарнипе çыхăннă. Ку вăхăтра Атăл çинчи халăхсенчен пĕр тутарсен кăна малашлăх шанчăкĕ çуталнă. Мускав вĕсен тĕнне аркатса çитереймен, çавна май шкул тытăмĕ те упранса юлнă Атăл çинчи мăсăльмансен. II Кĕтерне патшана ларсан тĕн тĕлĕшĕнчен ирĕк парсанах тутар ялĕсенче вун-вун çĕнĕ мечĕт çĕкленнĕ, шкулсем уçăлнă.

Çак лару-тăрура чăвашăн хут пĕлмен мăчавар-апăсĕсем мĕнех тума пултарнă-ши. Вĕсем тĕрлĕ ăслăлăхсене вĕреннĕ мулласемпе тата священниксемпе



4-42685
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

танлашма пултарайман. Çапла вара чăваш пуласлăхĕ истори кустăрми айне пулса юласси куç умĕнчех тăнă.

Христос тĕнне уякан чăвашсен шанчăкĕ пысăкрах пулнă. Вĕсене ислам витĕмĕнчен тата тӳре-шара мăшкăлĕнчен хӳтĕлес тĕллевпе ятарласа крешĕн шкулĕсем уçăççĕ. Сăмахран, Çĕлен мăнастирĕнче (Зилатов монастырь) 1733 çул тĕлне чăваш, çармăс, ирçе-мăкшă, калмăк тата тутар вĕренни паллă. 1740-1764 çулсенче крешĕн шкулĕсенче 320 чăваш ачи вĕренет. Каярах вĕсенчен чылайăшĕ чиркӳ çыннисем пула тăраççĕ, тĕн вĕрентĕвне чăвашла куçарса калама тăрăшаççĕ.

Хусанта тĕн семинарĕйĕ уçăлсан унта чăваш ачисем те ăс пухма тытăнаççĕ. Тĕн семинаринче ĕçлекен В. Пуцек-Григорович чăвашсемпе ытти вак халăхсене хăйсен чĕлхипе вĕрентмелли майсене тĕплĕн аталантарать, удмуртсемпе çармăссен хушшинче ӳкĕтлевçĕ ĕçне туса пырать. Вăл тăрăшнипех семинарире куçаруçăсен ушкăнне туса хураççĕ, «управляющий переводческую должность из школьников новокрещенских детей чувашского языка» текен ĕçе И. Михайлов чăваша шанса параççĕ. Куçаруçăсем чи малтан ӳкĕтлев ĕçĕнче тăлмачăсем пулса ĕçлени паллă. Çавăн йышши тăлмачăсем удмурт тата çармăс чĕлхисенчен куçаракансем те пулнă-тăр.

В. Пуцек-Григоровичăн хăйĕн вак халăхсене çутта кăларас тĕлĕшри ĕçĕсемшĕн нумай хур тӳсме тивет. Малорус-епископ хăйĕн ĕçĕсене яланах тăрăшса та тĕплĕн туса пынă пулсан та II Кĕтерне ăна яланах шанмасăр тăнă. Тĕслĕхрен, 1774 çулта вăл Вениамин епископа Е. Пугачевпа каварлашнă тесе айăплать, пĕр хушă мăнастирте хупса усраттарать, мĕскĕнлентерсе допроссене чĕнтерет. Сăлтавсăр айăплама май килменрен хĕн-хур витĕр тухнă епископа малтанхи ĕçнех лартать, мăшкăлланăн «митрополит» ята тивĕçтерет. Çакăн хыççăн сывлăхĕ хавшаса çитнĕ В. Пуцек-Григорович нумаях пурăнаймасть, 1783 çулхи çĕртме уйăхĕнче çĕре кĕрет.

1769 çулхи çу уйăхĕн 11-мĕшĕнче Питĕрти Ăслăлăх академийĕнче «Сочинения, принадлежещие к грамматике чувашского языка» кĕнеке пичетленсе тухать. Çак кĕнекене В. Пуцек-Григорович явăçтарнипе Е. Рожанский

çырнӑ тесе палӑртаççӗ. Кӗнекере ум сӑмах, морфологие çырса кӑтартни тата словарь пайӗсем пур. Çырса кӑтартнӑ пайне Кӑрмӑш уесӗнчи чӑвашсен калаçӑвне тӗпе хурса йӗркеленӗ.

1769 çулта чӑваш чӗлхин пӗрремӗш грамматики пичетленсе тухни çав вӑхӑтшӑн калама çук пӗлтерӗшлӗ пулнӑ. Чи малтанах чӑваш чӗлхи кӗнеке чӗлхи пулса тӑнине, унӑн çӗнӗ вӑхӑтри çырулӑхӗ пуçланнине тӗнчене кӑтартакан факт пулнӑ ку. Ахальтен мар çав грамматика пирки Германире ырласа çырнӑ рецензи пичетленет, ытти çӗршывсенче те кӗнекене асӑрхаççӗ. Ку ӗнтӗ тӗнчери халӑхсен чӑвашсен те хӑйсен вырӑнӗ тупӑнни çинчен пӗлтерет.

Чӑваш чӗлхи, чӑваш пурнӑçӗ тӗнчери ятлӑ-сумлӑ халӑхсемпе танлаштарса пӑхмалли объект пулса тӑрать. Çавна май чӑваш ӑнӗ хӑйӗн çине урӑх çын куçӗпе пӑхма пуçлать. XVIII ӗмӗрӗн 60-мӗш çулӗсенче чӑваш обществин ӑнӑнче каламалла мар пысӑк улшӑнусем пулса иртеççӗ. Чи пӗлтерӗшли кунта халӑхӑмӑрӑн пуласлӑхӗ пуррине туйса илни. Чӑваш та, тутар пекех, кӗнекеллӗ халӑх пулса малалла кайма вӑй-хӑват çитересси, реликт шайӗнче юлмасси вӗреннӗ çынсене курӑнса тӑнӑ, кӗнеке-куçару ӗçӗнче хавхалантарса пынӑ. Чӑваш чӗлхи çӗкленӳллӗ стиле юрӑхлӑ чӗлхе, унпа мухтав сӑввисем хайлама та май пур тени мӗне тӑрать тата! Çав чӗлхе чиркӳ чӗлхи пулма пултарать текен вӑхӑтсем те инçетрех пулман ун чухне. Чӑваш чӗлхин обществӑри пӗлтерӗшӗ, унӑн функцийӗ, ерипен те пулсан, ӳссех пынӑ.

***Усӑ курнӑ литература***

Алексеев, А. Чӑваш чӗлхин пӗрремӗш грамматики : «Сочинения принадлежащие к грамматике чувашского языка» кӗнеке пичетленсе тухнӑранпа 230 çул çитнӗ май / А.Алексеев // Хыпар. – 2003. – Пуш, 6.

Димитриев, В.Д. Оходер Томеев - чувашский общественный деятель второй четверти XVIII века / В.Д. Дмитриев // Исследования по дореволюционной истори Чуваши. – Чебоксары : Чуваш. кн. изд-во, 1991. – С. 18-30.

Родионов, В.Г. Чӑваш литератури. XVIII-XX ӗмӗрсем : вӗренӳ пособийӗ / В.Г. Родионов. – Шупашкар : Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2006. – 463 с.

Родионов, В.Г. Тĕнсен Атăл тăрăхĕнчи хирĕçĕвĕ / В.Г. Родионов // Хыпар. – 2000. – Çурла, 3.

Юмарт, Г.Ф. Мерчен кайăк йĕрĕпе: чăвашсен истори юррисем çинчен / Г.Ф. Юмарт // Тăван Атăл. – 1984. – 8 №. – С. 57-62.

## 1832-1846 ÇУЛСЕНЧИ ЧĂВАШ ÇЫРУЛЛĂ КУЛЬТУРИ

### *В.П. Вишневский (1804–1885) пурнăçĕпе пултарулăхĕ. Унăн чăваш çырулăхне аталантарас ĕçри вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ.*

XIX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче вырăс обществинче романтизм идейисем вăй илсе пыраççĕ. Ку пулăм чăваш ăнне те вăратма пикеннĕ, çырullă культурăна витĕм кӳме хăтланнă. Вĕрентӳ идейисем вырăнне, пĕрпеклетӳ туртăмĕсем вырăнне хăй евĕрлĕх туртăмĕсем йышăннă. Çав хушăрах чăвашсен хушшинче мухтав сăввисемпе сăмахĕсене тата очерксем çырас традици манăçа тухни курăнать. Ку вăл чăваш обществине урăх обществăпа пĕрпеклетесшĕн тăрăшнă тапхăрта пулса иртнĕ.

Чăваш ăнĕнче хăй евĕрлĕхе мала хурасси вăйланса пыни чи малтан вăл хăйне хăй субьект пек туйма пуçланипе тачă çыхăннă. Çавна пула халăхăмăрăн хăй евĕрлĕхĕ çинчен, унăн чĕлхи, аваллăхĕпе хальхи тата пуласси çинчен çырма пуçлаççĕ. Тепĕр хут сăмах пуххисемпе грамматика çырас ĕçе кӳленеççĕ. Хальхинче вĕсен тĕллевĕ урăхларах: чăваша ытти халăхсенчен уйăрса пăхасси, ăна хăйне кăна тивĕçлĕ вырăна лартасси. Кунтах этнографи, истори, чĕлхе шыравĕсем те кĕреççĕ.

Çакă ĕнтĕ чăвашсемшĕн çĕнĕ самана çитнине пĕлтернĕ. Çав вăхăтрах тĕн ĕçне çĕнĕ ăру – Мускав академийĕнче ăс пухнă çамрăксем яваçаççĕ. Вĕсем – православи тĕн идеализмĕпе кăна мар, Кантăн, Фихтен тата Шеллингăн философийĕсемпе паллашнă çынсем

пулнă. Вĕсен шутĕнче чăвашран тухнă А. Протопопов, В. Вишневский тата В. Громов чиркӳҫĕсем пулнă.

**Александр Степанович Протопопов.** А. С. Протопопов пурнăҫĕ халиччен те туллин паллă мар. Вăл 1828 ҫулта Кăрмăш соборĕнче ĕҫленĕ, ҫав ҫул «Краткое описание суеверий чуваш» очерк хайланă. Ăна автор хăй вăхăтĕнче кун ҫути кăтартайман, хайлав тепĕр вунҫичĕ (17) ҫултан кăна Мускавра пичетленсе тухнă. Унăн 1836 ҫулта «Сумасшедший, или Желтый дом» тата «Незаконнорожденный, или Жизнь и смерть» кĕнекисем пичетленнĕ.

Ҫав виҫĕ ĕҫрен пĕри ҫинчен В. Вишневский Ф. Голубинский патне 1834 ҫулхи утă уйăхĕн 7-мĕшĕнче Александр Степанович Протопопов пултарулăхне пысăка хурса хакласа тата «Сумасшедший, или Желтый дом» хайлава латин чĕлхине куҫарма ирĕк ыйтса, семинарире вĕренекенсемшĕн вăл лайăх пособи пуласса шаннине ҫырса пĕлтерет. Ҫапла вара Протопопов кĕнекисем Мускавра Голубинский пулăшнипе пичетленсе тухнине пĕлме пултаратпăр.

**Виктор Петрович Вишневский.** В.П. Вишневский 1804 ҫулхи чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕнче (ҫĕнĕ стильпе раштавăн 5-мĕшĕ) Вăрнар районĕнчи Сăкăт ялĕнче Петр Стефанов пуп кил-йышĕнче ҫуралнă. П. Стефанов хăй вăхăчĕшĕн питех те анлă тавракурăмлă тата пĕлӳллĕ ҫын пулнă. Вăл латин, авалхи грек, француз тата ытти чĕлхесене пĕлнĕ, поэтикăпа риторика вăрттăнлăхĕсене лайăх чухланă. (П. Стефанов ывăлĕсем те пултаруллă пулнă. Матвей Вишневский вырăсларан чăвашла куҫарассипе палăрнă. Семен ятлă ывăлĕ тухтăр пулнă май медицина кĕнекисене чăвашла куҫарнă, тепĕр ывăлĕ Гурий, Етĕрне уесĕнче халăх училищин инспекторĕнче, каярах реальнăй училищăн директорĕнче ĕҫленĕ).

Виктор Петрович Вишневские Хусан тĕн семинарĕйĕнче лайăх вĕренсе пынипе 1822 ҫулта Мускав тĕн академине вĕренме куҫараҫҫĕ. Кунта шăпах ҫав вăхăт тĕлнелле вăтам ĕмĕрсенчи ортодоксирен хăтăлса ҫĕнĕлле вĕрентме пуҫланă. Вишневский кунта Кант, Фихте,

Шеллинг ĕçĕсемпе паллашать, Мускав сывлăшĕпе, романтиксен сывлăшĕпе сывлать.

1828 çулта В. Вишневский Хусан тĕн семинаринче философи курсне вĕрентме пуçлать, çав хушăрах Петĕрпе Павăл святительсен соборĕнче священикра ĕçлет. Çав çулхи раштавăн 4-мĕшĕнче вăл магистр ĕçне хӳтĕлет, философи профессорĕн ятне тивĕçет. 1829-1836 çулсенче çамрăк философ семинари библиотекарĕнче те вăй хурать. Кунта пирĕн ун чухнехи библиотекарьсен нумай чĕлхе пĕлмелле, энциклопедист пулмалла пулнине асра тытмалла. Çавăнпа та ун чухне çав ĕçе магистрсене е профессорсене кăна шанса пама пултарнă.

1830 çулта Кяхтăна каякан делегаци çула май Хусан семинарийĕнче пулнă. Çавăн чухне В. Вишневский Н. Бичуринпа паллашать, унăн вĕр çĕнĕ кĕнекисене семинари библиотеки валли илсе юлать.

1831 çулта Бичурин хăйĕн ентешĕпе тепĕр хут тĕл пулать, ăна вăл чăваш чĕлхи хăш чĕлхесен ушкăнне кĕнине тĕпчеме хушать (сĕнет). Сăлтавĕ вара унăн яланхи опоненчĕ Ю. Клапрот 1828 çулта Парижра чăваш чĕлхи тĕрĕк чĕлхисен ушкăнне кĕни çинчен çырнинче. Паллах, çак факт Бичурина, чĕлхесене пĕлнĕ-пĕлмен тишкерме хăтланакансене сивлекенскере, питех те тарăхтарнă. 1831 çулта Кяхтăра çырнă пĕр статьинче вăл Клапрота чĕлхесене чуххăмăн тĕпченĕшĕн питĕ хытă ятлать.

Ун чухне чăваш чĕлхи çинчен туллин çырма пĕр В. Вишневский кăна пултарнă. Вăл вăхăтчен Вишневский «Кĕске святой йомахĕ» тата «Кĕске катехизис» хайланă, чăвашла-вырăсла словарь те йĕркелеме ĕлкĕрнĕ.

Н. Бичуринăн «Китайская грамматика» кĕнекин витĕмĕпе В. Вишневский «Начертание правил чувашского языка и словарь, составленные для духовных училищ Казанской епархии» грамматика ĕçĕ çырат, ăна тĕн училищисенче вĕренекенсем валли пичетлесе кăларать (1936).

1844-1846 çулсенче В. Вишневский очерк тата ӳкĕт жанрĕсемпе ăнăçлă ĕçлет, министр ĕçĕсене туса пырать. Хусанта тĕн академийĕ уçăлсан вăл унта чăвашпа çармăс

уйрăмĕ уçасшăн тăрăшать. Чăваш тĕнĕпе йăли-йĕрки çинчен лекцисем вулать. Каярах вăл Сăваплă Гурий тăванлăхне никĕслекенĕсенчен пĕри пулса тăрать, Н. Золотницкийпе унăн вĕренекенĕсене нумай пулăшу парать. В. Вишневский 82 çула кайса 1885 çулхи раштавăн 30-мĕшĕнче яланлăхах куçне хупать.

В. Вишневскин çырулла культурăри ĕçне икĕ ушкăна уйăрса пăхмалла. Пĕрремĕш ушкăнри ĕçĕсене вăл малтанхи тапхăрта вăй хунă А. Алмазовпа Н. Базилевский, Кăрмăш тăрăхĕнчи куçаруçăсен ушкăнĕн традицийĕсене малалла аталантарса çырнă. Кунта унăн «Хотла вĕренесшĕн чăваш чĕлхипе», «Кĕске святой йомахĕ», «Кĕске катехизис» куçарăвĕсене тата вĕрентсе каланисемпе ўкĕчĕсене кĕртмелле. Ăслăлăх ĕçĕсемпе очеркĕсем унăн культурăри çĕнĕ пулăмсемпе килĕшĕрех тăраççĕ, обществăн хăй евĕрлĕхĕ мала лартакан ăнĕпе çураçаççĕ.

1832 çулта Хусанта «Начатки христианского учения» кĕнеке пичетленсе тухать, унта Вишневскин «Кĕске святой йомахĕ» пысăк вырăн йышăнать. Тĕрĕссипе вăл чăннипех те халăх сăмахлăхĕнче анлă сарăлнă юмах пек вуланать, çĕр çинче япаласемпе пурнăç пулса кайни çинчен ăнлантаракан халапсене аса илтерет.

В.П. Вишневский ăнĕ халăхăн хăй евĕрлĕхне тĕпе хурать, вăл ăçтан пулса кайнине тĕпчет. Унăн йăли-йĕркисене сăнать. Хальлĕхе вăл вĕсем çине вĕрентўçĕпе ўкĕтлевçĕ куçĕпе кăна пăхать-ха. Çав хушăрах калуçă халăхăмăрăн йăлисене тĕплĕн пĕлни сисĕнет. Акă «Кĕске катехизисра» калуçă (автор, В. Вишневский) тĕрĕслĕх, тăванлăх шухăшĕсене мала лартать. В. Вишневский, чăваш кĕллисен сăмахĕсене та аван пĕлнĕскер, вĕсен стильне тата чĕлхине вĕрентсе каланă сăмахсене илемлĕн кĕртме пултарать. Калуçă чăваш хресченĕсен кулленхи пурнăçне аван пĕлет, çитменлĕхсене вырăнлă асăрхать. Кунта вăл чăн-чăн ўкĕтлевçĕ. Йăнăш çулпа каясран сыхлаканĕ, мĕн-мĕн тума юраманнине тĕплĕн каласа ăнлантараканĕ.

Калуçă хресченĕн несĕпĕпе кăна мар, унăн экономикипе те кăсăкланни питех те пĕлтерĕшлĕ. Çакă

маларах тухнӑ пӗр катехизисра та тӗл пулмасть. Ку вӑл В. Вишневский текста хӑй вӑхӑчӗн паллисене кӗртнӗрен ҫапла пулса тухнӑ.

Тӗрӗссипе, «Кӗске катехизис» жанр тӗлӗшӗнчен, вӗрентсе калани (поучения) пек калӑпланнӑ. Унти калуҫӑ сӑнарӗ уҫӑмлӑ, вӑл чӑвашсене пур енчен те тӗрӗс пурӑнма вӗрентесшӗн. Калуҫӑ чылай чухне ӑс паракан пек калаҫать. Ҫав хушӑрах вӑл типӗ чӗлхеллӗ вӗрентекен мар иккен, риторикӑн тӗрлӗ фигурисемпе усӑ курать, ҫавна май каланӑ сӑмаха витӗмлӗ тӑвать.

В. Вишневский вӗрентсе каланисем очерксене питех те ҫывӑх. Вӗсенче пуринче те халӑхӑмӑрӑн йӑли-йӗркипе ӗненӗвӗ тӗпре тӑраҫҫӗ. (Енчен те вӗрентсе каланинче дидактика хуҫаланать пулсан, – очерксенче – хӑй евӗрлӗхе палӑртни).

Вишневский икӗ жанрта та тухӑҫлӑ ӗҫленӗ тенӗччӗ. 1843-1844 ҫҫ. хайланӑ «11 вӗрентни» питех те кӑтартуллӑ. Тӗрӗссипе ҫак вӗрентнисем ҫурма очерксем пулса тухнӑ. Хайлаври калуҫӑ пӗтӗмпех чӑваш йӑли-йӗрки пирки калаҫать.

Ҫак чӑвашла текстсем чӑваш литератури ҫав вӑхӑтра синкретикӑлла пулни ҫинчен тепӗр хут каласа параҫҫӗ: пӗр вӑхӑтрах вӗсем идеологипе ӑн, этнографипе чӗлхе наукисен тата илемлӗ литература функцийӗсене пурнӑҫланӑ. Ҫавӑнпа та В. Вишневский вӗрентсе каланисемпе ӳкӗчӗсене тӗн литератури картинчен тухмасӑр пӑхма май ҫук. Унӑн «Кӗске святой йомахӗ», «Кӗске катехизисӗ» 30 ҫул ытла чӑвашла вуламалли пособи вырӑнӗнче пулать. В. Вишневский чӗлхе тӗпчевҫи те. Вӑл 1832 ҫулта «Слова, сходные в чувашском, татарском и черемисском языках» тата «Словарь чувашского языка» сӑмах пуххисем йӗркелет.

1835 ҫулта Н.Бичурин Хусанта тепӗр хут пулать, «Китай граммтикине» парнелесе хӑварать. 1836 ҫултах В. Вишневский «Начертание правил чувашского языка» ятпа училищӗсенче ӑваш чӗлхине вӗрентмелли кӗнеке хатӗрлесе кӑларать. 1844-1846 ҫулсенче В. Вишневский очерк жнрӗпе ӗҫлет. «О религиозных поверьях чуваш» очерк ҫырса пичетлет. Очерка вӑл чӑваш йӑлисене

пĕлекен чăвашсенчен ыйтса пĕлнĕ пек йĕркеленĕ. В. Вишневскин очерк çырас традицийĕсене каярах унăн вĕренекенĕсем В. Сбоев, В. Лебедев, В. Громов 40-50-мĕш çулсенче малалла тăсаççĕ.

*Усă курнă литература*


Родионов, В.Г. Чăвашсен малтанхи çыравçи / В.Г. Родионов // Тăван Атăл. – 2001. – 3 №.

Родионов, В.Г. Н.Я. Бичурин тата В.П. Вишневский / В.Г. Родионов // Коммунизм ялавĕ. – 1986. – Октябрь, 13.

Чăваш литератури (Октябрьти революцичченхи тапхăр). М.И. Сироткин пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1951. – 295 с.

Родионов, В.Г. Чăваш литератури. XVIII-XX ĕмĕрсем : вĕренӳ пособийĕ / В.Г. Родионов. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 2006. – 463 с.

Федорова, Е. В. Истоки и формирования жанров чувашской литературы XVIII-XIX вв. / Е.В. Федорова. – Чебоксары : Чувашский государственный институт гуманитарных наук, 2006. – 144 с.


## С. М. МИХАЙЛОВ – ЯНТУШĂН ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИНЧИ ВЫРĂНĔ. НУМАЙ ЕНЛĔ ПУЛТАРУЛĂХĔ

*С. Михайлов-Янтуш пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ.*

*С. Михайлов-Янтуш этнограф, публицист, прозаик. Унăн очерк, калав çырас ăсталăхĕ. Çыравçă чăваш литературине кĕртнĕ поэтикăри тата жанр тытăмĕнчи çĕнĕлĕхсем.*

XIX ĕмĕрĕн варринче чăваш çырулла культурине çĕнĕ çыравçăсем килсе кĕреççĕ. 1848 çулта чăвашсем çинчен харăсах икĕ çын çырма пуçлать: В.А. Сбоев тата В.И. Лебедев. Вĕсен пархатарлă ĕçне тăван чăваш чĕлхипе малалла тăсаканĕ Спиридон Михайлович Михайлов – Янтуш пулнă (С. Михайловччен чăвашран тухнă е чăвашсем çинчен çырнă çыравçăсем пурте тенĕ пекех вырăсла е тата урăх чĕлхесемпе çырнă пулнă). С. Михайлов – Янтуша тĕпчевçĕсем чăваш ячĕпе малтанласа калаçаканĕ те теççĕ. Мĕншĕн тесен пирĕн çак таранччен

сарӑлса пынӑ ҫыруллӑ культура талккӑшне чӑваш ячӗпе чи малтан никам та мар, С. Михайлов – Янтуш уҫнӑ тесе хӑюллӑнах калама пултаратпӑр.

С.М. Михайлов – Янтуш чӑвашсен этнографӗ, публицисчӗ, ҫыравҫи... Вӑл 1821 ҫулхи чӳк уйӑхӗн 28 мӗшӗнче хальхи Муркаш районне кӗрекен Юнкӑпуҫ ялӗнче хресчен кил-йышӗнче ҫуралнӑ. 8 ҫула ҫитиччен Ҫӗпритун тӑван ялӗнчех пурӑннӑ. 1829 ҫулта ӑна ашшӗ хутла вӗрентес шутпа Чикме хулине хӑй паллакан вырӑс купси патне илсе каять. Кунта унӑн хутла вӗреннинчен ытларах ӗҫлеме тивет. Ҫапах та Михеев хуҫа патӗнче хӗнпе пулин те вулама ҫырма вӗренет. Унӑн малтанхи вӗрентекенӗ, хӑй каланӑ тӑрӑх, А. Писарев чиновник пулнӑ. Ку ҫын 1812 ҫулта Тӑван ҫӗршыв вӑрҫине хутшӑннӑ, тӑшмана хӑваласа Париж хулине ҫитнӗ. Чӑваш ачине историе юратма чи малтан ҫавӑ вӗрентнӗ.

1833 ҫулта вӑл купса ҫуртӗнчен тухса каять те чӑваш вулӑсӗн кантурне ҫыруҫӑ ӗҫне вырнаҫать. Выҫӑллӑ-тутӑллӑ пурӑннине пӑхмасӑр пултаруллӑ ача хӑй тӗллӗн малалла вӗреннӗ. Кайран тӗрлӗ вулӑс правленийӗсенче, земство полицийӗнче ӗҫленӗ. 1834-38 ҫулсенче Етӗрне уесӗнче Мӑн Шетмӗре ҫыруҫӑ пулса ӗҫлет. С. Михайлов вырӑсла, чӑвашла, марилле питӗ лайӑх пӗлнӗ. 1842 ҫултан пуҫласа мӗн виличченех вӑл Чикмери земство сучӗн куҫаруҫи пулнӑ. Пушӑ вӑхӑтра вӑл суд архивӗнчи кивӗ жрналсемпе хаҫатсене пӑхкаласа ларма юратнӑ. Хӑй ҫырнӑ тӑрӑх, чӑвашсен мӑн аслашшӗсем Атӑл ҫи пӑлхарсем пулнӑ текен шухӑш унӑн Н.И. Второвӑн «Памятники древности в Казанской губернии» статьине вуланӑ хыҫҫӑн тӗвӗленнӗ. Каярахпа ҫак шухӑша хӑйӗн очеркӗсемпе калавӗсенче те ҫирӗплетме тӑрӑшнӑ.

Чӑваш ҫыравҫи пӗр хушӑ «Казанские губеренские ведомости» хаҫат редакторӗнче ӗҫленӗ А. Артемьевран та чылай вӗреннӗ. Ку вара чӑваш писательне ҫырма хавхалантарса унӑн ӗҫӗсене тӑтӑшах пичетлесе пынӑ. М. Погодин патне 1860 ҫулхи ака уйӑхӗн 25-мӗшӗнче С. Михайлов ҫапла ҫырать: «Артемьев первый начал печатать мои статьи, переубедив во мне врожденную

страсть к литературе, а И. Березин продолжал помогать мне в этом деле, издавши в 1853 году мое первую книгу «Чувшские расговоры и сказки» за свой счет».

И. Березин – А. Артемьев вырăнне йышăнса юлнă çын, Хусан университечĕн профессорĕ, паллă востоковед. Хаçатăн унчченхи редакторĕ пекех, С. Михайловпа тачă çыхăну тытнă, унăн кĕнекин иккĕмĕш вариантне пичетлесе кăларнă. Чăвашсен пулас тĕпчевçине наука çулĕ çине тухма вырăссен паллă археологĕ, этнографĕ тата нумизманĕ П. Савельев та сахал мар пулăшнă. Вырăс ученăйĕсемпе публицисчĕсем пулăшнипе С. Михайлов хăйĕн пултарулăхне наукăра та, литературăра та кăтартнă. Вĕсем пулăшнине пула хресчен ывăлĕ Чваш ячĕпе аслă тĕнчене тухнă, хăй халăхĕн авалхăхĕпе культури çинчен ытти халăхсене каласа панă.

1851 çултан пуçласа С. Михайлов хăй те çырма тытăнать. Вырăспа чăваш халăхĕсен иртнĕ пурăнçĕ çинчен вăл тĕрлĕ хаçатсенче статьясем пичетлесе кăларать.

1852 çулта çу уйăхĕнче писатель чăвашсем çинчен çырнă виçĕ очерк пичетленĕ: «Балдран базар в Космодемьянском уезде» (çĕртме), «Предания чуваш» (çĕртме-çурла) тата «О музыке чуваш» (çурла). Çав хайлавсен йĕкĕрешĕсем пур – диалога тĕпе хунă ремаркăллă калаçусем. Вĕсене автор çырмалли материал пуçтарнă май, очерксен тĕп шухăшне куç умне кăларса тăрататакан ÿкерчĕксем урлă, хальхи вăхăтра пулса иртекен ĕç пек ăсталанă. Вĕсенчен хăшĕ-пĕри пĕчĕк сценка евĕрлĕ пулса тухнă, пысăкраххисене вара инсцинировка тесе хакламалла.

1853 çулта С.М. Михайловăн «Чувашские разговоры и сказки» ятлă кĕнеки çапăнса тухать. Унта «Краткое этнографическое описание чуваш» очерк, ултă инсцинировкăпа сценка тата юмахсемпе халăх сăмахлăхĕн ытти хăш-пĕр тĕслĕхĕсем кĕнĕ. Ку кĕнекене 1851 çул вĕçĕнче е 1852 çул пуçламăшĕнче çырма палăртнă кĕнекен иккĕмĕш варианчĕ теме пулать.

1852 çултан пуçласа 1860 çулччен С. Михайлов хаçат-журналта 33 материал пичетленĕ. Унăн 18 алçырăвĕ

вара ниçта та пичетленмесĕр юлнă. Вăл хăйĕн хайлавĕсене вырăсла çырнă. Кунта икĕ сăлтав пулнă. Пĕри – писатель чăваш ячĕпе вырăс умне тухса чăваш та ытти халăхсем пекех хисепе тивĕç, чăвашăн та аваллăхĕпе пуянлăхĕпе пур, унăн пуласлăхĕ ирки шутласа пăхмалла тесе калас килнĕ. Йышлă халăх, çав шутра влаçсем те, илтчĕр тесен вырăсла çырма тивнĕ. Тепри – чăвашла çырнă япаласене пичетлесе кăларма çав вăхăтра питĕ йывăр пулнă. Çав çулсенче чăваш хушшинче хут вĕреннĕ çынсем те сахал пулнă. Вĕсем те ытларах вырăсла вулама-çырма вĕреннĕ. Çав хушăрах вăл хăй çырнисене тăван халăх хушшине çитерес шухăша та пăрахман, очеркĕсене те абзацĕ-абзацĕпех чăвашла текстсем кĕртсе янă. С. Михайлов пĕтĕм пултарулăхне пăхсан çакна асăрхама пулать, вĕсенче тăван халăха çутта кăларассишĕн трăшни курăнать.

С. Михайлов тăван халăхăн иртнĕ кун-çулĕпе те кăсăкланма пуçлать: 1838 çулта вăл Е. Пугачев пăлхавĕ çинчен халăхран ыйтса-пĕлсе çӳрет, кайран хăй пухнă материалпа усă курса «Пăкача çинчен» пĕчĕк пьеса тата «Воспоминание о пугачевщине» очерк çырать.

40-мĕш çулсен пуçламăшĕнче С. Михайлов – Янтуш чăваш халăхĕн иртнĕ кун-çулĕпе тата ытларах кăсăкланма пуçлать. Каярах вăл хăйех çапла çырать: «Я пламенно перечитывал историю болгар... и убедился, что с знаменитыми болгарами могли жить и предки моих соплеменников и принимать исламизм».

С. М. Михайлов – Янтушăн чи малтан çырнă илемлĕ хайлавĕ – «Ватă çын Фролов çамрăк хăтине хăйĕн ашшĕпе 1769 çулта пулса иртнĕ ĕçсем çинчен каласа кăтартать» сценка. Ăна автор 1850–1851 çулсенче чăннипе пулса иртнĕ калаçăва тĕпе хурса чăн пулнине натурализм шайĕнче çырнă. Унти харкамçăн ячĕ – Спиридон – писателĕннипе тӳр килет.

Çыравçă литература ĕçне явăçнă тĕле чăваш çырулă литературин хăш-пĕр традицийĕсем çирĕпленме ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Вĕсем халăхăмăрăн сăмахлăхĕ, унăн сăнарлă системи тата унăн шухăшлавĕ çинче никĕсленсе тăнă. С. Михайлов – Янтуш литературăра çирĕпрех

утăмсем тума пуçланă тĕле вырăс литератури обществăлла анлă тибуна пулса тăнă ĕнтĕ. Вырăссен литературинче реализм вăй илнĕ, илемлĕ очерк жанрĕ ăнăçлă аталаннă. Чăваш çыравçи те, демократиллĕ шухăшсене çывăх йышăннăскер, тăван литературăри унччехи традицисемпе кăна çырлахса ларма пултарайман. Чи малтанах вăл илемлĕ очерк жанрне алла илме тăрăшнă. Очерк жанрне çыравçă ахальтен суйламан. çав вăхăтри чăваш литературин функцийĕсене туллин те пур енлĕн пурăнçлама çав жанр çеç пултарасса туйса илнĕ ахăр.

С. Михайлов çыравçăпа тĕпчевçĕн чи ăнăçлă ĕçленĕ тапхăрĕсем 1850–1855 тата 1856–1860 çулсене тивет. Малтан вăл чăвашсен йăли-йĕркипе, историйĕпе тата сăмахлăхĕпе кăсăкланать, вĕсене çĕкленӳллĕ кăмăлпа, романтикларах çырса кăтартать. Ку очерксем лирика çаврăмĕсемпе, автор монологĕсемпе пуян. Очерксенче çамрăк харкамçă тăван халăхăмăрăн авалăхне туллин ăнланса туйса илме тăрăшать, тăтăшах тарăн шухăша путать... Писателĕн малтани очеркĕсем çĕкленӳлĕхпе, романтика енне сулăннипе палăрса тăраççĕ. Каярах çав туртăм унăн йăвашланса пырать.

С. Михайлов – Янтуш чăвашла ултă инсцинировкăпа сценка хайланă терĕмĕр. Малтанхи хайлавĕ («Ватă çын Фролов...») вăйсăртарах та шупкарах пулса тухнă. Каярах, ытти инсцинировкисене çырнă чухне, автор ăсталăхĕ лайăхрах та уççăнрах курăнать.

«Анатри чăвашпа вирьял хушшинчи калаçу» инсцтинировкăра автор калаçу уйрăмлăхне палăртассинчен ытларах чăвашсен пурнăçне сăнласа парасшăн тăрăшнă. Çакна вăл Ишеке пынă анатри чăваш кил хуçипе тата унăн арăмĕпе калаçни урлă кăтартать. «Авалхи çинчен» инсцинировкăри тĕп харкамçăсем – Йăвашка мучипе ун патне калаçса ларма пынă çамрăк Крикка. Ку сценкăра автор хăйĕн шухăшне Йăвашка мучи сăнарĕ урлă уçса парать. Вăл Раççейре капитализм йĕркисем çирĕпленсе пынине сивлет, çавна май чăваш ялĕнче усалпа ултав сарăлнишĕн пăшăрханать. Писатель чăвашсен авалхи пурнăçне

мухтанӑ хушӑрах мулпа укҫа йӗркисене тиркет, вӗсем ӗлӗкхи йӑласене пӗтерсе хунине палӑртать. Ҫапла вара, писатель инсцинировкисене тата сценкисемпе тӗплӗн паллашсан вӑл ҫав ҫулсенче чӑваш аваллӑхӗ, хӑй евӗрлӗхӗ енне туртӑннине курма пулать. «Пӑкача ҫинчен» сценкӑри Хрол мучин сӑнарне автор чӑннипех пулнӑ ҫынран илнӗ. Ҫакӑ писателӗн «Воспоминание о пугачевщине» очеркӗпе танлаштарсан аван курӑнать. Инсцинировӑри Хрол мучипе очеркра асӑннӑ Етӗрнери чӑваш пӑлхавҫи пӗр ҫынах. Очеркра вара ҫапла ҫырни тӗл пулать: «В 1838 году чуваш показал мне большую ореховую чашку, в которой дед его подносил Пугачеву серебряные монеты». Ҫыравҫӑн очеркне вуласан вӑл Пугачев тата ун тавра пухӑннӑ ҫынсене кӑмӑллани уҫҫӑнах курӑнать.

1852 ҫулта С. Михайловӑн «О музыке чуваш» очеркӗ пичетленсе тухать. Ҫав очеркпа йӗкӗреш тепӗр сценка («ятлаҫу») пур. Асӑннӑ икӗ хайлавӑн тӗп шухӑшӗ – чӑваш юрри-кӗвви асамлӑхӗпе илемне кӑтартса парасси. Ку шухӑш унти харкамҫӑсен сӑнарӗнче палӑрать. Олек, ҫамрӑк хӗр, шӑпӑр каланине итлеме кӳрше каҫнӑ. Амӑшӗ хӗрне кахал тесе ӑна килте ӗҫлеменшӗн: «Шта шӑпӑр пор, онталла анчах шохӑш шойтанӑн», – тесе вӑрҫать. Хайлавра писатель чӑвашсем мӗн авалтан музыкӑна хытӑ кӑмӑлланине ун чухнехи пурӑнҫпа пӗлсе ҫыхӑнтарать.

С. Михайлов пултарулӑхӗн малтанхи тапхӑрӗнче романтика юхӑмӗпе реализм туртӑмӗ Синкретикӑлла ҫыхӑнура тӑнӑ. Енчен те унӑн очеркӗсенче автор ячӗпе калаҫакан ҫын ытларах ӗмӗт-туйӑмне палӑртма кӑмӑллать пулсан, сценкӑсемпе инсцинировкӑсенчи харкамҫӑсен сӑмахӗсем кӗскерех те ҫивӗчрех, вӗсем йӑла прозипе ҫывӑхрах тӑраҫҫӗ. Ку проза катехизис тексчӗсенченех тымарланса ҫирӗпленет.

Чӑваш очеркҫи калав жанрӗнче те ӑнаҫлӑ ӗҫленӗ. Ахалтен мар ӑна чӑваш калавӗн жанрне пуҫарса яраканӗсенчен пӗри тесе шутлаҫҫӗ. Писателӗн чи малтан ҫырнӑ калавӗсен шутне Вятка ҫыннисем ҫинчен ҫырнӑ шӳтлӗ хайлавӗсене кӗртмелле. Вӗсен шучӗ ҫирӗмрен те

иртег. Çав калавсене вăл Вятка таврашĕнче пурăннă хуньăшĕ каласа панисене тĕпе хурса çырнă. Шел, хальлĕхе çав текстсенчен тăваттăшĕ çеç паллă. 1854 çулта автор «Легенды про вятчан» ятлă кĕнеке ал çырăвне «Москвитянин» журнала ярса панă. Анчах ун малашнехи шăпи паллă мар.

Тăватă калавĕ çыравçă дневникĕнче упранса юлнă. Вĕсен сюжечĕсем халăх хушшинче та сарăлнă. Анчах С. Михайлов çав калавсене халăхран çырса илнĕ тесе калама çук. Кулăшла калавсенчи харкамçăсем «вечени» ятпа çӳреççĕ. «Вечени» сăмах вырăсла «вятчане» (вятка кĕпĕрнинче пурăнакансем) тенипе тӳр килет. Çавăнпа та вĕсем халăх хушшинчи литература урлă кĕнĕ теме хăюллăнах пулать. Ку халапсем халăх хушшине кĕнеке урлă сарăлнă тесе калама фактсем çителĕклех. С. Михайлов «Чее кушак», «Хусанта Державин палăкĕ умĕнче», «Хваттер хуçипе калаçни», «Ăнман ывăл» калавĕсем илемлĕх тĕлĕшĕнчен самай паха хайлавсем пулса тухнă.

Литературăра С. Михайлов – Янтуш реализм меслетне мала хунă. Чăваш литературине çав çулпа яма пулăшнă. Тĕпчевçĕ хăйĕн юлашки çулĕсенче халăхăмăрăн пурнăçĕ çинчен тĕплĕнрех çырма пуçланă, публицистикăра экономикăпа социаллă пурнăç ыйтăвĕсене çивĕччĕн хускатнă.

С. Михайлов – Янтуш çыравçă çеç мар, ăста куçаруçă та пулнă. Хăйĕн чăвашла тексчĕсене вăл кашнине тенĕ пекех вырăсла куçарнă, куçарнă чух чи малтан чĕлхе уйрăмлăхĕсене шута илме, поэзи сăнарĕсене упраса хăварма тăрăшнă.

Чăваш сăмах ăсти хăйĕн пултарулăхне поэзире те тĕрĕслесе пăхнă: тăватă картлă (стопаллă) ямбпа çырса вырăс силлабо-тоникине алла илнĕ. Çав вăхăтра чăваш поэзийĕ мухтав сăввисен кӳлепинчен писсе халăх сăввине ăша хывнă, каярах вăл сăвă тытăмĕ чăваш поэзи классикин тĕп форми пулса тăнă. Унăн икĕ сăвви паллă. Пĕрне хăйĕн «Верноподанническая любовь к государю показанная крестянинам» ятлă статьине кĕртнĕ. Иккĕмĕш сăвви чылай якарах та сăнарлăрах. Ăна хĕр йĕрри тесе

ӑнлантарнӑ. Сӑвӑç пурӑннӑ тӑрӑхра çав жанр аталанманнине тата сӑвӑ тытӑмӗ халӑх юррисенчен уйӑмрах пулнине шута илсен çак текста оригиналла хайлав тесех шутламалла. Ку сӑвӑри лирика геройӗ вара ачалӑх кунӗсемпе те ашшӗ-амӑш çӗршывӗпе те уйӑлать. Çапах та сӑвӑри уйӑрлу темине, уйӑлнӑ чухнехи шухӑш-туйӑма тӑван халӑх сӑмахлӑхӗнчен илнӗ.

С. Михайлов – Янтуш чӑваш литературине илемлӗ калав, инсцинировка, сценка жанрӗсене кӗртнӗ. Илемлӗ очерксен поэтикине аталантарнӑ, ӑста куçаруçӑ, драма жанрӗсен системине кӗрекен йӑла калавӗсене те малтанласа кӗртнӗ чӑвашран тухнӑ сӑмах ӑсти пулса тӑрать. Хӑйӗн пултарулӑхри ӑсталӑхне туптаса вӑл чӑваш илемлӗ литературин кӳлепине ӑсталанӑ, хӑйӗн хыççӑн килекенсем валли çул такӑрлатнӑ.

### *Усӑ урнӑ литертаура*


Революцичченхи чӑваш литератури (XX ӗмӗрччен). 1-мӗш том. Текстсем. – Шупашкар : Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1984. – 464 с.

Революцичченхи чӑваш литератури (XX ӗмӗрччен). – Шупашкар : Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1989. – 302 с.

Родионов, В.Г. Чӑваш литератури. XVIII-XIX ӗмӗрсем : вӗренӳ пособийӗ / В.Г. Родионов. – Шупашкар : Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2006. – 463 с.

Федорова, Е. В. Истоки и формирования жанров чувашской литературы XVIII-XIX вв. / Е.В. Федорова. – Чебоксары : Чувашский государственный институт гуманитарных наук, 2006. – 144 с.

Антонова, З.С. Чӑваш сӑмахлӑхӗн вӗрентӳ меслечӗсем : чӑваш шкулӗн 5-11–мӗш класӗсенче вӗрентекенсем валли / З. Антонова, В Станьял. – Шупашкар : Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2006. – 399 с.

Спиридон Михайлов-Янтуш: «Миллион чӑвашпа çармӑсран эп Раççейри пӗрремӗш çыравçӑ...» // Хыпар кӗнеки. – 1996. – Раштав, 14. – 20 №.

Спиридон Михайлов-Янтуш тата чӑваш сӑмахлӑхӗ // Хыпар. – 2001. – Раштав, 25.

Чӑваш сӑмахлӑхӗ : 10-мӗш класӑн вӗренӳпе вулав кӗнеки. 1 пай / Н.Г. Ивановӑпа В.П. Никитин пухса хатӗрленӗ. – Шупашкар : Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1993. – 311 с.

Федорова, Е. В. Истоки и формирования жанров чувашской литературы XVIII-XIX вв. / Е.В. Федорова. – Чебоксары : Чувашский государственный институт гуманитарных наук, 2006. – 144 с.

Ерагин, Е.Е. Юнкӑпоç тата Спиридон Янтуш / Е.Е. Ерагин. – Шупашкар : Çӗнӗ вӑхӑт, 2006. – 144 с.

## НАЦИ ÇЫРУЛĂХĔПЕ ЛИТЕРАТУРИ АТАЛАННИ.
### (XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурри)

***1864-1870 çулсенчи реформăсем. Халăха вĕрентес ĕç. Н.И. Золотницкий ĕçĕ-хĕлĕ. Чĕмпĕр чăваш шкулĕн чăваш çырулла культурин аталанас ĕçри вырăнĕ. Наци çырулăхĕн сăпки умĕнче тăнă çынсем.***

XIX ĕмĕрĕн 50-60çç. чăваш обществин ăс-тăнĕ наци çутлăхĕн анлă çулĕ çине тухать. 1861 çулхи нарăсăн 19-мĕшĕнче Иккĕмĕш Кĕтерне патша крепостла йĕркене пăрахăçлани çинчен манифест кăларать. Раççей буржуалла монархи çулĕ çине тăрать. Çĕршывра капитализм аталанма тытăнать. Анчах реформа хыççăн та хресченсен пурнăçĕ çăмăлланмасть. Мĕншĕн тесен лайăх çĕрсем çĕр хуçисен аллинче юлаççĕ. Хресченсен хăйсен çĕрне укçа тӳлесе илмелле пулса тăхать. Чылайăшĕ вĕсенчен çĕрне тӳлесе илме те, акса тума та вăй çитерейместь.

Реформа чăваш хресченне хытă пырса тивнĕ. Вĕсене малтанхи çĕрĕн 42% çеç уйăрса панă. Лашасăр хресченсем, хуласене туха-туха кайнă, пролетарисем пулса тăнă.

Капитализм аталаннăçемĕн Раççейре революциллĕ демократиллĕ вăй та вăй илсе пырать. Правительство революциллĕ юхăма путарма тăрăшать. 1864 çулта патша правительстви, вырăнсенчи самоуправлени, судпа цензура енĕпе реформăсем туса irttepet. Вырăнти хуçалăх, культурăпа çутĕç ыйтăвĕсене çавăнтах татса пама кăштах ирĕклĕх параççĕ.

Крепостла правăна пăрахăçланă хыççăн капитализм тытăмĕ вĕреннĕ çынсем, тĕрлĕ йышши рабочисемпе ăстасем ытларах хатĕрлеме ыйтать. Хут вĕреннин уссине хресчен те ăнланса илет. Çĕршывра пуçламăш шкулсемпе земство (вырсарни) шкулĕсем уçăлма тытăнаççĕ.

1864 çулта правительство пуçламăш халăх училищисем, 1870 çулта халăх училищисем çинчен

положени йышăнать. 1864-мĕш çулхи положени тăрăх учреждениесемпе уйрăм çынсене хут вĕрентме шкулсем уçма ирĕк параççĕ. Вырăс мар халăх ачисене те пуçламăш шкулсенче тăван чĕлхепе вĕрентме ирĕк параççĕ. Çав шкулсенче, паллă ĕнтĕ, пур предмета та вырăсла вĕрентнĕ. Çавна пулах чăвашсем хăйсен ачисене унта вĕренме ярасшăнах мар. Шкулсенче тăван чĕлхепе вĕренме ирĕк пани вĕренӳ кĕнекисем çырса хатĕрлеме, историпе этнографи, чĕлхепе фольклор тĕпчевĕсем тума хистет.

Кунта çак фактпа çыхăннă пĕр уйрăмлăха асăнса хăвармалла. Чăваш çутлăхĕнчи пулăмсем Атăл çинчи ытти халăхсеннинчен яланах кăштах та пулсан маларах пулса иртнĕ (чăваш чĕлхин грамматикине ыттисеннинчен маларах çыраççĕ, XIX ĕмĕрти чăвашла куçарусем ăнăçлăрах пулса тухаççĕ, чăвашран С. Михайлов (Янтушпа) И.Я. Яковлев 50-60-мĕш çулсенче çĕкленме пултараççĕ т. ыт. те.). Чăваша православи тĕнĕнчи вырăс мар халăхсен хушшинче малта пыма Турă хăй хушнă теме пулать (чăвашла Библи 1917 çултах пичетленсе тухма хатĕр пулнă!).

1867 çулта Раççейре пĕрремĕш хут вырăс мар халăхсен шкулĕн инспекторĕн должноçне çирĕплетеççĕ. Ку вырăна Н.И. Золтницкий йышăнать. Шкулсенче вĕренӳ мелĕсене лайăхлатма чăваш шкулĕсен пĕрремĕш инспекторĕ Н.И. Золотницкий тата уесри инспектор Магницкий чылай вăй хураççĕ.

Н.И. Золотницкий Чăваш Республикинчи Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Урхас Кушкă ялĕнче çуралса ӳснĕ. Вĕренсе тухса тăван ялне таврăнсанах ĕнерхи журналист–филолог чăваш ачисене вĕрентмелли кĕнеке кăларма тĕв тăвать. 1866 çулта «Чăваш календарĕ», тепĕр çултан «Чăваш кĕнеки» пичетлесе кăларать. Вăл чăваш ачисене чăвашла вĕрентнĕ. Чăваш кĕнекисем кăларма сĕннĕ. Çав çулах чăвашла кĕлĕ сăмахĕсем те кун çути кураççĕ. Çапах та Н. Золтницкин çутлăх ĕçне И.Я. Яковлев пекех анлăлатса яма май пулмасть. И. Я. Яковлев çутлăх ĕçне пĕтĕм чунне, вăйне, вăхăтне парса тăрăшнă пулсан, Н.И. Золотницкий пачах урăх çулпа

каять: вăл ăслăлăхра пысăк ҫитĕнӳсем тунă вăхăтрах миссионер ĕҫĕсене туса пыма хăтланать (юлашки ҫулсенче вăл Сăваплă Гурий тăванлăхĕн секретарĕнче тата миссионерсен приютĕнче вăй хуни паллă). Ҫав хушăрах ҫак ҫутлăхҫă шкул ĕҫĕнчен пăраннăҫем пăранса пырать.

Н.И. Золотницкий ĕҫĕ-хĕлĕ чăваш ҫутлăхне аталанма пулăшни иккĕленӳсĕр. Унăн пултарулăхне икке уйăрса пăхни вырăнлă: чăваш шкулĕсен инспекторĕнче ĕҫленĕ вăхăт (1867–1872) тата ун хыҫҫăнхи тапхăр (1873–1880).

Малтанхи тапхăрта Урхас Кушкă вырăсĕ Шкулсенче чăвашла вĕренмелли кĕнекесем кăларас тĕллевпе ҫунса ҫӳрет, ачасене тăван чĕлхепе вĕрентес шухăша ҫине тăрсах хӳтĕлет. 1866 ҫулта вăл «Ҫулталăк кĕнеки», 1867-мĕш ҫулта вара «Чăваш кĕнеки» ятлă вулав кĕнекисем пичетлесе кăларать. 1867–1870 ҫулсенче унăн «Турра кĕлĕ кĕлемелли сăмахсем» куҫарăвĕн икĕ кăларăмĕ пысăк тиражпа пичетленсе тухать. Чăваш кĕнекисем кăларас ĕҫре Н. Золтницкин вĕренекенĕсем те пулнă. Вĕсем Василий Якимович Якимов Шупашкар районĕнчи Апаш ялĕнче ҫуралса ӳснĕскр, Владислав Николаевич Ислентев тата Иван Петрович Оточев Муркаш районĕнчи Очăкасси ялĕн чăвашĕ.

В.Я.Якимов 1870 ҫулта чăваш азбукине ҫĕнĕрен йĕркелесе Сăваплă Гурий тăванлăхĕн канашне сӳтсе явма тăратать. Авторăн пĕлĕвĕ пысăках пулманнипе ҫав алҫыру ăнăҫлах пулса тухман. Ҫапах та унăн туртăмне, Н.И. Золотницкий йĕркеленĕ ҫырулăха лайăхлатас тата ҫĕнетес тенине ырламалла.

В. Якимов куҫарусăр пуҫне илемлĕ ӳкерчĕксемпе те кăсăкланнă, вĕсене, аял енне чăвашла ҫырнăскерсене, тĕрлĕ пасарта сутса ҫӳренĕ. Чăваш шухăшлавĕн хăй евĕрлĕхĕ куҫару ĕҫĕсенче чылаях палăрнă. В. Якимовран пуҫласа чăваш литературинче «сăваплă пурнăҫ» жанрĕ вăй илет, ăна Г. Филиппов малалла аталантарать. Тĕрĕссипе, Игн. Ивановпа И. Юркин ҫырнисем те ҫак тĕслĕхлĕ тата танлаштаруллă шухăшлавпа хайланăскерсемех. Вĕсем пурнăҫ сăваплă кăна мар, сăвапсăр та пулма пултарнине кăтартса литературăри

жанр ҫӳпҫине калавсемпе тата повеҫсемпе пуянлатма пултарнӑ.

В.Н. Ислентев 1877 ҫулта Хусанта «Словесные письменные упражнения в русском языке для учеников приготовительных классов гимназий и прогимназий и низших классов других учебных заведений» ятлӑ кӗнеке кӑларнӑ. 1880 ҫулта унӑн «Письмо-чтение. Руководство для учящих», 1881 ҫулта «Опыт методического руководства к преподавлению арифметики в народных школах», 1882 ҫулта «Первая учебная книжка для совместного обучения чуваш и русских» ятлӑ кӗнекисем тухаҫҫӗ.

И. П. Оточев чӑваш ҫыруллӑ сӑмахлӑхӗнче палӑрмалла йӗр хӑварать. Кунта вӑл пуҫласа ҫыру жанрне аталантарса ярать. Енчен те ҫак жанр маларах вырӑсла кӑна аталаннӑ пулсан, И. Оточевпа унӑн вӗренекенӗсем ҫырусене чӑвашла ҫырма пуҫлаҫҫӗ. Паллах ҫак жанр синкретикӑлла очерксене тата йӑла калавӗсене ҫывӑх. Вӗсенче пуринче те тӗпре автор калавӗ тӑрать. Калуҫӑ (ҫырура яланах калавҫӑ) вӑл е ку ӗҫ-пуҫ (йӑла, пӗр-пӗр япала) пирки вулавҫа каласа парать. Ҫав калавӑн хӑйӗн ҫирӗпленсе ҫитнӗ пуҫламӑшӗ тата вӗҫӗ пур.

Магницкий те чӑваш ҫыруллӑ культурине, литературине тӳрремӗнех хутшӑнса ӗҫлемен. Ҫапах та чӑваш интелигенчӗсен йышӗ хушӑнса пынӑшӑн хӗпӗртенӗ. Историпе этнографи халӑха вӗрентес ӗҫпе ҫыхӑннӑ 200 ытла ӗҫ пичетлесе кӑларнӑ. Унӑн паллӑрах ӗҫӗсем ҫаксем: «Заметки о Пугачевском бунте», «Дополнительные сведения о С. Михайлове» 1869 ҫулта «Казанские губернские вести» хаҫатра «Рассказы о Акрамовском картофельном бунте чуваш» т. ыт. те.

Самана хистенипе чӑвашра та мал ӗмӗтлӗ ҫынсем ӳссе ҫитӗнеҫҫӗ. Вырӑнти интелигенци тӑван халӑх чухӑнра пурӑннине курса тӑнӑ. Ҫакӑн сӑлтавне ӑнланмасӑр ӗҫ ҫыннисен йывӑр пурнӑҫӗ йӑлтах вӗсен тӗттӗмлӗхӗнчен килнӗ тесе шутланӑ. Ҫавӑнпа та халӑха ҫутта кӑларасине, унӑн ӑнланулӑхне ӳстерессине тӗп вырӑна хунӑ.

Чăвашра пуçланă çутлăх юхăмĕн çак туртăмĕсем 1870 çулсенче уйрăмах лайăх палăрса çитеççĕ. Ку вăхăтра ĕнтĕ çутавçăсем чăвашсене çутта кăлармалли программа туса хатĕрлеççĕ. Çак программа ачасене воспитани парас ĕçре халăх педагогикин принципĕсене, çырулăхпа литературăна халăх поэзине литература чĕлхинче халăхăн калаçу чĕлхипе усă курмалла. Халăха çутта кăларас туртăм пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Вăл халăха кĕрешĕве чĕнме май панă. Анчах та ăна пурнăçа кĕртме май пулман. Раççейре вăл вăхăтра нацисен кирек мĕнле палăрăмне те путарса пынă. Вак халăхсене ăс-тăн енчен катăк тесе шутланă. Çакăн пек условисенче чăваш хушшинче культурăна аталантарма питех те хĕн пулнă. Ку ĕçе ирĕксĕрех тĕнпе çыхăнтарма тивнĕ. Чăваш литератури те малтан тĕн кĕнекисене чăвашла куçарнипе аталанса пыни пирки эпир маларах каланăччĕ ĕнтĕ. Пурăна киле чăваш литератури тĕнпе чиркӳ пуç пулса тăнинчен хăтăлса пырать, хăйĕн уйрăм çулĕпе утма пуçлать. Пурăна киле тĕн кĕнекисем кăна мар ăслăлăх кĕнекисемпе илемлĕ литература хайлавĕсем те тухма тытăнаççĕ. Куçаруçăсем Л.Н. Толстой кĕнекисене чăвашла куçараççĕ. Литература ĕçне Игн. Иванов, М. Федоров, Н. Охотников хутшăнаççĕ. Вĕсем вырăс литературинчен вĕренсе тата чăваш чĕлхине юратса калав, очерк, сăвă, поэма çыраççĕ. Чăваш литературин аталану çулĕпе малалла яраççĕ. Çак ĕçсен пуçĕнче вара И.Я. Яковлев тăнă.

И.Я. Яковлев хăй 20 çулта чухне Чĕмпĕрте чăваш ачисем валли ятран шкул уçать. Пуçламăш шкулсем валли чăваш учителĕсем хатĕрлеме тытăнать. Чĕмпĕр шкулĕ чăваш халăх академийĕ вырăнне йышăннă. Унта чăваш искусствин мĕн пур тĕсĕсем: театр, музыка, оркестр, ӳнер, опера тата ыттисем те тымарланса тухнă. Чĕмпĕр шкулĕнчен чăваш çĕрне çутлăх шухăшĕсем сарăлнă. Çĕнĕ çырулăх йĕркелес ĕçре И.Я. Яковлев пĕлтерĕшĕ пысăк пулнă. Ку тапхăрта тăван халăх историкĕсем, наци интелигенчĕсем, култура ĕçченĕсем ушкăнăн-ушкăнăн пухăнса ĕçлеме тытăнаççĕ. Вĕсенчен И.Я. Яковлев тантăшĕсем Игн. Ивновпа М. Федоров

хайлавсем ҫырнипе чапа тухаҫҫӗ. Яковлев ҫуначӗ айӗнчен Чӗмпӗр шкулӗнчен тухнӑ ҫыравҫӑсен хушшинче XIX ӗмӗр вӗҫнелле И. Юркин, Г. Тимофеев, Д. Филимонов, Д. Архипов ячӗсем палӑрнӑ. Каярахпа чӑваш илемлӗ литературине классикӑлла тепӗр ушкӑн пырса кӗреҫҫӗ: К. Иванов, Ф. Павлов, К. Тал-Мӑрса, Трубина Мархви, И. Кошкинский т.ыт.те.

И.Я. Яковлев илемлӗ литературӑна халӑх кӑмӑл-сипетне юсас ӗҫе пӑхӑнтарнӑ. Унӑн шучӗпе, литературӑн тӗп тӗллевӗ – кӑмӑл-сипете тӗвӗҫлӗ шайра тытасси, ҫынна усал ӗҫ тӑвассинчен упрасси. Кунта литература пӗлтерӗшӗ тӗн функцийӗпе пӗр килсе тухать.

Тӗн литературине Н.И. Золотницкипе пӗрле унӑн вӗренекенӗсем те кӑларнӑ (М. Дмитриевпа Г.Филипповӑн ӳкӗчӗсемпе сӑвапла пурнӑҫ ҫырӑвӗсем). И.Я. Яковлев та ҫав ӗҫе ӑмӑртса пуҫӑнать. Малтан вӑл В. Васильев тӗслӗхӗпе (лешӗ Тутарларан куҫарнӑ 1871 ҫулта «Христос вилӗмрен чӗрӗлсе тӑнӑ» кӗнеке кӑларать) тутарларан куҫарать, ку ӗҫе Игн. Ивановапа А. Рекеева тата ытти вӗренекенӗсене хутшӑнтарать. Ҫапла майпа 1872 ҫулта «Чӑн тӗн кӗнеки» пичетлесе кӑлараҫҫӗ.

1873 ҫулта Яковлев «Матвей ҫырнӑ Евангели», «Мӑн кун кӗллисем» кӗнекесем кӑларать. «Чӑн тӗн кӗнекине» тепӗр хут пичетлет.

1877 ҫулта Чӗмпӗр шкулӗ чӑвашсен тӗп шкулӗ пулса тӑрать, унта вӗрентекенсене хатӗрлеме пуҫлаҫҫӗ. Ҫавӑн чухне И.Я. Яковлев хатӗрленӗ кӗнекесемпе мӗнпур чӑваш шкулӗнче вӗрентме йышӑнаҫҫӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн Яковлев тӑрӑшнипе чӑваш шкулӗсенче чӑвашла вӗренмелли букварьсемпе вулав кӗнекисем пӗрин хыҫҫӑн тепри кун ҫути курма пуҫлаҫҫӗ. Ҫак кӗнекесенчи текстсене вырӑсларан куҫарса, чӑвашла ҫырса йӗркеленӗ, вӗсене пурне те И.Я. Яковлев тӗллевне пӑхӑнса хайланӑ: вӗсем пурте кӑмӑл-сипет тӗлӗшӗнчен ҫирӗп пулма вӗрентнӗ. Ҫав шухӑша прозӑра уҫҫӑнрах калама май килнӗ, сӑвӑ ҫемӗ-эрешӗ куҫаруҫӑсемшӗн ытлашши япала пек туйӑннӑ.

Ҫапла вара XIX ӗмӗр вӗҫӗнче чӑваш илемлӗ литератури паянхи сӑн-сӑпатне илет, ура ҫине ҫирӗп тӑрать. Литературӑн чылай жанрӗ аталанса вӑй илет,

чылайӗшӗ илемлӗх тӗлӗшӗнчен ҫӳллӗ шая ҫӗкленме пултараҫҫӗ. Ҫак вӑхӑтрах чӑваш илемлӗ литературине тӗнче шайне ҫӗклеме мехел ҫитерекен сӑмах ӑстисем ҫӗр ҫине килеҫҫӗ, вӗсем Яковлев уҫнӑ, ертсе пынӑ ҫырулӑх културин анинче тӗрек илсе тӑван литературӑна ӗмӗрлӗх йӗр хӑварма пултараҫҫӗ.


*Усӑ курнӑ литература*

Родионов, В.Г. Чӑваш литератури. XVIII-XX ӗмӗрсем : вӗренӳ пособийӗ /В.Г. Родионов. – Шупашкар :Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2006. – 463 с.

Федорова, Е. В. Истоки и формирования жанров чувашской литературы XVIII-XIX вв. / Е.В. Федорова. – Чебоксары : Чувашский государственный институт гуманитарных наук, 2006. – 144 с.

Александров, Г. Чӑвашран тухнӑ пӗрремӗш пуп / Г. Александров // Хыпар. – 2003. – Авӑн, 23.

Родионов, В.Г. И.Я. Яковлев ӗҫӗ-хӗлӗ тата чӑваш халӑхӗн XIX ӗмӗрти ӑнӗ / В.Г. Родионов // Тӑван Атӑл. – 1998. – 2 №. – С. 5.

Родионов, В.Г. «Кушлавӑш текен вуникӗ ял уйӗ...» / В.Г. Родионов // Хыпар. – 1998. – Нарӑс, 10.

Ырӑ ячӗ – халӑх асӗнче. В.К. Магницкий ҫуралнӑранпа 150 ҫул ҫитрӗ // Коммунизм ялавӗ. – 1989. – Март, 15.


# МИХАИЛ ФЕДОРОВ ҪЫРАВҪӐН НУМАЙ ЕНЛӖ ПУЛТАРУЛӐХӖ

***Ҫыравҫӑ кун-ҫулӗнчен. «Чиртен сыватни» очеркӗ, «Авалхи этемсем», «Улӑп тӗмисем», «Хурапха ялӗ» хайлавсенчи историтеми.«Арҫури» жанрне тӗрлӗ вӑхӑтра тӗрлӗрен палӑртни.Хайлаври чӑнлӑх тата мифологи сийӗсем. Поэмӑ тутар поэчӗн Г. Тукайӑн «Шурале» юмах-поэми тата чӑваш ҫыравҫин Ф. Павловӑн «Йӑсӑрка» сӑввинчи пӗрпеклӗхсемпе уйрӑмлӑхсем.***

Хӗветӗр Михали 1848 сулхи чӳк уйӑхӗн 17(29)-мӗшӗнче Хусан кӗпернинчи Шупашкар уесӗнчи (халӗ Чӑваш республикин Сӗнтӗрвӑрри районе кӗрет) Хурапха ялӗнче ҫуралнӑ. 1864 ҫулта унӑн, вун улттӑри ҫамрӑкӑн, хӑйӗн шӑллӗ вырӑнне шкула кайма тивнӗ. Хӑйӗн ӑсӗпе

пултарулăхне вăл уйрăмах В.Ислентьев вĕрентнĕ çулсече (1866 - 1869) кăтартать. Çав тапхăрта ялсенчи шкул пĕлтерĕшĕ палăрмаллах ӳсет. Чăваш чĕлхин функцийĕ чылаях сарăлать. В.Ислентьев чи малтан хăйĕн пултаруллă вĕренекенĕсене (П.Васильевпа М.Федорова) явăçтарать. Çакă Хурапха каччин сăнарлă шухăшлавне чылай аталантарма тата пуянлатма пулăшнă.

Çапла вара, М.Федоровăн пулас кун-çулне йĕркелекенĕ вăхăт хăй пулнă. Ахальтен мар вăл Шĕнерпуçĕнчи пуçламăш шкул хыççăн Самарти учительсен семинарийĕнче ăс пухать, ял шкулĕсен вĕрентекенĕ пулма ĕмĕтленет.

Семинари хыççăн Шĕнерпуçĕнчи икĕ сыпăклă училищĕре ĕçлеме пуçлать. Кунта чăваш тата вырăс ачисем хутăш вĕреннĕ. Çакă çамрăк учитĕле вĕрентӳ меслетне Яковлевăннинчен урăхларах йĕркелеме хистет. В.Ислентьевăн ăсталăхне ăша хывса вăл Ушинскин кĕнекинчи текстсене икĕ чĕлхепе вĕрентет.

1878 çулхи кăрлач уйăхĕнчен пуçласа М.Фёдоров Хусанти учительсен институтĕнче ирĕклĕн вĕренекен (вольнослушатель) пулса ăс пухать, тепĕр çултан хула шкулĕсенче ĕçлеме ирĕк паракан хута тивĕçет. Шупашкарти икĕ сыпăклă шкулăн пуçлăхĕнче ĕçлес ĕмĕтне ун чухнехи хура вăйсем пурнăçлама памаççĕ ăна.

Хурапха чăвашĕ Шупашкар хула училищиче ĕçлеме пуçланă вăхăтра çав уесри училищĕсен инспекторĕнче В.Казаринов текенскерларнă. Çав шовинист – инспектор И. Я. Яковлевăн вĕрентӳ систминчен кулнă, чăваш учителĕсене хĕсĕрленĕ, учительсен съезчĕсене чăваш шкулĕсен инспекторĕнчен вăрттăн ирттерме хăтланнă. 1883 çулти утă уйăхĕнче Шĕнерпуçĕнче ирттернĕ Шупашкар уесĕнчи учительсен съездĕнче В. А. Казаринов чăваш чĕлхине 2 – 4 классенче вĕрентессине хирĕç пулать, И. Я. Яковлевăн вĕрентӳ системине йышăнманнине кăтартать.

1880 – 1885 çулсем чăваш сăвăçишĕн чăннипех йывăр пулаççĕ: ăна ĕçре çул уçăлса пыманни, пĕчĕк

пуçлăхсем ура лартма тăрăшни чăрманарнă; çав çулсенче çуралнă икĕ ачи вăхăтсăр çĕре кĕрет.

Н. И. Ильминский тата И. А. Износков тăрăшнипе 1886 çулта инспектор ĕçĕнчен пăраççĕ, ун вырăнне чăвашсене юратакан В. К. Магницкие йышăнма пулăшаççĕ.

1891 çулта М. Фёдорова Чар чулине (Царевококшайск, халĕ Йошкар - Ола) куçараççĕ, унти икĕ сыпăклă училищĕ пуçлăхне лартаççĕ. Кунта вăл мĕн çĕре кĕричченех ĕçлесе пурăнать.

М. Ф. Фёдоров çырнисенчен эпир хальлĕхе «Арçури» поэмăпа «Предания чуваш Бичуринского прихода Чебоксарского уезда и способы лечения у них болезней» (Известия по Казанской епархии. 1876) очерка кăна пĕлеттĕмĕр. Юлашки çулсенче унăн ытти хăш – пĕр хайлавĕ те тупăнчĕ.

«Чиртен сыватни» очерк. Унта автор хăйĕнпе пулса иртнĕ ĕç-пуçа çырса кăтартнă. Çак хайлавра писатель ĕлĕкхи вăхăтра ача-пăча ирĕксĕрех тĕн-тĕшмĕшпе тертленме тивнине ӳкерсе парать. Çавăнпа пĕрлех эпир кунта пĕчĕккисем авалхи тĕттĕм йăла-йĕрке çинее урăхларах куçпа пăхнине те ăна питех уяманнине те куратпăр.

Чăваш ача-пăча литературин малтанхи тапхăрĕшĕн çак хайлав пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни аван курăнать. Çыравçă ку очеркпа тĕшмĕшлĕхе сивлет, çутçанталăк çине чăнлăх куçĕпе пăхмаллине калать.

«Авалхи çынсем» (Старинные люди). Ку халапра çырнă тăрăх чăвашсен мăн аслашшĕсем сĕм авал питĕ çӳллĕ те вăйлă çынсем пулнă. Турă çак çынсене пĕчĕккисемпе ылмаштарма шутланă. Пысăк çынсенчен пĕри Улăп ятлă пулнă. Пĕррехинче Улăп хирте уçăлса çӳренĕ май пĕчĕк çынна тĕл пулать. Лешĕ хирте лашипе суха тунă пулнă. Улăп çак пĕчĕк çынна кĕсйине чикнĕ те кайнă. Килне çитсен хăй амăшне улатакка илсе килни çинчен пĕлтернĕ. Лашапа суха пуçлă çынна кĕсйинчен кăларса амăшне кăтартнă. Амăшĕ ачине

ăнлантарнă. Улăпсем вилсен çĕр çинче çак пĕчĕк сынсем пурăнаççĕ. Вĕсене пĕтерни çылăх пулать. Вара вăл ывăлне, çав пĕчĕк çынна ăçтан илсе килнĕ çавăнта кайса яма сĕннĕ.

«Улăп тăпри». Автор пирĕн мăн асаттесем авал тăшманпа çапăçнă май çĕр купаласа пысăк тĕмесем тунине палăртать. Вĕсене чăвашсем улăп тăприсем теççĕ. Хăш-пĕр çĕрте вĕсене улăпсем суха тунă чухне çăпати ĕшне кĕнĕ тăпрана силлесе пăрахнипе пулса кайнă тесе те калаççĕ.

Кунта автор Улăп çинчен калакан халапа историллĕ фактсемпе сыпăнтарать. Чăнах та пăлхар патшалăхĕ, Хусан ханлăхĕн тапхăрĕнче чăвашсем тăшманран хӳтĕленме тăпраран купаласа укрепленисем тунă пулнă.

«Арçури» атрибуцийĕпе жанр ыйтăвĕсем. Атрибуци тесе текст авторне тата хайлава çырнă вăхăтпа вырăна палăртнине калаççĕ. Çак ĕç тĕпчевçе хайлава тĕрĕс хак пама, ăна культурăпа истори контестне лартса пăхма кирлĕ. «Арçурири» автор ăнĕ (художественное сознание) чăвашăн 19 ĕмĕрĕн 80 – мĕш çулĕсенчи общество ăнĕпе пĕр килме тивĕç: хайлава çав çулсенче çырнă.

Хайлавăн культура контексчĕ те ăна çырнă вăхăтри литература шайĕнчен тухса тăрать. Литературăн активлă тата пассивлă фончĕсем пур; çавăнпа та хăш хайлав хăш фондра пуласси пĕтĕмпех вăхăт ыйтăвĕнчен килет.

«Арçури» атрибуцийĕн ыйтăвĕсене чи малтан Д. Филимонов хускатнă. Хайлавăн жанрне палăртса Д. Филимонов ăна поэма тенĕ. И. Никитинпа Г. Комиссаров та «Арçурие» çак жанрпа çырнă тесе шутланă. 20 – мĕш ĕмĕрĕн 30 – мĕш çулĕсенчен пуçласа хайлава баллада жанрĕпе çырнă тесе калама пуçлаççĕ, тĕпре реализм тăнине вара ку таранччен никам та хирĕçлеменччĕ – ха.

Чăваш тĕлĕнтермĕш халапĕсем яланах виçĕ пайран тăраççĕ: тĕлĕнтермĕш пулăмпа (мифсенчи сăнарпа) тĕл пуличченхи тапхăр, тĕлпулу, тĕлпулу хыççăнхи тапхăр. Çак жанр тексчĕсенче чи малти вырăнта юмахри пек геройсене сăнласси мар, тĕлĕнтермĕш пулăмсемпе асăмлă

сăнарсене кăтартасси тăрать. Ку тĕлĕшрен вăл юмахран та, новеллăран та уйрăларах тăрать.

«Арçури» хайлавра тĕпре мифологири персонажа кăтартасси мар, Хĕветĕр йышши «тухман çынна» сăнласси тăрать. «Тухман çын тухсан тăман тухать» текен эпиграфра çул мотивĕнчен ытларах чухăн, ăнман е телейсĕр çын мотивĕ сисĕнет. Хайлаври автор ăнĕ харкамлăха мар, ушкăнлăха кăмăллани, унăн енне туртăнни сисĕнет. Харкамçăсен тема содержанине уçса парас пĕлтерĕшĕ те пĕрешкелех кунта: пурте вĕсем «хуйхă» лейтмотива аталантарса уçса пама тăрăшаççĕ.

«Арçурире» мифопоэтикăлла шухăшлавпа реализм ўкерчĕкĕсем ылмашăнаççĕ, авторăн стильне йĕркелеме пулăшаççĕ. Пулни-иртни, тĕлĕнтермĕш ĕç-пуç çинчен каланă ырăнсенче юмах-халап стилĕ, монологсемпе шухăша путнă ырăнсенче халăх лирикин стилĕ вăйлăн палăрать.

Çапла вара, «Арçурире» калуллă проза паллисем те, лирика енĕсем те вăйлăн палăраççĕ.

**«Арçури» композицийĕпе стилĕ.** Композици. «Арçури» хайлавра хире – хирĕçле икĕ тĕнче пур: çынсен тĕнчи - ялта пурăнаççĕ тата усал – тĕсел тĕнчи – вăрманта. Çав икĕ тĕнчен чикки чылай чухне шыв (çырма) пулса тăрать. Ахальтен мар ĕнтĕ арçури арманран малалла иртейместь, Хĕветĕртен арман айне кĕрсе юлать.

**«Арçурири» ырăнпа çын ячĕсем**. Ăслăлăхра поэзилле ономастика (поэтическая ономастика) текен уйрăм тĕпчев пайĕ пур. Унăн тĕллевĕ – илемлĕ текстри ырăнпа çын ячĕсене пăхса тухасси, вĕсен конкретлă функцийĕсене палăртасси.

«Арçури» хайлаври çынсен ячĕсене чи малтан С. Горский пăхса тухнă. Вăл текстри ятсене икĕ ушкăна уйăрса пăхма май пуррине тĕрĕс асăрханă. Пĕрремĕш ушкăнне ялти ятлă та çулпа аслăрах çынсене тараватлăн чĕннисем кĕреççĕ: Лавраç пичче, Якур пичче. Иккĕмĕшĕнче чухăнрах е ютăрах çынсен ячĕсем тăраççĕ: Хĕветĕр, Энтри старик, Кирилесем, Карчăк Микули, Праскавпа Петĕр.

В.К. Магницкий патне янӑ ҫырӑвӗнче «Арҫури» авторӗ «Хӗветӗр Михали» тесе алӑ пусни тӗл пулать. Поэт пуҫӗнче Хӗветӗр ят хӑйне евӗрлӗ ассоциаци, аса илӳ ҫуратма пултарнӑ. Ҫапах та ҫак ӑнлантару ҫиелте выртакан фактсем ҫине кӑна тайӑнать темелле.

Хӗветӗрпе ытти чӑваш хресченӗсен ячӗ-шывӗпе темле ҫыхӑну пурах пек хайлавра. Ку кӑна та мар-ха. Ҫак тӗп ят «Хура вӑрман – ял йышӗ (хура халӑх)» оппозицие ӑнлантарнӑ чухне те вӑрттӑнлӑха уҫакан уҫӑ пулма пултарать.

Халӑх лирикинче тӗл пулакан ҫын ячӗсен функцине лайӑхрах ӑнланма пӗр ташӑ такмакне илсе пӑхар:

*Ма карӑм-ши Макара,*
*Каймаллаччӗ Сахара.*
*Сахар арӑмь пулнӑ пулсан*
*Сиктеретчӗ сӑпкара.*

Пӗр енчен пӑхсан, ҫын ячӗсене сасӑ янӑравӗшӗн кӑна суйласа илнӗн туйӑнать: МА КАРӑм-ши МАКАРа. Иккӗмӗш йӗркере мӗншӗн шӑпах САХАР кирлӗ пулнӑ-ха? Тимлӗрех пӑхсан, тӗслӗхри ятсен тарӑн выртакан семантики пурри палӑрать. Макар ятпа «макӑр» глагол, Сахар ятпа «сахӑр» япала ячӗ пӗрешкел илтӗнеҫҫӗ, оппозицире хире-хирӗҫле ассоциацисем ҫуратаҫҫӗ.

Ял ҫыннисен ячӗсене пӑхса тухар:

*КАРчӑк Микули КАймАРӗ*. Кунта «карчӑк» сӑмаха автор йӗрке варринче аллитерацилесе КАР сасӑ ретне пусса палӑртать, ХУРА символа сӑмахпа пӗрпеклетет.

*КИРилесем КИлте ҫук*. Аллитераципе палӑракан сӑмахсем каллех ХУРа (к-па х сасӑсем питех те ҫывӑх) семемӑпа (пӗлтерӗшлӗ сасӑсен пӗрлӗхӗпе) ассоциациленеҫҫӗ.

*ЛавРАҫ пичче лава кайнӑ*. Кунти аллитераци тӗревлӗ сасӑсене тума пулӑшмасть пулсассӑн та ятра унӑн икӗ сасси каллех тӗл пулать: хуРА.

Ҫак ҫынсем пурте – Хӗветӗрӗн тепӗр тӗнчене (хура вӑрмана) кайма пултарнӑ ял-йышӗ. Тӗп героя ҫывӑхраххи вӑл – Карчӑк Микули. Ахальтен мар ӗнтӗ Хӗветӗр ун патне чи малтан ҫитет, унӑн хуйхи-суйхи ҫинчен тӗплӗн

çырса кăтартать. Ассоциаци тăвакан сасăсем те кунта çиелтерех выртаççĕ. «Лавраç пичче», «Палюк пичче» тенисенче вара «хура» символлa схемăпа ассоциаци çуралмасть.

Çапла вара, «ХУйхă», «ХУРлăх» ăнлавсем «ХУРА вăрман», «ХУРА халăх» текен икĕ тĕнче символĕсемпе ассоциациленеççĕ, çав рете ял чухăнĕсен ячĕсене те аллитерациленсе лараççĕ. Кунтах «АРçУРи» ята та кĕртмелле.

Танлаштару ретне «ХăРăк тУРат» сăмах çаврăнăшĕ те сасă янăравĕпе пĕрпекленсе уçăмлатать. Хĕветĕр вăрмана хăрăк турат пуçтарма кайни паллă ĕнтĕ. Каярахпа çак сасă контурăллă семемăпа метафорăна куçса çĕнĕ ассоциаци речĕ тăвать. Тăлăх турат вăл хурлăхпа хуйхăн тепĕр тĕсĕ, хура халăхăн пĕр пайĕ. Хура вăрманăн пайĕ – хăрăк турат. Пĕри (тăлăх турачĕ) ял тĕнчинче, тепри (хăрăк турачĕ) çут çанталăк тĕнчинче вырнаçнă. Вĕсем çак икĕ тĕнче пĕрешкеллĕхне сасă янăравĕн шайĕнче те, сăнарлă танлаштарура та (хăрса ларнă турат – ашшĕ-амăшĕсĕр юлнă тăлăх) туллин палăртаççĕ.

Энтри ят «хура» символлa сăмахран ытларах ХĕвЕТĔР ятпа пĕрпекленет. Çакă вара хăрăк туратлă вăрманта арçури, Хĕветĕр тĕнчинче Энтри пулнине кăтартать. Вăрманта çӳрекен Хĕветĕрĕн (тахçан çав çулпа Энтри старик те çӳренĕ) арçури пулас хăрушлăх пур. Энтĕри ятпа çил-тăмана палăртнă чухне те усă кураççĕ: «Анаталла та Энтĕри, тăвалла та Энтĕри (вăл та пулин çуранлă тăман)». «Тухман çын (Хĕветĕр) тухсан тăман (Энтĕри чунĕ, Арçури) тухать» тенинче каллех икĕ тĕнче тытăмĕ палăрать иккен.

Хайлаври ***вырăн ячĕсем***. Тĕпчевçĕсем унти топонимсем М.Федоровăн тăван енĕнчи вырăн ячĕсене çывăх пулнине тахçанах асăрханă. Вĕсенчен хăшĕ-пĕри Хĕветĕр ç улĕ Хурапхаран Хусан дачисен (Карапаш вăрманĕ) еннелле пулнă тесе шутланă.

Мĕнпур топоним («Урхас Кушкă» тенисĕр пуçне) Хурапхаран çурçĕр-тухăç еннелле вырнаçнă. Çакна вăрманалла каякан герой хĕвел тухăç хĕрелнине курнипе

те ĕнентермелле пек. Кунта тепĕр факта аса илни те вырăнлă. Хăйĕн пĕр очеркĕнче М.Федоров пĕчĕк чухне пиччĕшĕпе Карапаш вăрманне вутта кайни, унтан вĕсем кун каҫа ҫаврăнса ҫитни ҫинчен ҫырнă. Ҫав ача чухне ҫӳрени унăн асĕнче лайăх тăрса юлнă, кайран, «Арҫурие» хайланă самантсенче, ăн айĕнчен (подсознание) ҫиеле тухма пултарнă.

Ҫапах та ҫакăн пек ăнлантарни кунта питех те ҫителĕксĕр. Мĕншĕн Карапаш вăрманĕ МАР, Урхас Кушкă вăрманĕ тенĕ-ши? Чиперуй ялĕпе Хурăншур та Карапаш вăрманĕпе Хурапха хушшинче вырнаҫман. Пĕрре Арҫури ял хĕрнех ҫитнĕн (Виснер хĕрринче – ку ҫырма Хурапхаран инҫех мар вырнаҫнă – вăл вилнĕ карчăк пулса выртать), тепре инҫетрех юлнăн (Виснер ҫырми хыҫҫăн тин ҫурма ҫула ҫитни пуҫра ниепле те вырнаҫаймасть) туйăнать.

Тĕлĕнтермĕш халапсемпе пейĕтсенче те истори реалийĕсем, вырăнпа ҫын ячĕсем тăтăшах тĕл пулаҫҫĕ. Эппин, кунта кĕнĕ топонимсен пĕлтерĕшĕ жанрпа стиле палăртнинче те курăнать, хайлав идейине ăнланма пулăшать. Тĕслĕхшĕн *Урхас Кушăк* ят тĕл пулнă йĕркесене илер-ха:

*УРи ВĂРăм, куҫĕ чАРмак,*
*УРхАс Кушăк ВĂРманĕнче*
*УРлă-пИРлĕ Уткалать,*
*УРнă йыт пек тУлашать.*

Кунта топонимсен функцийĕ УР тĕревлĕ сасăсене палăртассинче курăнать. Ытти топонимсен текстри пĕлтерĕшĕ кăштах ансăртарах: вĕсен аллитерацийĕ арҫури тĕрлĕ сăнпа кĕлеткеллĕ пулнине пусса палăртать: *ТАРАН вАР – ТАРкĂН салТАк, ВисНер – ВилНĕ карчăк, ҪУрма ҪУл – ҪУрхи СУРăх.*

Итлемес тата Чиперуй ял ячĕсем текстра чăн пурнăҫ реалине кăтартнăн курăнаҫҫĕ, тĕлĕнтермĕш халап жанрĕпе стильне туйтараҫҫĕ. Чăнах та, темиҫе йĕркеренех эпир чипер вăрмана ҫитсе кĕретпĕр, йăвă та вăрăм йывĕҫсемпе киленетпĕр. Ҫакă вăл тăвăл хыҫҫăнхи лăпкă вăрмана ҫутă сăрăсемпе ӳкерсе кăтартма май парать. Калуҫă ҫĕрлехи

шăв-шав арçури алхасăвĕ мар, çил-тăвăл пулни иккенне çапла систерет: *Ват юмана çил ватнă / Çĕмĕртсене çĕмĕрнĕ.*

***Пĕтĕмлетӳ:***

1. «Арçурири» çын ячĕсен сăнарлă функцийĕ пĕрешкел мар. Пĕрисене сасă янăравĕшĕн кăна илнĕ пулсан (Палюк, Праски, Петĕр), теприсене шухăшпа сăнар ассоциацийĕшĕн кĕртнĕ (Хĕветĕр, Карчăк Микули, Кирилесем).

2. Тĕп геройăн тата унпа вăрмана кайма пултарнă çынсен ячĕсем аллитерациленсе икĕ тĕнчене (çын тата çут çанталăк тĕнчисене) символлакан ХУРА сăмахпа ассоциаци çуратаççĕ, ХУРлăх (хуйхă) идейине тĕвĕлеççĕ.

3. АРçУРи, ХăРăк тУРат тенисем икĕ тĕнче символĕсемпе ассоциаци çуратаççĕ.

4. ЭнТĔРи ял халăхĕн тĕнчине ытларах çывăх пулнине çав ят унăн чунĕн ячĕпе мар, ХĕвЭТĔР ячĕпе çывăхрах пулнине те кăтартать.

5. Топонимсен пĕр пайĕ (УРХАС Кушăк) тĕревлĕ сасăсем урлă икĕ тĕнчен символла ХУРА сăмахĕпе ассоциаци çуратать, тепĕр пайĕ (Тарăн вар, Виснер) арçури улшăннине (оборотничество) сăнарлать. Виççĕмĕшĕсем (Итлемес, Чиперуй) чăн пурнăç реалине кăтартса жанрпа стиль паллине уçăмлатаççĕ.

6. Карчăк Микулин ятĕнче арçурипе Турă, чăваш тĕнĕпе православин хутăш пĕрлĕхĕ, XIX ĕмĕрти чăваш хресченĕн типлă сăнарĕ, унăн ăнĕ ӳкерĕннĕ.


***Усă курнă литература***

Родионов, В. Г. Михаил Федоров: «Арçури» ăнлантарăвĕ / В.Г. Родионов. – Шупашкар, 1999. – 76 с.

Сироткин, М. Я. М.Ф. Федоров (Очерк жизни и творчества) / М.Я. Сироткин. – Чебоксары, 1947. – 48 с.

Ставский, М. «Арçури» баллада реализмĕ / М.Я. Сироткин // Тăван Атăл, – 1988. – 11 №.

Антонова, З.С. Чăваш сăмахлăхĕн вĕрентӳ меслечĕсем : чăваш шкулĕн 5-11–мĕш классĕсенче вĕрентекенсем валли / З. Антонова, В Станьял. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 2006. – 399 с.

Чăваш литературин классикĕ Михаил Федоров. – Шупашкар, 1998. – 60 с.

Ишентей, Н. Вилĕмсĕрлĕх философийĕн вĕрентĕвĕ / Н. Ишентей // Халăх шкулĕ. – 1997. – 4 №. – С. 76-82.

Родионов, В.Г. Главный герой очищается при помощи страха / В.Г. Родионов // Чăваш ен. – 1998. – 31 №.
Родионов, В.Г. Михаил Федоров: «Арçури» ăнлантарăвĕ / В.Г. Родионов. – Шупашкар, 1999. – 67 с.
Чувашский язык и литература: теория и методика : сборник научных статей на чувашском и русском языках. – Чебоксары : Чувашгоспедуниверситет им. И.Я. Яковлева, 2004. – 49 с.
Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки. 1 пай / Н.Г. Ивановăпа В.П. Никитин пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1993. – 311 с.
Метин, П.Н. Литературăпа халăх сăмахлăхĕн ăнлавĕсем: шкул словарĕ / П. Метин, А. Мефодьев. – Шупашкар : Чăваш Респ. вĕрентӳ ин-ĕн изд-ви, 1997. – 80 с.

# НИКОЛАЙ КЕДРОВ ПУРНĂÇĔПЕ ПУЛТАРУЛĂХĔ

*Николай Кедров пурнăçĕпе ĕç-хĕлĕ. «Асăна аннĕне хисепле, хăвнах аван пулĕ» повĕçе çырнин тата пичетленин историйĕ. Хайлавăн тĕп шухăшĕ, теми, сюжечĕ, сăнарĕсем. Повĕçĕн поэтики.*

XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче чăваш илемлĕ литературинче палăрнă жанрсенчен пĕри вăл повĕç жанрĕ. Çак жанр асăннă вăхăтра И.Юркин, О.Романов пултарулăхĕнче пысăк вырăн йышăнса тăнă. Проза ĕречĕн çак пысăк калăпăшлă жанрĕ тĕн тата педагогика пĕлĕвĕллĕ Николай Михайлович Кедрова та хавхалантармасăр тăма пултарайман. XIX ĕмĕр вĕçĕнче çак çыравçăсем пĕрин хыççăн тепри хăйсен хайлавĕсене вулакансем патне çитереççĕ.

Николай Михайлович Кедров чăваш илемлĕ литературине XIX па XX ĕмĕр чиккинче кĕнĕ çыравçă терĕмĕр. Вăл повĕçпе публицистика жанрĕсене тата психологилле прозăна малалла аталантараканĕ. Унăн хайлавĕсем православи тĕнĕн моральне халăх хушшине сарма тăрăшнипе уйрăлса тăраççĕ. XIX ĕмĕрĕн юлашки чĕрĕкĕ – патша влаçĕ Атăл тăрăхĕнчи халăхсем хушшинче Христос тĕнне çĕнĕрен сарса пынă тапхăр. Патша самодержавийĕпе чиркӳ çыннисем çине тăрсах çак тĕне йышăнма хистеççĕ. Вырăсларан тĕн кĕнекисем

куçараççĕ, чăвашла проповедьсем, кĕлĕсем çыраççĕ. Çавăнпа пĕрлех тĕн представителĕсем искуствăпа литературăна та хăйсен интересĕсене халăх хушшинче сарма пулăшакан хатĕр ырăнне усă кураççĕ. Çавăнпах пулĕ асăннă вăхăтра çӳлерех палăртнă авторсен произведенийĕсем паллă хайлавсем пулса тăнă та ĕнтĕ.

Николай Михайлович Кедров Хусан кĕпĕрнинчи Теччĕ уесĕнчи (халĕ Чăваш Республикин Елчĕк районе кĕрет) Аслă Елчĕк ялĕнче 1874 çулхи нарăс уйăхĕнче кун çути курнă. Малтан ял шкулĕнче, каярахпа Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче, унтан Чĕмпĕрти тĕн семинарийĕнче вĕренет. Пултаруллă та ăслă чăваш каччи малалла вĕреннин усси пулнине аван чухланă, тата вăл вăхăтра тĕн тĕлĕшĕнчен пĕлӳ илнĕ çынсем самай аван пурăннă. 1897-1901 çулсенче Хусанти тĕн академийĕнче ăс пухать, çав хушăрах земство шкулĕнче чăваш чĕлхи вĕрентет. Каярахпа Хусанти тĕн семинарийĕнче те вĕрентӳçĕре ĕçлеме тӳр килет ăна. 1902 çулта Кедров Бузулукри хĕрарăмсен гимназине ĕçлеме куçать. Октябрьти революции хыççăн Самарти икĕ сыпăклă шкулта чăваш чĕлхи вĕрентет. Чылай вăхăт хушши вăл тĕрлĕ шкулсенче, земство училищисемпе гимназийĕсенче учительте ĕçленĕ. Çыравçă ăçта тата хăçан вилни паллă мар.

Н.М. Кедров хайланă паллăрах произведенисем шутне çаксене кĕртме май пур: «Аçăна аннĕне хисепле, хăвнах аван пулĕ» повĕç (1899), Н.М. Охотниковпа В.К. Магницкий çинчен çырнă статьясем, (1892, 1901), «Японипе японецсем çинчен» истории очеркĕ (1905). Çавăн пекех Н. Кедров чăваш халăх сăмахлăхне пухнă, хăй ĕçленĕ ялсенчи сăмахлăх тĕслĕхĕсемпе юмах-халапсем çыра-çыра илнĕ, е ăна пĕрле вĕреннĕ учительсем хăйсен тăрăхĕнчи фольклор тĕслĕхĕсене яра-яра пани паллă.

«Аçăна аннĕне хисепле, хăвнах аван пулĕ» повĕçе Н. Кедров 1899 çулта çырнă. Тепĕр çултан Хусанта уйрăм кĕнекен пичетленсе тухнă. Хайлава автор Хĕвел Анăç европăри классикăлла хайлавсен фабулине тĕпе хурса çырнă. Хайлавăн сюжечĕ Акăлчансен аслă драматургĕ Вильям Шекспир çырнă «Лир король» ятлă

трагединнипе тӳр килет. «Аҫӑна аннӗне хисепле, хӑвнах аван пулӗ» повӗҫӗн тӗп сӑнарӗн Кӗркурин шӑпи, кунҫулӗ Лирӑнни пекех, хӑйӗн айӑпне пула трагедиллӗ вӗҫленет.

Пуян Кӗркури тӳрӗ пурнӑҫпа пурӑнать, арӑмӗ вилсен те урӑх авланмасть, виҫӗ хӗрне – Алтачене, Спание тата Лисахвие пӗчченех пӑхса ӳстерет. Хӗрӗсем ашшӗ сӑмахӗнчен тухмаҫҫӗ, ӑна итлеҫҫӗ. Пӗррехинче, хӑй патне хӑна-вӗрле пуҫтарӑнсан, хӗрӗнкӗ Кӗркури хӗрӗсен кӑмӑлне пӗлме шут тытать. Хӑйне уйрӑмах юратакан хӗрне вӑл пуянлӑх ытларах пама кӑмӑл тӑвать. Аслӑ хӗрӗсем, пуяс ӗмӗтпе, ашшӗн умӗнче йӑпӑлтатса унӑн кӑмӑлне ҫавӑраҫҫӗ. Ашшӗне чӑннипех юратакан кӗҫӗн хӗрӗ Лисахви вара, аслӑ ашӑшӗсем пек йӑпӑлтатса каламҫа пӗлменскер, ашшӗн мулне тивӗҫмесӗрех юлать. Пуян Кӗркури пӗтӗм пурлӑхне аслӑ хӗрӗпе вӑталӑх хӗрне валеҫсе парать, хӑй вара черетпе Алтачепе Спани патӗнче пурӑнма пуҫлать. Кӗҫех аслӑ хӗрӗсем ашшӗпе пӗр чӗлхе тупаймасӑр Кӗркурие килӗсенчен хӑваласа кӑларса яраҫҫӗ. Кӗҫӗн хӗрӗ патне пырса кӗме хӑю ҫитмест унӑн. Вара вӑл ватӑ пуҫӗпе тӗнче тӑрӑх тухса каять. Ҫӗмюн тарҫипе пӗрле вӑл вӑрман ҫуртне пырса тухать. Ҫӗмюн Лисахвие ашшӗн инкекӗ ҫинчен хыпар тӑвать. Лисахви упӑшки Иван Кӗркурие хӑйсем патне илсе таврӑнать. Шӑнса пӑсӑлнӑ, хуйхӑ-суйхӑ хуҫнӑ Кӗркури кӗҫӗн хӗрӗн, Лисахвин, аллинчех вилсе каять. Ҫавӑн пек хайлавӑн фабулипе сюжечӗ.

Хайлаври ӗҫсем ашшӗпе ачисен хушшинчи конфликт тавра аталанса пыраҫҫӗ. Тӗп конфликт кунта, тӗрӗссипе, Кӗркурипе аслӑ хӗрӗсем хушшинчен сиксе тухать. Хайлав пуҫламӑшӗнчех ку палӑрмасть-ха, Спанипе Алтаче хӑйсен чӑн-чӑн сӑн-сӑпатне уҫса кӑтартмаҫҫӗ. Кайран, ашшӗ мулӗ веҫех хӑйсен аллине кӗрсе ӳксен, вӗсен кӑмӑлӗсем улшӑнаҫҫӗ: ватӑ ашшӗ вӗсене текех кирлӗ мар.

Повӗҫре пӗр пысӑк проблема пур: пурлӑхпа этем телейӗ. Автор геройсен шӑпи тӑрӑх ҫакна ҫирӗплетет: этем телейӗ пурлӑхпа мулра мар, унӑн кӑмӑлӗнче, чӑн-чӑн юратура. Ку вӑл пурнӑҫ кӑларса тӑратнӑ ыйту, капитализм самани татса парайман хирӗҫтӑру. Мул этеме

пурнăç çине урăхла пăхма хистет, телейе укçапа пурлăхра кăтартса çыннăн кăмăлне аркатать, ăна кăмăлсипет тĕлĕшĕнчен чăлах туса хурать. Кăна эпир Спанипе Алтаче сăнарĕсенче яр уççăн куратпăр.

Повĕçре автор позицийĕ тĕп вырăнта. Сăнарсемпе те унăн сăмахĕ урлă паллашатпăр Кунпа пĕрлех произведенире хушăран сăнарсен уйрăм чĕлхи, калаçăвĕ те пур. Сăнарсен чун-чĕрине уçса паракан психологиллĕ самантсем те тĕл пулаççĕ. (РЧЛ Вас 201).

«Çĕрле пулнă. Уйăх çап-çутă пулнă. Пĕлĕт çинче çăлтăрсем йăлтăртатса тăнă. Пĕр сас-чĕвĕ те илтĕнмен. Килкартишĕнче пĕр хĕрринче ӳссе ларакан йывăççенĕн çулçисем анчах лăпкă çил киле-кил вĕрнипе пăртак хăшăлтатса тăнă, тата сайраран пĕрре урамра иртен-каян çын сасси илтĕнкеленĕ. Лисахви те шухăшласа ларнă. Тутăрĕ пуçĕ çинчен сĕвĕнсе аннине те вăл сисмен. Çиттуни саланнипе çӳçĕсем унăн хулпуççисем çине явăнса аннă. Лисахви унта та пĕртте сикмен. Çав тĕрлĕ вăл хытă хуйхăрса ларнă» (114).

Н. Кедровăн уçăмлă та сăнарлă чĕлхи геройсен ăшри монологĕсене чĕррĕн ӳкерме май парать. Психологилле детальсене вырăнлă усă курни сăнарсен кăмăл-туйăмне витĕр курса тăма пулăшать. Çутçанталăк пулăмĕсене илемлĕн ӳкерсе кăтартса хайлаври вăл е ку самантa туллин кăтартать.

Н. Кедров хăйĕн повĕçĕн ятне Евангелирен илнĕ пулсан та хайлавра тĕп вырăна Шекспирăн «Лир король» трагедийĕнчи пекех хĕр ашшĕне юратни çинчен çырнă. «Ашшĕне юратни ырра тата тĕрĕслĕхе юратнипе çураçăнса тăраççĕ», – тет Родионов критик.

Шекспир трагедийĕнчи Лир ятлă ватă король хăйĕн патшалăхне виçĕ пĕр пек пая уйăрса виçĕ хĕрне парнелеме шухăшлать. Хĕрĕсенчен вăл хăйне хăшĕ ытларах юратнине сăмахпа илтесшĕн. Аслă хĕрĕ Гонерилья тата вăталăх хĕрĕ Регана ашшĕне хăйсем питĕ хытă юратни çинчен пĕлтереççĕ. Тем тĕрлĕ «пыле» сăмахсем калаççĕ. Кĕçĕн хĕрĕ Корделия вара хăй ашшĕне юратнине сăпайлăн кăна хуравлать. Вăл аппăшĕсем пек

çын умĕнче «çуллă» сăмахсем калама вăтанать, çавна пулах пайсăр тăрса юлать.

Малалла кăштах икĕ автăрăн хайлавĕсенчи пĕрпеклĕхпе уйрăмлăхсене тупса палăртар. Лир короле Шекспир питĕ мăн кăмăллă çын пек ўкерет. Вăл хăйĕн кĕçĕн хĕрне пайсăр хăварать кăна мар, пил те памасть. Тата хĕрĕсене тавăрассипе те хăратать. Н. Кедров çемçе кăмăллăрах. Вăл ĕçкĕ-çикĕ хыççăн урăлса çитсен кĕçĕн хĕрне пайсăр хăварнăшăн ўкĕнсе те илет. Кĕркури кĕçĕн хĕрне, лешĕ чухăн çынна качча каять пулсан та, пиллесех качча парать. Вилес умĕн те вăл аслă тата вăтам хĕрĕсене каçарать, вĕсене хăйĕн патне килессе кĕтет. «Килчĕрччĕ вĕсем ман пата, чунăм савăнсах кайнă пулăччĕ... Манăн вĕсене усал пулса тупăка кĕрсе выртас килмест... Турă каçартăр ентĕ вĕсене...»

Хайлавсен тĕп сăнарĕсем Кĕркурипе Лир та хăйсен хĕрĕсем патĕнче черетпе ылмашса пурăнма ĕмĕтленеççĕ. Анчах та вĕсем иккĕшĕн те хĕрĕсене юраймасăр вĕсен патĕнчен ылханса тухса кайма тивет. Кĕркурипе Лирăн юлашки шанчăкĕ кĕçĕн хĕрĕсенче.

Лир король аслатиллĕ çумăр айне лекет, Кĕркурин хуйхине, ăшĕ çуннине асар-писер çил-тăман «ачашлать». Çутçанталăк тулашăвĕ телейсĕр ашшĕсен ăшри тулашăвĕпе тўр килет.

Кĕркурипе Лир йывăрлăха кĕрсе ўксен кăна пуян пурнăçăн хисепĕпе чысне ăнланса илеççĕ. Пуринчен ытла вĕсем ашшĕ-амăшĕпе ачисен хушшинчи хутшăнусен вăрттăнлăхне туйса илме пултарчĕç. Пурнăç çине юлашкинчен те пулсан урăх куçпа пăхма май тупрĕç. Хĕрĕсем пурнăç чăнлăхне кая юлса ăнланчĕç. Вĕсем ашшĕ вилсен кăна хăйсен айăпне туйса илсе ўкĕнме пуçлаççĕ, анчах кая юлаççĕ.

Н. Кедров хăйĕн повĕçне Шекспир хайлавне тĕпе хурса çырнă пулин те XIX ĕмĕр çыравçи Кедров «Аçăна аннĕне хисепле, хăвнах аван пулĕ» хайлавра вăл вăхăтри чăваш халăх пурнăçĕн çемьери хутшăнăва туллин ўкерсе кăтартма пултарнă. Мула хапсăнакан, пархатарсăр ача-пăча пилсĕр тăрса юлма пултарать. Ашшĕ-амăш сăмахĕнчен иртмен, вĕсене сума сăвакан ача-пăча кăна

хисеплĕ пурнăçа тивĕç. Ку пулăм паянхи пурнăçра та чи çивĕччисен шутĕнче.

Çапла вара Николай Кедров хăйĕн хайлавĕнче этем тивĕçне мала кăларса тăратрĕ. Пурнăçра кашни çыннăн хăйĕн тивĕçне пĕлсе пурнăçлама пĕлмелле. Ашшĕ-амăшĕн хăйĕн тивĕçне манмасăр, ывăл-хĕрĕн хăйĕн ашшĕ-амăш умĕнчи парăма манмасăр пурăнмалла. Çак ĕмĕрсем хушши çирĕпленнĕ йĕркене манăçа кăларсан е тивĕçлĕ пурнăçламасан пурнăçа аркатма е пĕтерсе хума та инçе мар иккен. Кăна Н. Кедров «Асăна аннĕне хисепле, хăвнах аван пулĕ» повĕçĕ ĕнентерсе пачĕ.

Н. Кедров хайлавра хускатнă проблема халăх пурнăçĕнче яланах малти вырăнта пулнă. Тен, çавăнпах пулĕ XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче илемлĕ сăмахлăх ани çинче тăрăшакан ытти çыравçăсене те асăннă проблема шухăшлаттармасăр тăма пултарайман. Çак темăнах О. Романов, И. Юркин, Игн. Иванов хăйсен пултарулăхĕнче малалла аталантарнине куратпăр.

### *Усă курнă литература*

Революцичченхи чăваш литератури (XX ĕмĕрччен). 1-мĕш том. Текстсем. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1984. – 464 с.

Революцичченхи чăваш литератури (XX ĕмĕрччен). – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1989. – 302 с.

Родионов, В.Г. Чăваш литератури. XVIII-XX ĕмĕрсем : вĕренӳ пособийĕ / В.Г. Родионов. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 2006. – 463 с.

Федорова, Е. В. Истоки и формирования жанров чувашской литературы XVIII-XIX вв. / Е.В. Федорова. – Чебоксары : Чувашский государственный институт гуманитарных наук, 2006. – 144 с.

Родионов, В.Г. Чувашская литература (вторая половина XIX в. : учеб. пособие / В.Г. Родионов. – Чебоксары : Изд-во Чуваш. ун-та, 2002. – 248 с.

# ОСИП РОМАНОВ ПРОЗАИКĂН ИЛЕМ ТĔНЧИ

***Осип Романов пурнăçĕпе ĕç-хĕлĕ.***
***«Ануш» повĕçе çырнин тата пичетленин историйĕ.***
***Хайлавăн темипе тĕп шухăшĕ, сюжечĕпе сăнарĕсем.***
***Хайлавăн сăнарлăхĕпе илемлĕх тĕнчи.***

Осип Григорьевич Романов XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче чăваш илемлĕ литературинче палăрнă ятсенчен пĕри. Унăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ, пултарулăхĕ чылай енчен Николай Кедровăннипе пĕр килет. Иккĕшĕ те вĕсем пĕр çулта, 1874 çулта, çуралнă. Хресчен çемьинчен. Анатри чăвашсен йăхĕнчен тухнă. Иккĕшĕ те тĕн семинарийĕпе академийĕнчен вĕренсе тухнă. Шкулта ĕçленĕ. Чылай вăçăт хушши иккĕшĕн те пурнăçăн юлашки çулĕсем паллă пулман. Тĕн тĕлĕшĕнчен пĕлӳ илнипех пулĕ вĕсен пултарулăхĕнче пĕр еврĕлĕ туртăмсем сисĕнеççĕ. Николай Кедровăн «Аçăна аннĕне хисепле, хăвнах аван пулĕ» повĕçĕ те, Осип Романовăн «Ануш» повĕçĕ те вĕрентсе калас шухăша мала лартнипе уйрăлса тăраççĕ. Хайлавсенче халăх педагогикин традицийĕсем, философи йĕрĕсем палăраççĕ, икĕ автор та хайлавсене притча евĕр йĕркелесе çырнă. Çак формăпа çырни çыравçăсен çутлăх туйăмне, шухăшне вулакан патне çитерме пулăшать.

Осип Григорьевич Романов 1874 çулхи акан 20-мĕшĕнче Тутар республикинчи Пӳркел ялĕнче çуралнă. Ялти шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче, тĕн семинарийĕнче пĕлӳ илнĕ. 1893 çулта ăна Саратов кĕпĕрнине шкула ĕçлеме яраççĕ. Çулталăкран вăл каялла таврăнать. Ишекри икĕ сыпăклă шкулта вăй хурать. Юрăпа, кĕвĕ учителĕнче тăрăшать. 1897-1902 çулсенче Хусанти тĕн академийĕнче вĕренет. Каярах вăл халăх училищисен инспекторĕнче, Течĕри учительсен семинарийĕн директорĕнче ĕçлет. Çавăн пекех Осип Романов Улатăр, Пăва, Кăрмăш уесĕсенчи шкулсен инспекторĕнче ĕçлени те паллă.

Чылай вăхăт хушши Осип Романовăн революци хыççăнхи пурнăç çулĕсем паллă мар пулнă. Вăл хăçан

тата ăçта вилни те, ăçта-ăçта пурăнни те паллă пулман. Родионов тĕпчевçĕ çирĕплетнĕ тăрăх граждан вăрçи çулĕсенче Осип Романов шуррисен майлă пулнă. 1935 çулччен Китайра эмиграцире пурăннă. Кайран ачисем патне Мускава куçса килнĕ, çавăнтах 93 çула çитсе çĕре кĕнĕ.

Осип Романов тĕп хайлавĕ «Ануш» повеçĕ. Унăн тепĕр ячĕ «Хĕн-хур куракан çынна Турă пăрахмасть». Çыравçă асăннă хайлава 1900 çулта уйрăм кĕнекен («Ануш») «Хĕн-хур куракан çынна Турă пăрахмасть» пичетлесе кăларнă. Хайлав фабули чăвашсен амаçури çинчен калакан юмахсене аса илтерет. Çитĕнекен хĕр тăван мар амăшĕн мăшкăлне тӳссе ирттернĕ хыççăн пуйса каять, телейлĕ пулать. Çаксене вăл хăйĕн ĕçченлĕхне тата ырă кăмăлне пула тивĕçет.

Хайлавра прозаик Ануш ятлă сĕм тăлăх чăваш хĕрĕн шăпине уçса парать. Хайлавăн тĕп шухăшĕ пирки калас пулсан, Осип Романов хăйĕн хайлавĕпе халăха ырă кăмăллă, Турра юрăхлă пулма вĕрентет, Турă саккунĕсене пăсмасăр пурăнма хăнăхтарать, усала ырăпа тавăрасси т. ыт. те. Çыравçă, тĕн кĕнекисенчи тĕп шухăша тĕпе хурса, тăлăх хĕрача малтан терт курнăшăн, ăна Турă кайран ырă кăтартать тенине ӳкерсе кăтатнă. Апла пулин те хайлавра автор кăмăлне пăхăнмасăр пулса пыракан тĕп шухăш та пур. Вăл – тӳрĕ те таса кăмăллă, ĕçчен те сăпайлă, йывăрлăхра пулăшакан идеал этем сăнарĕ.

Хайлаври ĕçсем XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче чăваш тăрăхĕнче пулса иртеççĕ. Пĕр ялта упăшкипе арăмĕ пурăннă (Петĕр, Сухви). Вĕсен Анна ятлă хĕрача пулнă. Кил-йыш килĕштерсе пурăннă. Анчах пĕррехинче икĕ хутлă пӳрт лартнă чухне кил хуçи ӳксе аманать те вилет. Кайран арăмĕ те хĕне кайса çĕре кĕрет. Хĕрĕ вара, 11 çулти Ануш хăр тăлăха тăрса юлать. Ăна куккăшĕпе инкĕшĕ (Яккупа Кĕтерне) усрава илеççĕ. Çамрăк хĕрĕн ашшĕ-амăшĕн пурлăхне хăйсем патне куçараççĕ, Ануша лайăх пăхса усрама ял халăхĕ умĕнче сăмах параççĕ. Яккупа Кĕтернен унччен те çемьи пĕчĕк мар пулнă: 2 ывăлпа 3 хĕр. Пысăк кил-йыш чухăн

пурӑннӑ, аран-аран кӑна вӗҫрен-вӗҫе ҫитерсе пурӑннӑ. Ануша вӗсем патӗнче питӗ хӗн килнӗ. Кил-тӗрӗшри пӗтӗм йывӑр ӗҫ ун ҫине тиеннӗ. Кӳрентернӗ те ӑна хушӑран тӑван мар ҫемье. Уйрӑмах Ануша инкӗшӗ юратман. Ҫапла асапланса пурӑннӑҫемӗн хӗрача чирлесе ӳкет. Ӑна сив чир лекнӗ. Ануш тухтӑр пулӑшӑвне пула аран-аран ура ҫине тӑрать. Сывалсан каллех кил-тӗрӗшри йывӑр ӗҫ унӑн ҫамрӑк хулӗ ҫине тиенет. Пӗррехинче касхине вӑл ӑнсӑртран куккӑшӗпе инкӗшӗ ун ҫинчен калаҫнине илтет. Куккӑшӗ Ануша хӗрхенсе калаҫать. Инкӗшӗ вара йӑлтах хирӗҫлет, элеклесе суять, упӑшкине Ануша килӗнчен хӑваласа кӑларса яма хӗтӗртет. Ҫак усал калаҫӑва илтнӗ хыҫҫӑн ку килте чӑтса пурӑнма текех вӑй-хал ҫитми пулать тӑлӑхӑн. Кӗрхи сивӗ те тӗттӗм ҫанталӑка пӑхмасӑрах килтен тухса каять. Выҫӑ хырӑмпа ҫул ҫинче темиҫе ҫӗр каҫать. Пӗр касхине Ануш йывӑҫ айӗнче чӗртнӗ вут ҫинче паранкӑ пӗҫерсе ларакан кӗтӳҫсем патне пырса тухать. Лешсем выҫӑпа аптранӑскере ҫӗрулми ҫитереҫҫӗ. Кайсан-кайсан хӗр юнашар ларакан темиҫе пӳрт тӗлне ҫитсе тухать. Шӑп ҫав вӑхӑтра унта икӗ хутлӑ пӗр пӳрт ҫунма пуҫлать. Ануш кил хуҫипе мӑшӑрне (Ҫӑмюнпе Марьене) тата икӗ ачине пушартан ҫӑлӑнса тухма пулӑшать. Ҫавӑншӑн кил хуҫисем Ануша чунтан тав тӑваҫҫӗ. Ҫӑмюнпа Марье тӑрӑшнипех Ануш лайӑх ҫынсем патне пурӑнма лекет. Вӑхӑт иртнӗҫемӗн Ануша куккӑшӗпе инкӗшӗ шырама тапратаҫҫӗ. Тупсан каялла таврӑнма ӳкӗтлеҫҫӗ. Анчах та Ануш хӑйне усрава илнӗ Иван патӗнчен кайма килӗшмест. Кайран ӳссе ҫитӗнсен чипер хӗр пулса тӑрать, юратнӑ ҫынна качча каять. Телейлӗ пурнӑҫпа пурӑнма пуҫлать.

(«Ануш») «Хӗн-хур куракан ҫынна Турӑ пӑрахмасть» хайлавӑн сюжечӗ классика хайлавӗсене аса илтерет. Тӗслӗхрен, Ануш сӑнарӗ Виктор Гюгон «Отверженные» романӗнчи Козетта ятлӑ тӑлӑх хӗрӗннипе пӗр килет. Ҫавӑн пекех ҫак чӑваш хӗрӗн сӑнарне Золушкӑпа танлаштарма та май пур. Ун пек тӗслӗхсем чӑваш юмахӗсенче те тӗл пулаҫҫӗ. Повӗҫӗн тытӑмӗ традициллӗ чӑваш халӑх юмахӗн композицийӗпе пӗр евӗрлӗ. Сюжет

юмахри пекех пуçланать. Юмахра хĕн-хур куракан хĕр çула тухать (е ашшĕ вăрмана илсе каять). Хайхи Ануш та инкĕшĕн мăшкăлне тӳсеймесĕр килтен тухса каять. Ăна инкĕшĕ хыçран хăваланăн туйăнать: «Инкĕшĕн сасси ăна хыçăнчен чупса пыракан тискер кайăк сасси пек илтĕннĕ». Юмахри пекех вĕçленет ку повĕç. Тĕрлĕ асапа тӳссе ирттернĕ хыççăн Ануш хăйĕн тăрăшулăхне тата маттурлăхне пула вăл (Çăмюн ятлă хресчен килйышне пушартан çăлма пулăшать) ырă çынсен хӳтлĕхне тупать.

Хайлавăн варринче вара юмахри пекех ĕççем темиçе хутчен пулса иртеççĕ. Ануша тĕп килĕнчен усрава илсе каяççĕ. Кайран унти мăшкăла тӳсеймесĕр хĕр тĕнче тăрăх тухса каять. Çул çинче кĕтӳççене тĕл пулать. Хуторта пурăнакан çынсене пушартан çăлса хăварать. Юлашкинчен чипер каччӑпа пĕрлешсе лайăх пурăнма пуçлать. Ануш шăпи пилĕк тĕп пулăм урлă йĕркеленет.

Хайлав фабули малтан ерипен аталанса пырать пулсан, хайлав вĕçне çыравçă пĕр сыпăкрах пĕтĕмлетӳ евĕр йĕркелесе çырса кăтартать. «*Ануш улпут каланă пек, ӳссе çитсен пит лайăх, ăслă хĕр пулнă. Вăл хăй пек ăслă çынна качча кайнă. Вăл килĕштерсе пурăннă. Çынпа нихăçан та вăрçман. Пуринчен ытла Ануш тăлăх ача-пăчасене хĕрхеннĕ, вĕсене епле те пулин – укçапа-и е ытти япалапа – пулăшма тăрăшнă. Çавăнпа вĕсене, упăшкипе иккĕшне те, Туррăн пиллĕхĕ, тивлечĕ çитнĕ: вĕсене Турă пурлăх панă, ача-пăча панă, ватăлса ырă вилĕмпе вилмелле тунă*».

Повĕçĕн чĕлхипе стилĕнче те юмахри сĕм тапса тăрать. Иртнĕ вăхăтра çырнă (пулнă, тунă, курнă та. ыт. те). Автор каласа панă, аса илнĕ пек çырнă. Хайлав калăпăшĕпе пысăках маар пулин те унта сăнарсен хисепĕ палăрмаллах йышлă: Ануш, ашшĕ-амăшĕ, куккăшĕпе инкĕшĕ (Яккупа Кĕтерне), улпут сăнарĕ (Пуян Иван), кĕтӳçсем, Çăмюнпа унăн арăмĕ Марье, ури хуçăлнă çын та. ыт. те. Вĕсенчен каппиех хăйне евĕр. Тĕп вырăнта – Ануш тата куккăшĕпе инкĕшĕ. Автор хайлав сăнарĕсене тунă чухне илемлĕ литературăн тĕрлĕ

илемлӗх мелӗсемпе усӑ курнӑ: портрет, пейзаж, диалог, монолог, сӑнарсен тыткаларӑшӗ тата ытти те. Хайлавра **диалектизмсем** чылай: хӑне, хӑнчен, пӗр авка, йинкӗшӗ, чикмек. **Танлаштарусем:** хӑй хӗрӗ пек пӑхса усрама пулнӑ, пӳрчӗ хӑй йӑванса каяс пек ларнӑ, вилес пек выртнӑ, улпут хӗрӗ пек пурӑнтарас, вилнӗ пек ҫыварнӑ тет. **Натурализм:** Пӳртри таса марлӑха тӗпӗ-йӗрӗпе ҫырса панӑ. **Эпитет:** Хытӑ чӗреллӗ, хытӑ хӑлхаллӑ ҫынсем, ырӑ кӑмӑллӑ аппӗ-амӑшӗ, мӗскӗн-тӑлӑх, ӗҫчен чӑтӑмлӑ Ануш. **Диалог:** Инкӗшӗпе Ануш калаҫӑвӗ, куккӑшӗпе инкӗшӗн калаҫӑвӗ, Анушпа кӗтӳҫсен калаҫӑвӗ, улпутпа Ануш калаҫӑвӗ. **Монолог:** Анушӑн ҫӗрлехи монологӗ. **Сӑнарлӑ ҫаврӑмсем:** Инкӗшӗн калаҫӑвӗ. Анушӑн тӗсне ан курам. Мӗн хыпма илсе килнӗ эсӗ ӑна. **Ҫутҫанталӑкпа ҫын кӑмӑлне пӗрлӗхлӗ туса кӑтартни:** Ануш куккӑшӗпе инкӗшӗ патӗнчен тухса кайнӑ самант. Кӗрхи сивӗ те ҫиллӗ ҫумӑрлӑ ҫанталӑк Ануш чун-чӗринчи ыратупа хурлӑх. Повӗҫре ҫавӑн пекех К. Ивановӑн «Нарспи» поэминчи сӑнарлӑх паллисем те сисӗнеҫҫӗ. Тӗслӗхрен: Ануш килтен тухса кайнӑ хыҫҫӑн хӑйӗн хыҫӗнчен усал инкӗшӗ хӑваланӑн туйӑнать. Нарспи Тӑхтаман патӗнчен тарса кайнӑ хыҫҫӑн ӑна вӑрманта Тӑхтаман чунӗ, усал кайӑк пулса хӑваланӑн туйӑнать. Ҫавӑн пекех тата Ануш килтен тухса кайсан ҫутҫанталӑк ҫӗмрӗлет, сивӗ кӗрхи ҫил алхасать. Нарспи поэмӑра та ҫутҫанталӑк алхасӑвӗ, вӑрман кашлавӗ т. ыт. те.

Чӑваш литературин паллӑ тӗпчевҫи Виталий Родионов профессор Осип Романов пултарулӑхӗнче И. Юркин пултарулӑх витӗмӗ пуррине те ҫирӗплетет. Пӗр самана ҫыравҫисен пултарулӑхӗнче пӗрпеклӗхсем чылай иккен. Ҫавӑн пекех вӗсем хӑйеврӗлӗхпе те уйрӑлса тӑраҫҫӗ. Родионов палӑртнӑ тӑрӑх, Ануша хӑйӗн шӑпипе ҫырлахакан сӑнар тесе калаймӑн. Характерӗпе вӑл И. Юркинӑн Кӗтернине («Этемӗн пырӗ Тутӑ та куҫӗ выҫӑ») аса илтерет. Вӑл куккӑшӗн килӗнчен хӑй тухса тарать. «Чӑнах та, мӗншӗн вара эпӗ кунта пурӑнатӑп? – тесе ыйтать Ануш хӑйӗнчен. – Урӑх ҫӗрте кунтан та телейсӗр пулӑп-и. Анне мана юратман, курайман кил-ҫуртра пурӑнма хӑвапнӑ-и-мӗн? Ҫук, кунтан каяс. Анчах

ăçта каяс-ши? Укçасăр, тумтирсĕр мĕн ĕçлĕп, ăçта кайса кĕреп-ши эпĕ çул çинче?.. Çапах та каяс кунтан».

Ануш çирĕп кăмăллă, вăл чура пулса пурăнма килĕшмест. Юмахра вилме янă хĕр пуйса таврăнать. Ануш каялла таврăнмасть, вăл ырă çынсене хăй тĕл пулать. Малтан ăнсăртран пулнăн туйăнакан пушар та автора калăва çăмăллатма, мĕн калас тенине хăвăртрах калама кăна кирлĕ пулнă иккен (И. Юркин та çав мелпе усă курса Кĕтерин ашшĕн пурнăçне вĕçлет). «Турă курнине кăтартма кирлĕ пулчĕ автора çав пушар пирки çырни. Ун хыççăн каласа кайни – малтан пулса иртнин результачĕ», – тет Родионов тĕпчевçĕ.

Çапла вара, О. Романов И. Юркинăн хăш-пĕр традицийĕсене ăша хывнă, унăн мелĕсемпе усă курнă тесе ĕнентерет тĕпчевçĕ. «Çав хушăрах жанр тĕлĕшĕнчен вăл сăвапл пурнăç уйрăмлăхĕсемпе (калу мелĕ, хĕн-хур проблематики, сăнар калăплавĕ) усă курни те уçăмлă. Кунта вăл тĕн литературин тĕп паллисене ăша хывнă, унăн картĕнчен тухса каяс тĕллев тытман», – тет Родионов.


*Усă курнă литература*

Революцичченхи чăваш литератури (XX ĕмĕрччен). 1-мĕш том. Текстсем. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1984. – 464 с.

Революцичченхи чăваш литератури (XX ĕмĕрччен). – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1989. – 302 с.

Родионов, В.Г. Чăваш литератури. XVIII-XX ĕмĕрсем : вĕренӳ пособийĕ. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 2006. – 463 с.

Федорова, Е. В. Истоки и формирования жанров чувашской литературы XVIII-XIX вв. /Е.В. Федорова. – Чебоксары : Чувашский государственный институт гуманитарных наук, 2006. – 144 с.

Родионов, В.Г. Чувашская литература (вторая половина XIX в. : учеб. пособие /В.Г. Родионов. – Чебоксары : Изд-во Чуваш. ун-та, 2002. – 24 с.

# ИВАН ЮРКИН ПУЛТАРУЛĂХĔН ХĂЙЕВĔРЛĔХĔ

***Иван Николаевич Юркин тата чăваш литератури. Унăн очеркĕсемпе калавĕсем, вĕсен идейисемпе поэтики. «Этемĕн пырĕ тутă та куçĕ выçă», «Мул» повĕçсем. Хайлавсен конфликт, сюжет аталанăвĕ, пурнăça сăнланă мелсем. И.Н. Юркинăн чăваш культуринчи вырăнĕ.***

Иван Николаевич Юркин чăваш литературинчи паллă ятсенчен пĕри. Сăмах ўнерĕнче пысăк формăллă (калăплă) проза жанрне – повесть – пуçарса яраканĕ. Унăн хайлавĕсенче Х1Х ĕмĕр вĕçĕнчи чăваш ялĕнчи пурнăç сăнланнă. Иван Юркин пултарулăхĕ ун умĕнхи çыравçăсен хайлавĕсенчен пахалăхĕпе чылай уйрăлса тăраççĕ. Юркин пултарулăхĕнче халăхлăхпа фольклорлăх çитĕнĕвĕсем туллин курăнаççĕ. Вăл халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене пухма, тĕпчеме хастар хутшăннă. Уйрăмах ку ĕçе Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ вăхăтра 1875-79 çç. тăрăшсах туса пынă. Каярах çав материалсемшĕн Хусанти наукăпа промышленность выставкинчен Мухтав хучĕ, (унта вăл «Лирикăлла произведенисем. Чăваш халăх юррисем» ятлă алçырăвне тăратнă пулнă), Мускава Патшалăх университечĕ çумĕнчи обществăна (общество любителей естествознания, антропологии и этнографии) ярса парать, пăхăр медаль илме тивĕçлĕ пулать. Хăй тупса хăй пухнă сăмахлăх тĕслĕхĕсене 1907 çулта тăвата кĕнеке туса кăларнă («Юмахсем», «Халапсем», «Шўтсем», «Ваттисен сăмахĕсем»). Халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене вăл хăйĕн хайлавĕсене хăюллăн кĕртнĕ. Хайлавсен сюжетне йĕркелес, сăнарсене калăплас çĕрте тăван халăхăн сăнарлас, ўкерес мелĕсемпе усă курма тăрăшнă.

И. Н. Юркин И. Н. Ульянов çемьине аван пĕлнĕ. Вăл Володя Ульянов гимназистпа пĕрре çеç мар курса калаçнă. Юркин Никифор Охотниковпа тачă çыхăну тытнă. Вĕсем унпа Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ чухне паллашнă.

Иван Николаевич Юркин (Юркка Иванĕ) Пăва уесĕнчи (халĕ Тутарстанăн Пăва районне кĕрет) Пӳркел ялĕнче 1863 çулхи пуш уйăхĕн 4-мĕшĕнче çуралнă. Малтан Пимĕрсел удел училищинче вĕренет, 1875 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулне кайса кĕрет. Кунтан ăна тепрер çултанах кăларса яраççĕ. 1881 çулта пулас çыравçă Хусанти учительсен семинарийĕнче вĕренме пуçлать, анчах унăн кунта та ăс пухма май килмест. Пĕлӳшĕн тăрăшакан çамрăк хăй тĕллĕн вĕренме пуçлать, тĕрлĕ вулăссенче тиек пулăшуçинче тата çыруçăра ĕçлесе пурăнать. 1886 çулта И. Юркин пурăнма Чĕмпĕр хулине куçать, кĕпĕрнери акциз управленине вырнаçать. Çакăнта вăл 32 çул вăй хурать, кайран статистика управленийĕнче ĕçлет. 1926 çулта пенсие тухать, малалла çыравçă ĕçĕпе кăна пурăнать. Шупашкара куçса килет. 1943 çулхи кĕркунне Чĕмпĕрте çĕре кĕрет.

Юркин Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренме пăрахнине тĕрлĕрен ăнлантарни тĕл пулать. И. Я. Яковлев Юркина Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен япăх вĕреннипе кăларса янă тенĕ. Çыравçă вара хăйне шкултан çăнăх-кĕрпе илсе пыманшăн кăларса янă тесе ĕнентерет. Родионов кун пирки урăхларах шухăшлать. «Тĕрĕссипе, ун чухне Юркка Микулайĕн Йăванĕ Чăваш шкулĕсен инспекторĕ асăрхамалли çынах пулман, çавăнпа та унра вăл тăшман курма пултарайман. Сăлтавĕ И. Юркин мучăшĕнче – Чĕмпĕрте пурăннă Егор Матвеевич Юркинра. Вăл хăй вăхăтĕнче Питĕрте те вĕреннĕ иккен, ытлă-çитлĕ пурнăçпа пурăннă. Юман Мĕтри ĕнентернĕ тăрăх, вĕсем И.Я. Яковлевпа пĕр вăхăтра пĕлӳ илнĕ, пĕр-пĕрне аван пĕлнĕ. Пĕри чăваш ĕçĕшĕн çуннă, хăйĕн пур-çук укçипе ачасене вĕрентме тăрăшнă пулсан, тепри вара çумĕнчи майрипе чухне чăвашла калаçма та шикленнĕ. Çакă чăваш шкулĕн пуçлăхне тарăхтармаллипех тарăхтарнă. Вĕренсен халăхшăн мар, харпăр хăйшĕн кăна тăрăшакан шутне вăл И.Юркина та кĕртет (улми улмуççинчен аякка ӳкмест тенешкел). Çав сăлтава пулах вăл вĕренес кăмăллă çамрăкăн çулне пӳле-пӳле пырать:Чĕмпĕр шкулĕнчен те, Хусанти семинаринчен те çине тăрсах кăларттарса яртарать. Хайхи пулас

çыравçăн хăйĕн мучĕшĕн тата И.Я. Яковлевăн пĕр енлĕ курăмĕшĕн шар курма тивет. Тен, çав сăлтавпах пулĕ унăн çыраслăх туртăмĕ вăй илсе пырать. Çамрăк характерта çине тăраслăх, харкамлăх туйăмĕ çирĕпленсе çитет» (257 Р).

Иван Юркин хайлавсем çырма Чĕмпĕр шкулĕнче вĕреннĕ чухне пикенет. Пĕрремĕш хайлавĕ «Асамат кĕперĕ» ятлă калав. Апла пулин те Юркинăн хайлавĕсем чылай вăхăт пичетленмесĕр выртнă. Мĕншĕн тесен вĕсене тиркесе калакансем тупăнсах тăнă. «Хыпар» хаçатра 1906 çулта «Вичкĕн шăллă шăши» калавĕ тата ытти хăш-пĕр хайлавĕ кун çути курассĕ. 1917 çулта писатель революциччен чылай маларах çырнă «Кулаçа тăраниччен çитерни», «Урине», «Хăраманскер» калавĕсемпе «Вĕреннĕ çынсем» очеркĕ пичетленсе тухаççĕ. Каярах «Ульки», «Машина Иванĕ», «Кахал», «Купец» тата ытти хайлавĕсем халăх патне çитеççĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн çыравçăн хайлавĕсем «Сунтал», «Атăл юрри», «Капкăн» журналсенче, «Çĕнĕ пурнăç» хаçатра çапăнсах тăраççĕ.

И.Н. Юркин чăваш халăхĕн историйĕпе халăх пурнăçне тĕпчесе, йăли-йĕркине тишкерсе статьясемпе очерксем çырать. Тăван халăхăн чĕлхе пуянлăхĕпе культури ÿссе пынине кăтартма тăрăшать.

Юркин калавĕсемпе повеçĕсенче питех те хăюллă шухăшсем пулман пулин те вĕсем ку чухнехи вулакансене ĕлĕкхи пурнăç сăн-сăпатне тĕсесе туйса илме чылай пулăшаççĕ.

Сăмахлăх ÿнерĕнчи малтанхи утăмсене И.Юркин халăх сăмахлăхне пухнинчен пуçлать. Хăй палăртнă тăрăх, 1880 çулта пулас çыравçă хĕр сăри юррисен тата хĕр йĕррисен сăмахĕсене çырса илет. 1888 çул тĕлне вăл 1100 çавра пухса «Чăвашсенĕн юррисем» ятлă алçыру хатĕрлет. Çав алçырăва вăл И.Я. Яковлева кăтартни те паллă. Анчах та ăна Чĕмпĕр шкулĕн ертÿçи ырланине кĕтсе илеймен вăл.

И. Юркин 1888 çулта чăваш юмахĕсемпе ваттисен сăмахĕсене пухать, çавăн чухне «Илья паттăр çинчен янă халап» хайлать. Авторĕ палăртнине ĕненсен ăна вăл 1881

çул тĕлнелле Пӳркел ялĕн çыннинчен Тимĕркке Саманран çырса илнĕ. Хайлава диалогсенчен йĕркеленĕ. Фабули ансат: карчăкпа старикĕн ача пулман. Асамлăха пула (шампа пулă вăййĕпе) ача тупаççĕ. Тĕрĕк халăхĕсен юмахĕсенчи пекех паттăрпа (Ильяпа) пĕрле тиха тата йытă çурисем çитĕнеççĕ. Пурăнсан-пурăнсан старикки салтака тухса каять, карчăккине вара вĕри çĕлен ерет. Илле паттăр çĕлене вĕлерет. Паттăра ухсах та чăлах, шатра питлĕ Натали тухатмăш качча тухасшăн. Илья паттăр патша хĕрне качча илет. Хайлава авторĕ «халап» тенĕ, камран çырса илнине палăртнă. Çакăн евĕр хайлавсене паттăр халапĕсен йышне кĕртеççĕ. Кунта асамлă юмах элеменчĕсем те çук мар. Асамлă шампа пулă, патша хĕрĕ, паттăрпа пĕрле çитĕннĕ йытăпа тиха, вун икĕ пуçлă çĕлен - çаксем пурте юмаха асамлăх енне туртаççĕ.

И. Юркинăн тепĕр паллă хайлавĕ «Йăлтăртататакан япала пурте ылтăн мар». Вăл ăна 1888 çулта çырса пĕтернĕ. Хайлав темиçе сыпăкран тăрать. «И. Юркин чăваш çыруллă сăмахлăхне пуçласа «Юрату виçкĕтеслĕхĕ» ыйтăвне хускатнă, юратăва ултавпа хирĕçлеттерсе кăтартма пултарнă», - палăртать Родионов (366 Р). Çыравçă хайлавăн жанрне фантастикăлла калав тесе палăртнă. Жанр тĕлĕшĕнчен унăн революцичченхи хайлавĕсем халăх юмахĕсенчен йĕркеленĕ хайлавсем, фольклортан илнĕ сюжетсемпе усă курса çырнă йăла повĕçĕсемпе калавсенчен тата очерксенчен тăрать. Писатель хайлавĕсене хăй курса илтнине, вăл вăхăтри чăваш ялĕнче пулса иртнине, пурнăçри чăн пулăмсене тĕпе хурса çырнă. Вĕсенче натурализм меслечĕ малта пулни сисĕнет.

1890 çулта И. Юркин «Чăвашсем мĕншĕн тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕ калаçаççĕ» очерк çырать. Унта вăл чĕлхери сăмахсем чăн чăвашла пулмалли, чăвашпа чăваш тăван чĕлхепе таса калаçмалли пирки шухăшлать. Калаçу културин шайĕ те канăç памасть автора. Юркин халăх сăмахлăхĕнче тăван чĕлхемĕрĕн пуянлăхĕпе сĕткенне, пуласлăх хавалне курать, чĕлхе халăха чăмăртасса та шанать.

И. Юркинăн илемлĕх идеалне палăртса тăракан малтанхи хайлавĕсенен пĕри вăл – «Толчокра» очерк. Хайлавăн тепĕр ячĕ «Пушкин кĕлетки». Автор кунта пĕр пĕчĕк факт урлă тарăн шухăш уçса парать, чăваш халăхĕ тĕттĕм те чухăн пурăннишĕн хытах пăшăрханать. Пасарта пĕри А.С. Пушкин кĕлеткине (портретне) сутать. Анчах та ăна никам та илесшĕн мар. Акă сутуçă патне ашшĕпе ачи пыраççĕ. Ачи, хутла пĕлекенскер, аслă поэтăн хушаматне вулать, ашшĕне портрета илсе пама ыйтать. Ашшĕ ывăлне вăрçать, илсе памасть. Портрета йӳнĕ хакпа пĕр тутар илсе каять. Çак пулăм пирки писатель тарăн шухăша каять. «Хăçан халăх куçĕ уçăлĕ, хăçан вăл А.С. Пушкин пек классиксене хаклама вĕренсе çитĕ», – пăшăрханса шухăшлать вăл.

Сатирăпа юмор та ют пулман И. Юркин пултарулăхĕшĕн. Шӳтлĕ, питлевлĕ хайлавĕсенче çыравçăн ытларах вĕрентӳпе мораль сĕмĕ палăрса тăнă. Çакăн евĕр хайлавсен шутне «Вичкĕн шăллă шăши» юптарăва, халăхран çырса илнĕ «Вакра тинкĕле юракансем», «Пуп тарçи» шӳтлĕ халапсене кĕртмелле. Çыравçă шухăшĕпе, пурнăçра ырри, чăнни малта пулмалла. Çавăнпах пулĕ çыравçăн шутлĕ хайлавĕсенче пархатарсăр геройсем – пуянсем– хур кураççĕ. Çыравçă хайлавăн малтанхи йĕркисенчех сăнарсене ыррисемпе усаллисем çине уйăрать, хăйĕн кăмăлĕ камсен енче пулнине уççăнах палăртать.

М.Я. Сироткин çырнă тăрăх, И. Н. Юркин питлесе çыракан тĕп обьект вăл – тĕпрен илсен, йăла-йĕркери çитменлĕх. Çавăнпах çыравçă хăйĕн хайлавĕсенче социаллă çивĕч ыйтусене мар, мораль ыйтăвĕсене хускатать. Кăна çыравçă каярах хайланă «Ăссăр», «Пилленĕ» калавĕсенче курма пулать. «Ăссăр» калавра, сăмахран, чăваш хĕрĕн инкекĕ йăлтах хăй тĕрĕссине каламаннинчен, гимназие вĕренме кĕрес шутпа хăй чăваш пулнине пытарнинчен килнĕ пек ăнлантарса панă. Писатель «Кулаçа тăраниччен çитерни», «Урине», «Хăраманскер» тата ытти калавсенче те кăмăл-сипет ыйтăвнех хускатать. «Урине» калаври чипер те ĕçчен хĕр, юратнă каччипе пĕрлешеймесĕр, ашшĕ-амăшĕ ирĕксĕр

качча панишӗн кулянса вилет. «Хӑраманскер» калавра мухтанчӑк та харсӑр учительница хӑравҫӑ пулни курӑнать. «Кулаҫа тӑраниччен ҫитерни» калавра писатель янтине хапсӑнакансене, ӗҫлемесӗр ҫын шучӗпе пурӑнакансене питлет. Ҫак шухӑша вӑл калав ятӗнчех палӑртса хӑварать.

Авалхи чӑваш тӗнӗ-ӗненӗвӗ те шухӑшлаттарнӑ И. Юркина. Тӑван халӑхӑн тӗнче-курӑмне сӑнлакан «Чӑвашсен авалхи тӗнӗ», «Пупсемпе мулласем ҫинчен» (1891) хайлавсем ҫырать вӑл. Вӗсенче вӑл чӑваш тӗнне ытти тӗнсенчен маларах лартать, пупсемпе мулласене хурлать. Чӑвашсене ытти тӗнсене вӑйпах йышӑнтарни ырри патне илсе ҫитермест тет вӑл: «Ҫынсене ҫапла пӑлхатса тӑнӑ вӑхӑтра тӗне пула ырӑ ҫынсемех урӑх ҫынсемпе хутшӑнса, пӑсӑлса, усалланса пӗтеҫҫӗ. Ҫынна пӑсма час та, ырӑ тума пит хӗн».

Иван Николаевич Юркин чӑваш илемлӗ литературинче пысӑк е вӑтам калӑплӑ хайлав жанрне – повӗҫе – пуҫарса яраканӗ пек те кӗрсе юлнӑ. Вулакан уйрӑмах унӑн «Этемӗн пырӗ тутӑ та куҫӗ выҫӑ», «Мул» повӗҫӗсене кӑмӑллани паллӑ. Вӗсене вӑл чӑн пурнӑҫран илсе ҫырнӑ. «Этемӗн пырӗ тутӑ та куҫӗ выҫӑ» хайлава И. Юркин 1889 ҫулта ҫырса пӗтерни паллӑ. Хайлав фабули кӑткӑсах мар. Пӗр Петр Петрович ятлӑ пуян ялта ҫук ҫурт-йӗр лартсан, хӑйне ҫынсем хисеплеме, сума сума тытӑнсан «хӑйне пит мӑнна хума пуҫлать», кӑлавана (вулӑс правленийӗн пуҫлӑхне) кӗме вӑрттӑн шухӑш тытать. Ҫак тӗллевпе вӑл тиекпе унӑн арӑмне ҫине-ҫинех сӑйлать, ҫуртне «вӑезжий хӑваттир» туса тӗрлӗ пуҫлӑх хӑнасене илӗшме тӑрӑшать. Юлашкинчен хӑй ӗмӗтленнӗ вырӑна ларать вӑл. Кӑлава пулса тӑнӑ хыҫҫӑн вӑл хӑйӗн пӗртен-пӗр хӗрне те ҫук ҫынна качча пама килӗшмест. Тӗрлӗ ултава пула хӗрӗн савнӑ каччине, чипер Анна Куҫьмине, тӗрмене хуптарать. Хӗрне ҫав-ҫавах пуян Микитене пама калаҫса татӑлать. Шӑп, туй кунӗ Петр Петрович ҫине мачча ишӗлсе анать. Вӑл вилмеллех аманать. Анчах виличчен вӑл хӑй тунӑ хура ӗҫӗсем пирки каласа хӑварать. Кӗтерин пурнӑҫӗ ашшӗпе амӑшӗ суннӑ пек мар, хӑй ӗмӗтленнӗ

пек килсе тухать. Вăл чипер Анна Куçьмине качча тухать.

Авторăн тĕллевĕ кунта – çын мулпа чыслă вырăна хапсăнса мĕн патне çитсе тăма пултарассине кăтартасси. Усал çулĕпе кайни пуçа çиесси патне илсе çитерме пултарать иккен. Хайлаври мачча кашти ишĕлни вăл символла сăнар. Çыннăн шалти тĕнчи ишĕлнине çапла тулашран кăтартма пултарнă автор. Петр Петрович хăй чунĕн ишĕлчĕкĕ айне пулать. Хайлавра автор ашшĕ-амăш хăйĕн тивĕçне пурнăçламаннине кăтартнă. Вĕсен хăйсен ачисене телейлĕ тумалла, юратакан çынпа çемье çавăрма пулăшмалла.

Повĕçри конфликт хайлав ятĕнче курăнать тесе ĕнентерет Родионов. Сăмах май каласан, А.В. Васильев тĕпчевçĕ «Революциченхи чăваш литератури» кĕнекере (Шупашкар, Чăваш кĕнеке издательстви, 1989 çул, 193 ен) повĕçри конфликта çамрăксемпе аслисем хушшинчи хирĕçӳ çинче никĕсленнĕ тесе палăртать. Çыравçăн тĕллевĕ те патриархаллă йăласене сивлесси тесе палăртать Васильев. Хальхи куçпа пăхсан Родионов ĕнентерĕвĕ, ман шутпа, тĕрĕсрех пек, мĕншĕн тесен Юркин хайлавра ытларах мула пула çын кăмăл-туйăмĕ улшăнса пынине уççăнрах палăртнă. Çын мулран пуйса пынă майăн чунран чухăнланса пырать. Хапсăнчăк ĕмĕт этеме нихăçан та ырă патне илсе çитермест.

«Этемĕн пырĕ тутă та куçĕ выçă» повĕç чăваш литературине «вăйпа качча паракан хĕр» мотива пуçласа кĕртнĕ. Халăх сăмахлăхĕнче анлă сарăлнă мотивăн çырулла сăмахлăхри историйĕ питех те пуян. Вăл Турхан Яккăвĕн «Варуççи» тата К. Ивановăн «Нарспи» поэмисенче кăна мар, Н. Шупуççыннипе Н. Ефремовăн, ытти чăваш çыравçисен хайлавĕсенче те тĕл пулать.

«Мул» повĕçре пулса иртекен пулăма автор хăй чăн пулни тесе алăртатаь. Апла пулин те хайлавра шухăшласа кăларни те пуррине йышăнать автор. Хайлаври ĕç-пуçа синкерлĕ пулăм патне илсе пыракан çул Праские унăн малтанхи упăшкин ашшĕпе амăшĕ мул парса хăварнинчен пуçланать. Вĕсем Праски кинне мула хăйĕн ачисене пурне те пĕр пек пайласа пама пиллесе

хăвараççĕ. Анчах та Праски мула хăйĕн икĕ ачине, чунтан савакан Алтаттипе Якура, пайласа парать. Хăйĕн сăмахне тытманшăн Турă Праские синкер ярса парать. Вăл тата Алтатти хĕрĕ вăрă-хурахсен çĕççинчен вилеççĕ.

Хăйĕн чылай хайлавĕнче И. Юркин Чунпа Мул, Турăпа Шуйттан хушшинчи çынна сăнласа кăтартас тĕллев тытнă. Мула мала хуракансем чунлăхне çухатаççĕ, шуйттан илĕртни хыççăн кайса Турра юрăхлă пулаймаççĕ, ырă вилĕмпе вилеймеççĕ (Петр Петрович, Праски).

Родионов тĕпчевçĕ Пӳркел чăвашĕ сăмахлăх жанрĕсене йĕркелес тĕлĕшпе те ĕçленине тупса палăртнă. Юркин жанрсене чăвашла та, вырăсла та палăртнă: халап – *сказка*, юмах – загадка, ваттисен сăмахĕсем – пословица, хайла – басня, калаçусем – рассказы, юрă – песня, сăвă – слова песни, сăмахсем – словарь, ыйтушыру – обьявления, такмак – стихи, руман – роман и повесть, шӳт – анекдот, тăрăхлу – юмористика. Калав (калаçу) жанрĕн тĕсĕсене те вăл палăртать: фантастикăлла калав, йăла калавĕ. Хайлавсене вара И. Юркин шухăшласа кăларнă сăнлавлисене тата чăн пулнисене уйăрса пăхать.

XIX ĕмĕр вĕçĕнче И. Юркин пултарулăхĕн пĕлтерĕшĕ пĕчĕкех пулман. Унăн хайлавĕсем халăх ăстăнне вăратас, тăван культурăна çĕклес, литература чĕлхине пуянлатас тĕлĕшрен те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Маларах палăртрăмăр, çыравçă чĕлхе, истори, этнографи, фольклор тĕпчевĕсем те тунă. Вĕсем чăваш халăх пĕтĕмĕшле культурин аталанăвĕнче паллă вырăн йышăнаççĕ, хăйсен пĕлтерĕшне паянхи кун та çухатман.

### *Критикăпа тĕпчев ĕçĕсем*


Революцичченхи чăваш литератури (XX ĕмĕрччен). 1-мĕш том. Текстсем. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1984. – 464 с.

Революцичченхи чăваш литератури (XX ĕмĕрччен). – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1989. – 302 с.

Родионов, В. Г. Чăваш литератури. XVIII-XX ĕмĕрсем : вĕренӳ пособийĕ / В.Г. Родионов. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 2006. – 463 с.

Федорова, Е. В. Истоки и формирования жанров чувашской литературы XVIII-XIX вв. /Е.В. Федорова. – Чебоксары : Чувашский государственный институт гуманитарных наук, 2006. – 144 с.

Родионов, В. Г. Чувашская литература (вторая половина XIX в. : учеб. пособие / В.Г. Родионов. – Чебоксары : Изд-во Чуваш. ун-та, 2002. – 248 с.

Васильев, А. В. Чунӗ ун халӑхшӑн ҫуннӑ. И.Н. Юркин ҫуралнӑранпа 120 ҫул ҫитрӗ / А.В. Васильев // Коммунизм ялавӗ. – 1983. – Апрель, 13.

Пантелеймонов, Н. Ҫутта, ырлӑха ӑнтӑлма пулӑшнӑ // Хыпар, – 2001, – Ҫурла, 3.

Сироткин, М. Я. И.Н. Юркин (Ҫуралнӑранпа 100 ҫул ҫитнине хисеплесе) / М.Я. Сироткин // Чӑваш календарӗ 1963. – Шупашкар, 1962. – С. 106-107.

Юрьев, М. Пирвайхисенчен пӗри / М. Юрьев // Тӑван Атӑл. – 1973. – 3 №. – С. 79-80.

Юркин, И. Н. Повӗҫсем, прозӑлла сӑвӑсем, тӗрленчӗксем, асаилӳсем / И.Н. Юркин. – Шупашкар : Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1986. – 272 с.

Яковлев, Ю. Юркка Иванӗн йӗрӗпе / Ю. Яковлев // Хыпар. – 1996. – Ҫӗртме, 20.

Яковлев, Ю. Шупашкар илемне чи малтан асӑрханӑ чӑваш ҫыравҫи / Ю. Яковлев // Хыпар. – 1998. – Ҫурла, 15.

## ДИСЦИПЛИНĂН СОДЕРЖАНИНЕ АЛЛА ИЛНИН ШАЙĔПЕ ÇЫХĂННĂ ТРЕБОВАНИСЕМ

Программа тăрăх вĕренсе тухнисем çакна тума пултармалла:

- авалхи тĕрĕк литературин историйĕпе паллăрах пулăмĕсене;
- çыруллă культура аталанăвĕн çул-йĕрне, пирвайхи ӳкĕтлевçĕсемпе сăмах ăстисен ĕç-хĕлне;
- шкул ĕçĕ вăй илнин, малтанхи шкул ĕçченĕсен Е. И. Рожанскин, В. Пуцек-Григоровичăн тата ыттисен литературăна аталантарас ĕçри вырăнне;
- XVIII ĕмĕрте чăваш культуринче пулса иртнĕ улшăнусе чăваш литературин аталанăвĕн çул-йĕрне мĕнлерех витĕм кӳнине;
- XIX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринчи чăваш çыруллă культурин аталанăвĕн çул-йĕрне, аталану палăрăмĕсем, çыравçăсен пултарулăхĕнчи тĕп туртăмсене, хайлавсен жанрпа сюжет, сăнарлăхпа илемлĕх уйрăмлăхсене пĕлмелле;
- XIX ĕмĕрте чăваш литературинче тĕрлĕ жанр вăй илсе аталаннин сăлтавне, малтанхи паллă çыравçăсен В.И. Лебедевăн, С. Михайлов-Янтушăн, И.Н. Юркинăн, М.Ф. Федоровăн, Яккупа Хветĕр Турхансен пултарулăхĕн паллăрах енĕсене калама;
- XIX ĕмĕр вĕçĕнчи чăваш литературин сăн-сăпатне, очерк, калав, повĕç, поэма тата ытти жанрсен аталанăвĕн паллăрах енĕсене уçса пама пултармалла;
- студентсен уйрăм çыравçăн пĕтĕмĕшле пултарулăхĕ, унăн тĕп хайлавĕсем çав вăхăтри общество лару-тăрăвĕпе тата культура ӳсĕмĕсемпе еплерех шайлашура пулнине кăтартма, писатель поэтикине уçса пама хăнăхусем пулмалла. Вĕсем литература тишкерĕвĕн тĕп мелĕсемпе усă курма, ăслăлăх, справка тата меслетлĕх литературипе ĕçлеме пултарччăр.

## УСӐ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА
## ТӖП ЛИТЕРАТУРА


Александров, Г. Чӑвашран тухнӑ пӗрремӗш пуп / Г. Александров // Хыпар. – 2003. – Авӑн, 23.

Алексеев, А. Чӑваш чӗлхин пӗрремӗш грамматики/ «Сочинения принадлежащие к грамматике чувашского языка» кӗнеке пичетленсе тухнӑранпа 230 ҫул ҫитнӗ май / А. Алексеев // Хыпар. – 2003, – Пуш, 6.

Ерагин, Е.Е. Юнкӑпоҫ тата Спиридон Янтуш / Е.Е. Ерагин. – Шупашкар : Ҫӗнӗ вӑхӑт, 2006. – 144 с.

Лебедев, В.И. Звериная ловля у симбирских чувашей / В.И. Лебедев – Чебоксары : Учебно-издательский центр ФЧФК Чувашского госуниверситета им И.Н. Ульянова, 1999. – 22 с.

Пантелеймонов, Н. Ҫутта, ырлӑха ӑнтӑлма пулӑшнӑ / Н. Пантелеймонов // Хыпар, – 2001, – Ҫурла, 3.

Спиридон Михайлов-Янтуш тата чӑваш сӑмахлӑхӗ // Хыпар. – 2001. – Раштав, 25.

Родионов, В.Г. Чӑваш литератури XVIII-XX ӗмӗрсем : вӗренӳ пособийӗ / В.Г. Родионов. – Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2006. – 463 с.

Родионов, В.Г. Тӗнсен Атӑл тӑрӑхӗнчи хирӗҫӗвӗ / В.Г. Родионов // Хыпар. – 2000. – Ҫурла, 3.

Родионов, В.Г. Чӑвашсен малтанхи ҫыравҫи / В.Г. Родионов // Тӑван Атӑл. – 2001, – 3 №.

Родионов, В.Г. Чувашскя литература XVIII - первой половины XIX вв. : учеб. пособие / В.Г. Родионов // – Чебоксары : Изд-во Чуваш. ун-та, 1999. – 172 с.

Рдюков, Е. С. Малтанхи очерксем ҫурални / Е. Рдюков // Тӑван Атӑл. – 2002. – № 4. – С. 65-68.

Родионов, В.Г. Чувашская литература (вторая половина XIX в. : учеб. пособие / В.Г. Родионов // – Чебоксары : Изд-во Чуваш. ун-та, 2002. – 248 с.

Родионов, В.Г. Михаил Федоров: «Арҫури» ӑнлантарӑвӗ / В.Г. Родионов // – Шупашкар, 1999. – 76 с.

Родионов, В.Г. Чӑваш халӑхӗн ӑнӗпе православи ҫутлӑхӗ / В.Г. Родионов // Хыпар. – 2000. – Авӑн, 12.

Федорова, Е. В. Истоки и формирования жанров чувашской литературы XVIII-XIX вв. / Е.В. Федорова // – Чебоксары : Чувашский государственный институт гуманитарных наук, 2006. – 144 с.

Чувашский язык и литература: теория и методика : сборник научных статей на чувашском и русском языках. – Чебоксары : Чувашгоспедуниверситет им. И.Я. Яковлева, 2004. – 49 с.

Яковлев, Ю. «Нумай хур тӳснĕ...»/ И.Н. Юркин ҫуралнăранпа 140 ҫул ҫитнĕ май / Ю. Яковлев // Хыпар. – 2003. – Пуш, 18.

Ялгир, П. Чăмпĕр - чăваш литературин сăпки / П. Ялгир // Хыпар. – 2002, – Кăрлач, 16.

## ХУШМА ЛИТЕРАТУРА

Васильев, А.В. Чунĕ ун халăхшăн ҫуннă. И.Н. Юркин ҫуралнăранпа 120 ҫул ҫитрĕ / А.В. Алексеев // Коммунизм ялавĕ. – 1983, – Апрель, 13.

Волков, Г.Н. И.Я. Яковлев – чăваш халăх педагогĕ. – Шупашкар, 1953. – 72 с.

Егоров, Н.И. Болгаро-чувашско-кыпчакские этноязычные заимствования в XIII-XVI веках / Н.И. Егоров // Болгары и чуваши : труды ЧНИИЯЛИЭ. – Чебоксары: 1984. – С. 90-102.

Дмитриев, В.Д. Оходер Томеев чувашский общественный деятель второй четверти XVIII века / В.Д. Дмитриев // Исследования по дореволюционной истории Чувашии. – Чебоксары : Чуваш. кн. изд-во, 1991. – С. 18-30.

Дмитриев, В.Д. Чувашские исторические предания / В.Д. Дмитриев. – Чебоксары, 1993. – С. 68-79.

Ишентей, Н. Вилĕмсĕрлĕх философийĕн вĕрентĕвĕ / Н. Ишентей // – Халăх шкулĕ. – 1997. – 4 №. – С. 76-82.

Краснов, Н.Г. Иван Яковлевич Яковлев. Жизнь, деятельность, педагогические идеи : очерки / Н.Г. Краснов. – Чебоксары, 1976. – 272 с.

Ковалевский, А.П. Книга Ахмеда ибн Фадлана о его путешествии на Волгу в 921-922 гг. / А.П. Ковалевский. – Харьков, 1956. – 345 с.

Комиссаров, А.П. Чăваш халăх историйĕ / А.П. Комиссаров // Ялав библиотеки. 1990. – 7 №.

Меркалов, И.А. Общественно-политические взгляды И.Я. Яковлева / И.А. Маркелов. – Чебоксары,1959. – 87 с.

Метин, П.Н. Литературăпа халăх сăмахлăхĕн ăнлавĕсем : шкул словарĕ / П.Н. Метин, А.И. Мефодьев. – Шупашкар : Чăваш Респ. вĕрентӳ ин-ĕн изд-ви, 1997. – 80 с.

Мукина, И.В. И.Я. Яковлев ҫинчен хунă сăмах / И.В. Мукина. – Шупашкар, 1998. – 78 с.

Революцичченхи чăваш литератури (XX ĕмĕрччен). 1-мĕш кĕнеке. II том. Текстсем. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1988. – 432 с.

Революцичченхи чăваш литератури (XX ĕмĕрччен). 1-мĕш том. Текстсем. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1984. – 464 с.

Революцичченхи чăваш литератури (XX ĕмĕрччен). - Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1989. – 302 с.

Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки. 1 пай / Н.Г. Ивановăпа В.П. Никитин пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1993. – 311 с.

Яковлев, Ю. Мăнкăмăллăх мар – мăнаҫлăх / Ю. Яковлев // Ҫилҫунат. – 1993. – 3 №.

Юркин, И.Н. Повĕҫсем, прозăлла сăвăсем, тĕрленчĕксем, аса илӳсем / И.Н. Юркин. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1986. – 272 с.

Сироткин, М.Я. И.Н. Юркин (Ҫуралнăранпа 100 ҫул ҫитнине хисеплесе) / М.Я. Сироткин // Чăваш календарĕ - 1963. – Шупашкар, 1962. – С. 106-107.

Сироткин, М. Я. М.Ф. Федоров (Очерк жизни и творчества) / М.Я. Сироткин . – Чебоксары, 1947. – 48 с.

Ставский, М. «Арҫури» баллада реализмĕ / М. Ставский // Тăван Атăл. – 1988, – 11 №.

Тенюшев, И. И.Я. Яковлев – публицист / И. Тенюшев. – Шупашкар, 1990. – 44 с.

Чăваш литературин классикĕ Михаил Федоров. – Шупашкар, 1998. – 60 с.

Родионов, В.Г. Главный герой очищается при помощи страха / В.Г. Родионов // Чăваш ен. – 1998. – 31 №.

Тихăн Петĕркки. Игнатий Иванов. «Иртнĕ кунсем» асаилӳсен сыпăкĕ / Тихăн Петĕркки // Ялав. – 1973, – 6 №. – 26 с.

Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки. 1 пай / Н.Г. Ивановăпа В.П. Никитин пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1993. – 311 с.

Родионов, В.Г. И.Я. Яковлев ĕçĕ-хĕлĕ тата чăваш халăхĕн XIX ĕмĕрти ăнĕ / В.Г. Родионов // Тăван Атăл. – 1998. – 2 №. – С. 5.

Родионов, В.Г. «Кушлавăш текен вуникĕ ял уйĕ...» / В.Г. Родионов. Хыпар. – 1998. – Нарăс, 10.

Родионов, В.Г. «Пирĕн телей» сăвă тата унăн авторĕ / В.Г. Родионов // Тăван Атăл. – 1996. – 12 №. – С. 64-66.

Родионов, В.Г. Текстологи кӳртĕмĕ / В.Г. Родионов – Шупашкар, 1997. – С. 17-38.

Родионов, В.Г. Малашлăх - мал енче / В.Г. Родионов // Хыпар кĕнеки. – 1997. – Авăн, 9. – 23 №.

Родионов, В.Г. Н.Я. Бичурин тата В.П. Вишневский / В.Г. Родионов // Коммунизм ялавĕ. – 1986. – Октябрь, 13.

Чăваш литератури (Октябрьти революцичченхи тапхăр). М.И. Сироткин пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1951. – 295 с.

Родионов, В.Г. 1800-1820 çç. Чăваш çырулла сăмахĕ. П.И. Талиев. А.М. Алмазов / В.Г. Родионов // Хыпар. – 1997. – Юпа, 4.

Илминский, Н.И. Опыт переложения христианских вероучительных книг на татарский и другие инородческие языки в начале текущего столетия / Н.И. Ильминский. – Казань, 1883.

Петров, Н.П. Чăваш литература чĕлхин историйĕ / Н.П. Петров. – Шупашкар, 1978.

Бичурин, Н.Я. Ради вечной памяти / Н.Я. Бичурин. – Чебоксары, 1991.

Григорьев, П.Г. Никита Яковлевич Бичурин. Пурнăçĕпе наука ĕçĕсем çинчен кĕске очерк / П.Г. Григорьев. – Шупашкар, 1954.

Денисов, П.В. Никита Яковлевич Бичурин. Очерки жизни и творческой деятельности. К 200–летию со дня рождения / П.В. Денисов. – Чебоксары, 1977. – 144 с.

Родионов, В.Г. Пути к храму / В.Г. Родионов // Бичурин Н. Ради вечной памяти. Предисловие. – Чебоксары, 1991. – С. 3-22.

Рожанский, Е. Чăвашсен XVIII ĕмĕрти çырулла культуринчен. Халăх хаярланса ан кайтăр / Е.Рожанский // «Хыпар» кĕнеки. – 1991. – Ноябрь, 18.

Каховский, В.Ф. Чăвашсем: историлле-этнографилле очерк / В.Ф. каховский. – Шупашкар, 1984. – С. 127-140.

Одюков, И.И. Чăваш халăх юрри / И.И. Одюков // Чăваш халăх сăмахлăхĕ: 3 т. - Шупашкар, 1978. – С. 5-28.

Трофимов, А.А. Несĕлсен тĕрĕри çырулăхĕ çинчен / А.А. Трофимов // 100 лет новой чувашской писменности : труды ЧНИИЯЛИЭ. – Чебоксары, 1972.

Эртиван, В. «Ятăм юлтăр ял çине..» / В. Эртиван // Тăван Атăл. – 1983. – 4 №, – С. 68-70.

Юрьев, М. Пирвайхисенчен пĕри / М. Юрьев // Тăван Атăл. – 1973. – 3 №. – С. 79-80.

Юмарт, Г.Ф. Мерчен кайăк йĕрĕпе: чăвашсен истори юррисем çинчен / Г.Ф. Юмарт // Тăван Атăл. – 1984. – 8 №. – С. 57-62.

Яковлев, А.И. Иван Яковлевич Яковлев 1848-1930 / А.И. Яковлев. – Чебоксары, 1948. – 120 с. ; 1958. – 120 с.

## *ЭКЗАМЕН ЫЙТĂВĔСЕМ*

1. Авалхи сăмахлăх – пирĕн литература аталанăвĕн пуçламăш тапхăрĕ. Авалхи тĕрĕк литератури.

2. Атăлçи пăлхарсен культури. Пăлхар йăхĕсен кунçулĕ, историйĕ. Ку тапхăрта палăрнă ăсчахсен ĕçĕ-хĕлĕ.

3. Вăтам ĕмĕрсем вĕçĕнчи чăваш культури. Атăл тăрăхĕнче Христос тĕнĕ çирĕпленме тытăнни. Халăх сăмахлăхĕн пĕлтерĕшĕ ӳсни.

4. Çырулла культура йĕркеленни.

5. Малтанхи ӳкĕтлевçĕсем. О. Томеев ĕçĕ-хĕлĕ.

6. Малтанхи сăмах пуххисемпе хуравсем. Вĕсенчи автор сăнарĕ.

7. Шкул ĕçĕ вăй илни. В. Пуцек-Григоровичпа унăн вĕренекенĕсем. Пĕрремĕш грамматика.

8. Чулхула куçару шкулĕ йĕркеленни. Дамаскин епископ ĕçĕ-хĕлĕ.

9. Е. Рожанскин пурнăçĕ. Ӳкĕтлевçĕ пулса тăнин сăлтавĕсем. Çырулла культурăна аталантарас ĕçри вырăнĕ.

10. Мухтав сăввисемпе сăмахĕсем. Вĕсенчи автор ăнĕ, сăнарлăх, танлаштарусемпе психологи параллельлĕхĕ.

11. Н.Я. Бичуринăн çырулла культурăна аталантарас ĕçри вырăнĕ. Ода çырас ăсталăхĕ.

12. XVIII ĕмĕрти чăваш культуринче пулса иртнĕ улшăнусем. Вырăс çутлăхĕ чăваш ăнне витĕм кӳни.

13. Тĕн тата илемлĕ литература жанрĕсем йĕркеленсе аталанни. 1800-1820 çулсенчи чăваш çырулла сăмахлăхĕ.

14. П.И. Талиевăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ.

15. А.М. Алмазовăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ. Чиркӳре чăвашла вĕрентме пуçланин сăлтавĕсем.

16. Кăрмăшри Библи пухăвĕн вĕрентӳ ĕçĕнчи вырăнĕ. Н. Базилевский уçнă шкул.

17. 1832-1846 çулсенчи чăваш çырулла культури.

18. В.П. Вишневскин пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ. Унăн Н.Я. Бичурин витĕмĕпе çырнă ĕçсем.

19. Хвети юрри-такмакĕсем.

20. Д.П. Ознобишин чăваш поэзийĕпе кăсăкланни, Хвети сăввисене тишкерни, куçарни.

21. 1846-1860 çулсенчи чăваш литератури. Славянçăсем. Очерк жанрĕ аталанни.

22. В. Сбоевпа Н. Бичурин очеркĕсен хăй евĕрлĕхĕ, вĕсенчи калуçă сăнарĕ.

23. В.И. Лебедевăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ. Очеркĕсенчи автор позицийĕ, çыру стилĕ.

24. Чăваш культурин талккăшĕ 1848-1853 çулсенче сарăлни. Унăн тĕп сăлтавĕсем.

25. С. Михайлов-Янтуш пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ. Вăл чăваш литературине кĕртнĕ çĕнĕлĕхсем.

26. Тĕрĕк каганлăхĕн сăвă-юрăçисем (Йоллăх техĕн поэт пултарулăхĕ, Паласакун Юсупĕн «Хăтлă пĕлӳ» дидактикăллă поэми, Кашкар Махмучĕн «Тĕрĕк сăмахĕсен пуххи кĕнеки» т.ыт.те.)

27. Ахмед ибн Фадланăн “Атăлçи Пăлхар патшалăхне çитсе курни” хайлавĕ. Унăн историйĕ, пĕлтерĕшĕ.

28. Кӳл Техĕнĕн Пĕчĕк тата Пысăк çырăвĕсен сюжетпа композици уйрăмлăхĕсем.

29. Çутлăх юхăмĕ вăй илсе пыни. И.Я. Яковлевăн çĕнĕ çырулăх йĕркелес ĕçри вырăнĕ.

30. Е.Рожанскин «Урмай ялĕнчи пăтăрмах» («Урмайкассисем пăлханни») тата «Чăвашсем çинчен» хайлавĕсене хак парăр, жанрĕсене палăртăр.

31. Н.Я. Бичурин çырнă мухтав сăввисемпе одисем. «Тĕлĕк» одăри сăнарсем, лирика геройĕ, поэтика мелĕсем.

32. Н.Я. Бичурин çырнă «Байкал» очеркăн теми, шухăшĕ, содержанийĕ, илемлĕх паллисем.

33. А. Алмазовăн «Ачасене христианла вĕрентмелли çинчен» ӳкĕт кĕнеки. Жанр паллисем. Унти калуçă, вăхăтпа талккăш.

34. Н. Базилевскин «Тăнлантарса кăтартмалли библейской поххийĕн тохăмĕ çинчен» ӳкĕчĕ. Хайлавăн композицийĕпе поэтики, калуçă сăнарĕ, унти вăхăтпа талккăш.

35. В.П. Вишневский çырнă «Кĕске святой йомахĕ», «Кĕске катехизис» хайлавĕсенчи калуçă, жанр паллисем. «Хупахçă» сыпăкри илемлĕх мелĕсем.

36. В.И. Лебедев çырнă «Пирĕн телей» («Чăваш эпĕр полтăмăр...») сăввăн композицийĕ, унти лейтмотивсемпе мотивсем. Хайлаври «хуйхă-телей» хирĕçлевĕн традицилĕхĕ.

37. С.Михайлов-Янтушăн этнографи очеркĕсен тарăн шухăшĕ, ӳкерчĕклĕхĕ, витĕмлĕхĕ («Балдран базар в Козьмодемьянском уезде», «Предания чуваш», «Чувашские свадьбы», «О музыке чуваш»).

38. С.Михайлов-Янтуш – драматург. Унăн сценкисемпе диалогĕсем – чăваш драматургийĕн малтанхи опычĕсем. Вĕсенчи реализм, сăнлас мелсем. Ахаль çын сăнарĕ.

39. И.Я. Яковлевăн «Чăваш букварĕнчи» калавсен тематики, идейи, дидактикăлла пĕлтерĕшĕ.

40. И.Я. Яковлевăн «Чăваш халăхне» халалĕ. Унăн пахалăхĕ, пĕлтерĕшĕ.

41. И. Иванов прозинчи реализм палăрăмĕсем. Жанр уйрăмлăхĕсем. Йăлари мораль ыйтăвĕсем.

42. Н.И. Золотницкипе унăн вĕренекенĕсен ĕçĕ-хĕлĕ, пултарулăхĕ.

43. Г. Филипповăн «Чухăн çын пурнăçĕ – хирти мулкач пурнăçĕ» сăввăн тĕп шухăшĕ, тытăмĕпе стилĕ.

44. М. Федоров малтанхи хайлавĕсем – этнографи очеркĕсемпе халапĕсем («Чиртен сыватни», «Авалхи этемсем», «Улăп тĕмисем», «Хурапха ялĕ»).

45. М. Федоров çырнă «Арçури» – юмахлатнă лиро-эпикăлла поэма. Хайлаври чăнлăх тата мифологи сийĕсем. Хĕветĕрпе Арçури сăнарĕсем.

46. Н.М. Охотников – чăваш халăх сăмахлăхне пухаканĕ. Унăн чăваш культурин историйĕнчи вырăнĕ.

47. С. Янтушăн «Хваттер хуçипе калаçни» калавăн темипе шухăшĕ, унта хускатнă тĕп ыйтусем.

48. Кол Галин «Уçăппа Сĕлихха» поэмине тишкерĕр.

49. И. Ивановăн «Чăваш халăх ывăлĕ» – нацин иртнĕ кун-çулĕпе малашлăхĕ çинчен калакан прозăлла поэма. Унăн философилĕхĕ, мифологипе халăх сăмахлăхĕн йĕрĕсем.

50. Н. Кедровăн “Аçуна-аннӳне хисепле, хăвнах аван пулĕ” повеçĕ, унти тĕп конфликт.

51. О. Романовăн “Хĕн-хур куракан çынна турă пăрахмасть” (“Ануш”) хайлавĕ, унăн сюжетпа композици уйрăмлăхĕсем.

52. Д. Архиповăн «Константинопольти чăвашсем» очеркĕнчи калавçă, унти тĕп шухăш, геройсен шăпи урлă халăх трагедине кăтартни.

53. И.Я. Яковлевăн куçарăвĕсем, унăн меслечĕсемпе ăслайĕсем.

54. С. Михайлов-Янтушăн Вятка çыннисене халалласа çырнă кулăшларах калавĕсен уйрăмлăхĕсем.

## ТУПМАЛЛИ

Умсăмах....................................................................3

Авалхи сăмахлăх. Тăван литературăн пуçламăш тапхăрĕ....................................................................4

Атăлçи пăлхарсен культури. Çырулла сăмахлăх пуянлăхĕ....................................................................10

Çырулла культура йĕркеленни (XVIII ĕмĕр)........................15

1832-1846 çулсенчи чăваш çырулла культури..............20

С.М. Михайлов – Янтушăн чăваш литературинчи вырăнĕ.Нумай енлĕ пултарулăхĕ..................................25

Наци çырулăхĕпе литератури аталанни (XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурри)....................................................................32

Михаил Федоров çыравçăн нумай енлĕ пултарулăхĕ.38

Николай Кедров пурнăçĕпе пултарулăхĕ......................46

Осип Романов прозаикăн илем тĕнчи..........................52

Иван Юркин пултарулăхĕн хăйевĕрлĕхĕ......................58

Дисциплина содержанине алла илнин шайĕпе çыхăннă требованисем....................................................................69

Усă курмалли литература....................................................................70

Экзамен ыйтăвĕсем....................................................................75

Тупмалли....................................................................78

Учебное издание

# ЧУВАШСКАЯ ЛИТЕРАТУРА
(до XX века)

Курс лекций

Составители :
Осипов Николай Николаевич
Родионов Виталий Григорьевич

Редактор П. Н. Метин. Технический редактор В. В. Павлов.
Корректор Т. В. Томасова.
Подписано в печать 30.10.09. Формат 60x84/16.
Бумага писчая. Печать оперативная. Усл. печ. л. 4.7.
Тираж 50 экз. Заказ № 856.

ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И.Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38

Отпечатано на участке оперативной полиграфии
ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И.Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38

40,00

Учебное издание

# ЧУВАШСКАЯ ЛИТЕРАТУРА
## (до XX века)

## Курс лекций


Составители:
Осипов Николай Николаевич
Родионов Виталий Григорьевич



Редактор [illegible] Технический редактор [illegible]
Корректор [illegible]
Подписано в печать 20.10.09. Формат 60x84/16.
Бумага писчая. Печать оперативная. Усл. печ. л. [illegible]
Тираж 50 экз. Заказ № [illegible].

ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический
университет им. И.Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38

Отпечатано на участке оперативной полиграфии
ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический
университет им. И.Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38